К С(чув)
А 24
20048.чув.



ХВЕТЁР АГИВЕР

# юр хӗвет

КОНТРОЛЬНЫЙ ЛИСТОК
СРОКОВ ВОЗВРАТА

КНИГА ДОЛЖНА БЫТЬ
ВОЗВРАЩЕНА НЕ ПОЗЖЕ
УКАЗАННОГО ЗДЕСЬ СРОКА

Колич. пред. выдач ____________

З. 384—75

К С(Чув)
А 24

ХВЕТĔР АГИВЕР

# ЮР ХĔВЕТ

Повеçпе новеллăсем,
тĕрленчĕк

д/х

Чăваш
кĕнеке
издательстви
Шупашкар — 1976

С(чув)2
А 24

Обязат. экз.

ПРОВЕРЕНО
2002

20048-чув

Чувашская республиканская
библиотека
им. М. Горького

**Агивер Ф. Г.**

Юр хӗвет. Повесть, новеллӑсем, тӗрленчӗк. Шупашкар, Чӑваш кӗнеке издательстви, 1976.

128 с.

«Юр хӗвет»—Хветӗр Агиверӗн прозӑпа ҫырнӑ иккӗмӗш кӗнеки. Ку кӗнекинче те автор пирӗн вӑхӑтри паттӑр ӗҫе-хӗле мухтать, ку чухнехи ҫынсен кӑткӑс та тивлетлӗ чун-чӗрине илемлӗх мелӗсемпе туллин те тарӑннӑн уҫса пама тӑрӑшать.

«Туй» повесть-и е «Юр хӗвет», «Эртюк» новеллӑсем-и, ҫак произведенисен тӗпелӗ — этем шухӑш-кӑмӑлӗн ырӑ енӗ, унӑн ыттисене пурӑнма хавхалантаракан ҫутӑ илемӗ.

«Пӑвапа Элшел хутлӑхӗ» тӗрленчӗкӗнче те Агивер хальхи Тӑхӑръял таврашне ытармалла мар хитрен ҫырса кӑтартать.

А $\frac{0763-064}{М136(03)76}$ 82—76

© Чӑваш кӗнеке издательстви, 1976 ҫ.



# юр хĕвет

Юр хĕвет. Нарăс тăманĕ асар-писер тустарать. Урамсемпе тăкăрлăксене, çула урлă, кĕрт хĕве-хĕве лартнă. Картишĕнче те, тулта та чӳрече патуши таранах — юр. Кӳрше-мĕне тухса кĕме те — хырсах тăмалла. Хуралтăсем те курăнмиех пулнă, тăрри таранах хĕвĕннĕ, виç-тăват утăмран та пачах палăрмаççĕ. Çил ачисем, хăйсемшĕн нимĕн чăрмав та çуккипе хĕпĕртесе, хуралтăсем урлă вашт та вашт анчах каçа-каçа каяççĕ, хирелле. Тĕл-тĕл кăна, аслăк хĕрри кĕртпе хĕвĕнме ĕлкĕреймен хашаксенче, тăман парăлтатса, вĕтĕ-вĕтĕ пĕрчисемпе куçа йăмăхтарса тăрать.

Виççĕмĕш талăк ĕнтĕ, Калистрат Петрович вилнĕреннех, çакнашкал урăм-сурăм çанталăк алхасать — ним патне те ал пымалла мар çанталăк. Аша, кăмăла вĕчĕрхентерсе, тăкăнать те тăкăнать тăкăскă юр...

Йынкка пăлтăрпа таплаттарса иртрĕ те, алăка яри уçса, пӳрте кĕрсе тăчĕ. Сивĕ çĕклемĕ, ун хыççăн пăл! кусса кайса, тĕпеле çитиччен, лăш пулса выртрĕ. Шăн сывлăш алăк çывăхĕнчи кутник сакки çинче вырăнпах выртакан Тарье кинемее те аптратрĕ пулмалла — кинемей, туртăна-туртăна, кĕххĕм-кĕххĕм ӳсĕре-ӳсĕре илчĕ.

— Анне,— терĕ Йынкка,— чей парас мар-и?

— Çук, çук, ывăлăм, ан чăрман, пĕртте ĕçессĕм килмест,— хуллен-хуллен сывлăш çавăрса ячĕ кинемей.— Тем, кăкăр пӳлĕнсе-пӳлĕнсе килчĕ те — иртсе кайрĕ ак, унсăрăнах... Темле, сĕт ĕçсе пăхсан?.. Кăмака умĕнчех лармалла та вăл...

— Çиччас, анне... Ашăтсах парам,— Йынкка кĕске кĕрĕкне пăтана çакрĕ те кăмака умне пычĕ, кероçинкине чĕртсе, ун çине тимĕр куркапа сĕт лартса ячĕ.

— Пӳртри япала, ара, ăшахчĕ пулĕ те-ха ĕнтĕ, ывăлăм...

— Çиччас, анне, çиччас... Çиес килмест-и сан?

— Çук-ха, ывăлăм, килмест.

Йынкка, амăшне каçхи апат çитерес тесе, кăмака анинех майлаштарнă каланкка çăварне уçса пăхрĕ (Надюшĕ, арăмĕ, унта яланах шаркку лартаканччĕ), шаркку курăнмарĕ, шаркку мар-тăк, тен, яшка пĕçерсе хунă — хуран ывсине те илсе пăхрĕ — хуран та пуш-пушах-мĕн, апла, тен, кăмакара мĕн те пулин пур — питлĕхе уçрĕ, вара — çимелли ниçта та нимĕн те çуккине кура — хытах тĕлĕнчĕ...

— Кутăнла ĕçе пĕтерсе килтĕр апла, ывăлăм?— сас пачĕ амăшĕ.

— Пĕтертĕмĕр... анне... Йывăр тăпри çăмăл пултăр... Калистрат Петровичăн...

— Ывăç тăпри пăрахрăн-и?

— Пăрахрăм... анне...

— Маншăн та-и?

— Саншăн та... Анне, акă, ăшăнчĕ сĕт... Пĕçертмест-ши?..

— Ларт ăна кунта, ак кунта, пĕçерет пулсан, сивĕнет у... Халь ĕçес те килмест ĕнтĕ, иртсе кайрĕ...

Йынкка тимӗр куркари сӗте стакана ячӗ те, амӑшӗн пуҫӗ ҫывӑхӗнчи тенкел ҫине пырса лартрӗ.

— Анне, Надюш ӑҫта ара, курӑнмасть, апат та хатӗрлемен тем?..

Тарье кинемей, ывӑлӗ енне пӑхса выртрӗ-выртрӗ те, хуйхӑллӑн хаш! сывласа ячӗ. Нимӗн те чӗнмерӗ вӑл пӗр хушӑ. Ывӑлӗ тепӗр хут ыйтсан тин ҫапла каласа хучӗ:

— Натюш кинсӗр тӑрса юлтӑмӑр пулӗ ӗнтӗ эпир, ывӑлӑм... Қайрӗ вӑл пӑрахса... Пуҫӗпех,—терӗ.

Йынкка, хӑй илтнине хӑй ӗненмесӗр, амӑшӗн ури вӗҫне пырса тӑчӗ.

— Тухса кайиччен йӗчӗ, пӗр кана... Сана та, мана та ӳпкелемерӗ... Қаҫару анчах ыйтрӗ, мана, чирлӗ ҫынна, пӑрахса хӑварса тухса кайма пӳрнишӗн... Пултараймастӑп урӑх, терӗ вӑл... Чӑтӑм пӗтрӗ, терӗ... Ҫынсенчен намӑс, терӗ... Кун пек пурнӑҫпа пурӑниччен, каплине луччӗ куҫӑм ан куртӑр, хӑраххӑн пурӑнса иртterem, пӳрмерӗ мана телей, терӗ... Юр хӳсех кайиччен, каҫ пулсах лариччен атте килне ҫитсе ӳкем, терӗ те йӗре-йӗрех тухса кайрӗ...

— Епле-ха апла, анне?.. Мӗншӗн тытса чармарӑн?—тӗссӗрленчӗ Йынкка сасси.

— Епле чарӑн-ха ӑна, каяс текен ҫынна, чунӗ кӳтсе ҫитнӗ-тӗк... Вӑл та ҫынах-ҫке... Ӑҫтан чарӑн...

— Манпа хӑть калаҫса пӑхмалла пулнӑ малтан, капла хӑтланиччен...

— Вӑл эс сӑмах пуҫласса кӗтнӗ пуль... Мӗн чухлӗ каламарӑм эпӗ сана: пӑрах, пӑрах ҫав ху патӑнта шӑтавутра ӗҫлекен йӑр-япӑша, Мотьӑна, тесе, ан ҫулӑх, ан ҫыпҫӑн, тесе, ҫук, итлемерӗн... Аннӳ сӑмахне хӑлхуна чикмерӗн...

— Аплах ан кала-ха, анне.

— Мӗн каламалли марри унта... Халь тин камран пытаран?.. Юрать-ха арӑму, Натюш кинӗм, ырӑ пулчӗ те — шарламарӗ. Тепӗр хӗрарӑм пулнӑ пулсан...

— Анне... юрататӑп-ҫке эпӗ Мотьӑна,— калаҫу чӗрине пырса тивнипе, калас-калас мар тенӗ ҫӗртенех персе ячӗ ҫакна Йынкка.

— Тепӗр хӗрарӑм пулнӑ пулсан-и... ӗҫӗнтен те тахҫанах кӑларса сирпӗттермелле... Эсӗ колхоз председателӗ вӗт, ҫын ҫинчи ҫын... Ҫавна ӑнланатӑн-и эсӗ?— тарӑхсах каланипе чыхӑнсах кайрӗ Тарье кинемей;

аллипе вăл хăйне кăштах çĕклеме, минтерне хăпартма, пуçелĕкне тепĕр минтер хума ыйтрĕ. Қапла тунипе тӳрленерех выртсан, ӳслĕкĕ чакса-чакса пычĕ карчăкăн, пĕр-ик сыпкăм сĕт ĕçсен — лăплансах çитрĕ. Йынкка нимĕн те чĕнмерĕ.

— Çапла çав, юнашар пурăнакан хĕрарăмăра хаклама пĕлместĕр эсир, арçынсем,— каллех хăтăрчĕ ывăлне Тарье кинемей.— Эс, Йынкка, кунтах куçса лар-ха, çумма, юнашар. Қалаçар... Атту хăçан калаçса ларнине те маннă ĕнтĕ.

Йынкка амăшĕ сывăхне хыçлă тенкелпе пырса ларчĕ.

— Писрĕ пирĕн килтен ытлăх... Çук, çук, сана хăвна начар теместĕп-ха эпĕ... Вунпилĕк çул вырăнпа выртса, çак тарана пурăнса çитетĕп тесе те тĕлленмен эпĕ... Эсĕ пулман пулсан-и... Сан ырлăхна куçпа курсах çĕре кĕретĕп ĕнтĕ, ывăлăм,— хурлана-хурлана каласа хучĕ те Тарье кинемей, тутăрĕ вĕçне куçĕ тĕлне тытрĕ: унăн куç хăрпăкĕсене пăтăр-пăтăр куççулĕ шывлантарчĕ.

— Анне, эсĕ, тем, йĕместĕн пулĕ те?.. Лăплан...

— Çук-çке, ывăлăм, кантăкран сивĕ пенипе пуль вăл... Чӳрече хĕррисенчен вашлаттарать те тепĕр чух.

— Ку картиш енчи чӳречине, эппин, утиял карсах хурас мар-и, ăшă тыттăр?

— Ара унпа та мар-тăр-ха... Ара юр хӳнĕ чух, хĕлле, сивĕ тытмасăр пулмасть ĕнтĕ, ывăлăм... Ан чăрман, кун çутине хуплас мар. Ахаль те...

Йынкка, кантăка чăнах та карса хумалла мар-и тесе, патуша айне алă лаппине те хурса пăхрĕ: çук, вашлаттармасть, лĕм çил те кĕмест, туйăнать кăна-тăр кинемее.

— Сана хăвна япăх теместĕп-ха эпĕ... Ĕнтĕ вунпилĕк çул хушшинче манпа, хăрăк каскапа, тертленсе те çитрĕр пуль... Шупашкарне те, Мускавне те темиçе хут илсе кая-кая килтĕр, самайĕ çук, ав, начарлансах, хавшасах пыратăп... Пурпĕр санран сивĕ сăмах илтсе курман, ывăлăм... Ача пекех пăхрăр...

— Анне, эсĕ паян, тем, сасартăк хурланса калаçа пуçларăн?..

— Ара Натюш кинĕм пăрахса кайрĕ-çке, çемйӳ пурнăçĕ путлĕ мар, ывăлăм... Мĕн, ют çĕрте телей вăрласа, телейлĕ пулатăп, терĕн-им?.. Ан шан кун пек

телее, ывăлăм, ан шан... Çын телейне вăрласа хăй телейне шыракан телейлĕ пулмасть, Йынкка... Итле аннӳ сăмахне... Натюша хаклама пĕлмерĕн эс, Натюша... Пăрчăкан пек кинĕме...

— Кхĕм, кхĕм... Мĕн-çке-ха, анне, ара мĕн мар-и... Кипке шăрши иленмерĕ-çке-ха пире, ача сасси савăнтармарĕ...

— Эй-яй-яй... Çав Мотьăпа çемьеллĕ пулса ырă курăп, терĕн-и?.. Пăрахать вăл сана, ывăлăм, пăрахать... Сана председательтен кăларса пăрахсанах — пăрахать... Сисет ват çын чĕри... Қаçар та, ачине те ан кĕт унтан... Çын телейне вăрлакансем — никама та хĕрхенмеççĕ... Паян — сан телейне çаратаççĕ, ыран — урăххинне... Ача, тетĕн... Питне кĕççе çĕленĕ эсĕ, ывăлăм, чăнлăха курми пулнă... Ав, Лешкасри Шăнни Арçукĕсем вуникĕ çул ачасăр тăчĕç-тăчĕç те, халь ак, на кăна шарланттарса пурăнаççĕ, çиччĕ шучĕ теççĕ-и ачисене...

— Анне, тархасшăн ан кӳрен-ха эсĕ, манăн сана пĕртте пăшăрхантарас килмест... Туртмасть мана текех Натюш, ăнланатăн-и, туртмасть... Çĕтрĕ манра темĕскер...

— Туртмасть, çĕтрĕ?.. Малтан мĕне курса пĕтернĕ вара эсĕ хĕр пурнăçне?.. Илес-илес каччисенчен сивĕтсе илтĕн те... Халь апла калаçатăн-и-ха эс?..

— Сивĕнтĕм-çке-ха эпĕ унтан, анне, сивĕнтĕм... Малтан, пĕрлешнĕ хыççăнхи çулсенче, Надюшран хаклă çын та çукчĕ пекчĕ çĕр çинче, халь ак — сивĕнтĕм...

Эх, Йынкка, Йынкка... Пĕтертĕн хĕр пурнăçне... А вăл санне, ав, пĕтерес темерĕ, чĕрӳ пăрланса-пăрланса пынине сисрĕ те, хăй тухса кайрĕ... Сана шеллесе тухса кайрĕ вăл, Йынкка, сана, ăнланатăн-и çавна, э?

Йынкка пуçне кантăк енне пăрнă та нимĕн шарламарĕ.

— Пыр, ывăлăм, кай, çавăрса кил ăна, Натюша, тархасла, йăлăн!..

— Çук, анне... Каймастăп... Тархасламастăп та... Эс, анне, лăплан-ха, лăплан, йывăра ан ил, чĕрене хушма пултараймастăп-çке эпĕ...

— Эх, Йынкка, Йынкка, ăссăр пуç, савса мăшăр тунă çыннуна çапла сумсăра кăлараççĕ-и?.. Ют çимĕ-

ҫӗн мӗн тути пултӑр ӗнтӗ унӑн, ывӑлӑм... Тӗсӗ сӑхлантарсан та сӗткенӗ ӑша вӗтелет... Пурнӑҫӑн илемӗ те унӑн, тӗрӗссипе, пӗрле пуҫ шуратмалли ҫыннупа ярӑнса утнӑ чух кӑна. Пӗрре такӑнатӑн-тӑк, ланкашки-лупашки тупӑнсах пырать вара. Акӑ мана чир персе антарчӗ те...— Тарье, тем шухӑша кайнӑ пек пулса, шӑпланчӗ.

Каплах пулса тухасса кӗтменччӗ пулин те, юлашки вӑхӑтра хӑйпе Надюш хушшине темле халиччен пек мар ют япала кӗрсех-кӗрсех пынине сисетчӗ-ха Йынкка. Малтанхи ҫулсенче вӑл, ӗҫрен пушаннӑ-пушанман вӑхӑтсенче те, Надюш патне, ҫӗвӗ мастерскойне, йӑпӑртлӑха сӑмсине чиксе тухса каятчӗ-каятчех. Надюшран темӗн ӑшши, ырри, чуна, чӗрене пӗҫертсе тӑракanни ҫапса тӑратчӗ Йынккана. Ҫавӑ ӑна пурӑнма, ӗҫлеме хавхалантаратчӗ. Ҫулсем иртнӗҫем, туйӑмӗ те мӑкалма, тӗссӗрленме пуҫларӗ Йынккан. Малтан Надюшӗ патне, ҫӗвӗ мастерскойне, кӗре-кӗре тухас вӑхӑчӗ те таҫтан, темле майпа, пӗтсе-пӗтсе пычӗ, варарахпа киле каярах таврӑна пуҫларӗ, правленире тытӑна-тытӑна юлчӗ. Тепӗртакран, Мотьӑпа ҫыхланса кайсан, ҫур ҫӗрсем тӗлнелле тин таврӑнакан пулчӗ. Пач таврӑнманни, килте ҫӗр каҫманни те пулкаланӑ. Кун пек чухне вӑл, района кайкаланӑ тӗлсенче (кайкаламан чухне те), унтах ҫӗр выртса килни пирки евитлетчӗ те — ҫырлахатчӗ хӑйпе хӑй... Надюш, ав, ҫырлахман, чӑтнӑ-чӑтнӑ та — тухса кайнӑ... Мӗнле ҫав териех асӑрхами пулнӑ-ха Йынкка хӑйӗн чӗкеҫ чӗппи пек, амӑшӗ калашле — пӑрчӑкан пек — савса тус тунӑ мӑшӑрне... Тӑван амӑшне «каймастӑп... тархасламастӑп та...», терӗ пулин те, Йынккара. Надюш тухса кайнине пӗлнӗ хыҫҫӑн, темӗн, хӑй те сиссе ӗлкӗреймен япала, картах татӑлса кайрӗ... Куҫҫульпе тӑракан Надюшне куҫӗ тӗлне тусан, чӗри пӗр авӑк хӗссе-хӗссе килчӗ арҫыннӑн... Анчах вӑл ку туйӑма ҫийӗнчех сӗвӗрӗлтерсе ячӗ те, Мотя патне хӑй кӗҫӗр пыма шантарнине асилсе, тенкел ҫинчен тӑчӗ, алӑк патӗнчи пӑтаран кӗске кӗрӗкне вӗҫертрӗ...

— Ывӑлӑм, ӑҫта пуҫтарӑнатӑн ӗнтӗ каҫа хирӗҫ, тӑманӗ те...

— Тухкаласа ҫӳрес тетӗп-ха... Пӑчӑ...

Кӑмака хыҫӗнче, хӗле хатӗрленӗ сухан мӑйӗсен хӳттинче, шӑрчӑк чӑр та чӑр чӑрлатма тытӑнчӗ. Унӑн

сасси ăш вĕçнĕ пӳрте сасартăк тăнăçлăх кĕртрĕ, шăп пулса тăчĕ.

— Ывăлăм, мĕн-ха... Ĕнтĕ... Қаласах парас тетĕп те, Йынкка,— маччаналла шухăшлăн пăхса выртрĕ Тарье кинемей.— Қĕнеки те вĕçнелле тухать пулĕ ĕнтĕ ман... Япăхланнăçемĕн япăхлансах пыратăп, куран... Малтан урасене лăскаса лартрĕ, унтан çурăм шăммине хытарчĕ ку чир, халь кăкăрпа алă сыпписене те куçа пуçларĕ... Çитмĕл урлă каçрăм, çитет, ӳпкелеместĕп... Пурăнсан пурăнăп тепрер çул, унтан ытла мар... Упăшкам ĕмĕтне, сан ĕмĕтне курса çĕре кĕретĕп... Чирĕм аптратрĕ пулин те, совет саманин ырлăхне курса çĕре кĕретĕп...

Йынкка кĕрĕкне каялла пăтана çакрĕ, амăшĕ умне пырса тăчĕ.

— Лар-ха, ывăлăм, лар...

— Эсĕ, анне, ан асăн-ха пĕрехмай вилĕм çинчен... Сывалăн-ха, кун пек чиртен кăна сывалмаççĕ... Çăва тухсан, ак, каллех Мускава кайса килĕпĕр, тепре... Хаçатра çырчĕç, ав, пĕри çирĕм çул ним туйми вырăнпа выртнă пулать те — чĕрĕлнĕ, ав, ура çине тăнă... Çăва тухар-ха, ак, отпуск илĕп те...— йăпатрĕ амăшне Йынкка, тенкел çине ларнă май.

— Çаплине çаплах-ха ĕнтĕ, вилĕм çитмесĕр вилĕме асăнма хушман... Мĕн-ха... Қалистрат та... Петрович...— карчăк каллех пĕр авăка шăпăрт пулчĕ.

Шăрчăк паçăрхинчен те хытăрах пӳртри шăплăха хуйхатрĕ.

— Мĕн-ха...— Қарчăк стакканри сивĕнме ĕлкĕреймен сĕте пĕр-икĕ сыпкăм турĕ, ăна, çăварĕнче чӳхентеркелесе, çăтса ячĕ. Иртенпех çакăнта, тенкел çинче, ларакан чейне тĕкĕнмерĕ, сĕт ĕçнĕ хыççăн тути çывăхне илсе пычĕ те каялла лартрĕ.

— Мĕн-ха...— каламаллине калаймасăр каллех хăшкăлчĕ Тарье кинемей.— Ара, мĕн тетĕп мар-и, аçуна пытартăмăр вĕт паян, Йынкка... Қалистрата...

Йынкка, пуçран кувалдăпа тӳнлеттерсе çапнă пек, лăпсăр пулса кайрĕ.

— ... Қалас мар — калас мар тесе пытарса пурăнтăм-пурăнтăм — вĕçне çитрĕм пулмалла... Қалистрат та... Халь тин калатăпах... Вăрттăнлăха хампа пĕрле çĕре илсе кĕрсе каяс мар тетĕп... Турă пур, курать... Санăн та тĕрĕссине пĕлмелле... Аçу вĕт...

— Атте вара... Энтри... Андрей Григорьевич... епле-ха?

— А эсӗ итле, ывӑлӑм... Ҫаласа парас пек тенӗ чухне...

Тарье кинемей каллех, тем аса илнӗ пек, маччанала пӗр авӑк тӗллесе выртрӗ-выртрӗ те, хӑй кӑна илтмелле хаш! сывласа, Йынкка ҫине пӑхмасӑр, чӗри тӗпӗнчи сӑмаххине пуҫларӗ.

— Калистрат вӑл манран икӗ ҫул аслӑччӗ, Энтри— хам тантӑшчӗ, пӗр ҫулхисем... Ӗнтӗ иккӗшӗ те лӑпланса выртрӗҫ, виҫсе панӑ кунӗсене пурӑнса ирттерчӗҫ...— терӗ те Тарье кинемей, те сывлӑшӗ пӳлӗнсе килнипе, сылтӑм аллипе кӑкӑрне лӑп-лӑп-лӑп сӑтӑрчӗ. Вара хуллен, вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе кӳ те кӳ чӗрӗлсе, шӑкӑлтатса кайрӗ.

— Чӗмсӗр те вӑтанчӑк каччӑччӗ вӑл, Калистрат... Ҫайран та, ватта сулӑнаспа та, улшӑнмарӗ. Ҫав чӗмсӗрӗпе те вӑтанчӑкӗпех ӗмӗрне ирттерчӗ... Ара эсӗ ӑна ху та аван пӗлетӗн-ҫке, Йынкка. Калистратӑн кунта, ман пата, чирлӗ ҫын патне, кӗмен кунӗ те иртмен. Килетчӗ те ла-аратчӗ вара ура вӗҫӗнче шӑпӑрт, ҫанталӑксем-мӗнсем ҫинчен калаҫкаласа...

— Астӑватӑп-ха, анне, астӑватӑп...

— А эпӗ ӑна каччӑ чухнехинех астӑватӑп. Иҫмасса вӑйӑран та ҫавӑтса каяймастчӗ вӗт-ха вӑл мана. Именчӗкчӗ, вӑтанчӑкчӗ... Ҫас хӗрӗсемпе, касси-касси пухӑнакан хӗрсемпе пӗр ҫӗре, ял варне, Паканьсен умне, пухӑнаттӑмӑр та кӑмӑл туличчен вӑйӑ калаттӑмӑр. Ян та ян тӑратчӗ вара хӗрсен сасси урамсем ҫинче. Аннесемпе аппасене, каччa каяйман ват хӗрсене, аттесемпе ват хусахсене иртсе кайнӑ ҫамрӑк ӗмӗрӗсене асӑнтарса, ҫӗр варринче шарт! сиктере-сиктере ҫуйхантарнӑ пулӗ ку юрӑ. Сассисем, сассисем еплерехчӗ тата яш вӑхӑтпа хыпса ҫунакан яш хӗрсен, ҫинҫе те савӑкчӗ. Юрату вӑраннӑ чӗрене кӑлт-кӑлт сиктерсе тӑратчӗҫ. Кӗҫӗрлӗхе юрласа ҫитсен, хӗрсем, ҫӑлтӑрлӑ каҫа ян-ян янратса, укӑлча еннелле пӑрӑнатчӗҫ те, тӑкӑрлӑк вӗҫне тухсан, каялла ҫаврӑнса, паҫӑр ушкӑнпа савӑшнӑ тӗлелле утнӑ май, салана-салана каятчӗҫ. Каччӑсем тытса юлма ӗлкӗреймен хӗрсем вара, юлнӑ пекки, кашни хӑйсен урамне ялан пуҫтарӑнакан ҫӗре таврӑнса, каллех паҫӑрхинчен кая мар вӑйӑ калатчӗҫ. Алтӑр ҫӑлтӑр ӳпӗнеспе кӑна, киле кӗрес-

пе, шăпланатчĕ юрă-кĕвĕ... Калистрат, мана хĕрсенчен тытса юлма именекенскер, хамăр касалла пăрăнаспа кăна хăйи-хăйми чарса, хапха умне ăсаткаласа хăваратчĕ... Лараттăмăр вара эпир унпа пахча кĕтессине пăрахнă каска çинче, пĕр-пĕрин ăшшăмăрсене туйса, пăт-пат сăмах хушкаласа. Мана лайăхчĕ унпа ларма, лăпкăччĕ, кил умне ăсатакан пуррипе хама хĕр шутне кĕнине туйса тăма аванччĕ. Эпĕ ун чухне вунçиччĕре анчахчĕ çав, аслисене курса, шутсăр, шутсăр каччăсемпе çӳрес килетчĕ... Ара, вунçиччĕре чухне кам кăна юратушăн супăшман пуль, пĕр-пĕр каччăпа йăмра айĕнче шăкăлтатса калаçса тăрасса ыйхă вĕçтерсе ĕмĕтленмен... Ун пек каччă, ав, ман тĕле Калистрат пулчĕ... Вăл большевиксене, темĕнле меньшевиксене асăнатчĕ, хут вĕреннĕччĕ те вăл — час-час «революци» сăмаха калатчĕ... Ун чухне ку япаласем мĕнсем иккенне тавçăрман та — лараттăм вара эп Калистрат çавăн чухлĕ пĕлнинчен тĕлĕнсе... Революцийĕ вăл çав çулне, кĕркунне анчах пулчĕ-ха. Хайхи çĕнĕ самана тапранса кайрĕ... Граждан вăрçи... Калистрат та унта ăсанчĕ... Эпир унпа юрату çинчен калаçса курман та темелле, тухса каяс каç кăна вăл мана, хыттăн çупăрласа, çаппа каласа хăварнăччĕ: «Кĕт, Тарье, таврăнсанах сана качча илетĕп, кĕтĕн-и?» — тенĕччĕ... Эпĕ пуçа анчах аяларах пĕкнĕччĕ... Калистрат вара, чуптуса (унччен вăл мана чуптума мар, ыталаса та курман): — «Эпĕ сана анчах юрататăп, мана сансăр пуçне урăх никам та, никам та кирлĕ мар», — тенĕччĕ... Эпĕ те вара, тухса каякан çынна хĕрхенсе-ши: «Кĕтĕп, Калистрат», — тенĕччĕ те ăна тĕрленĕ алă тутри панăччĕ... Калистрат ман, ав, çав алтутрине çĕре кĕриччен усранă... Виличчен виçĕ кун малтан вăл ку алтутрине каялла килсе пачĕ: «Ĕмĕрĕм иртрĕ, Тарье, хăраххăнах ăсанам эппин лере те. Ан ӳпкеле. Çутă тĕнчере хăвна курса пурăнма пӳрнĕшĕн те сăпаççип», — терĕ те тухса кайрĕ...

Тарье кинемей кивелсе сарăха пуçланă катанпир алтутрине минтерĕ айĕнчен кăларчĕ те тути çывăхнерех, юн тымарĕ кăлт-кăлт тапакан янахĕ айне тытрĕ.

— «Кĕтĕп, Калистрат», — тесе каласса каларăм та-ха эпĕ ăна ун чухне, хĕр шухăшĕ мĕнччĕ çав манăн, урăхчĕ. Эпĕ хамăр касри Çататтăл Кĕркури ывăлне, Энтрие, килĕштерсе пăрахнăччĕ. Энтри хăй вăййа тухма тытăннă çулах, Калистратпа эпир çӳреме пуç-

ланин тепӗр ҫулне, Калистрат вӑрҫа ӑсаннӑ ҫул, мана хӗрсен ушкӑнӗнченех яп ярса тытнӑччӗ те хамӑр тӗлелле мар, урӑх еннелле варт! ҫавӑрса кайса каларстарнӑччӗ. Калистрат манпа Энтри те ҫӳресшӗн пулнине пӗлетчӗ пулин те, нимӗн те шарламастчӗ. Тухса кайнӑ чухне те Энтри ятне асӑнмарӗ вӑл. Темме асӑнмарӗ вара, ҫавна паян кун та пӗлейместӗп... Ҫынсене хӑй пекех ӗненетчӗ те хӗр сӑмах панине шаннӑ пулӗ ӗнтӗ... Астӑватӑп-ха, пӗррехинче ҫапла Калистратпа Энтри хушшинче чутах тытӑҫу тухса каймарӗ. Ҫав каҫ мана Калистрат ӑсатса хӑварнӑччӗ те, уйрӑласпа, пирӗн тӗле Энтри те пырса тухнӑччӗ. Калистратпа иксӗмӗр тӑнишӗн хӑй кӑмӑлсӑрланнине кӑтартма хӑтланнӑччӗ вӑл, Тарьепе, манпа, ӳлӗм хӑй анчах ҫӳрессе сас хӑпартса пӑхнӑччӗ. Калистрат апла та, капла та чӗнменнипе, наччасрах лӑпланнӑччӗ вара. Ҫав каҫхине тӳпери ҫӑлтӑрсене тинкерсе, виҫсӗмӗр те шӑпӑрт-шӑпӑрт ларнӑччӗ эпир. Унашкал виҫсӗмӗр ҫапла шӑпӑрт-шӑпӑрт ларнине урӑхран астумастӑп та...

Алӑ арманӗ ыйтма пырсан ӑша ҫунтарса хӑварнӑччӗ манӑнне Энтри. Кӗрпе авӑртма тапратнӑ иккен те вӗсем, пӑтӑлӑх (хӑйсен шултӑра тӑвать-мӗн), вара пирӗнне ыйтма килнӗ. Анне ҫукчӗ те, алӑ арманне йӗкӗте эпӗ хамах парса янӑччӗ. Ҫавӑн чухне, тӑрри шӑтӑкскер, пер яр эп: «Эсӗ, Энтри, ху каччӑ пулнӑ, ҫапах та урама тухмасӑр килте пытанса пурӑнатӑн»,— тенӗччӗ. «Кӗҫӗртен тухатӑп... Шутсӑр хитре хӗр эсӗ, Тарье»,— тенӗччӗ... Малалла вара эпир ҫапла перкелешнӗччӗ:

«Ай-уй, эпӗ те хитре пулсан вара, мана хура курак та хурӑнташ».

«Чӑнах та хитре эсӗ, Тарье».

«Кай-ха, ан лӑпӑртатса тӑр».

«Чӑнах калатӑп, Тарье... Сана Калистратпа ҫӳрет, теҫҫӗ те. Тӗрӗс-и?»

«Кай... урӑх ан кил пирӗн пата, апла калаҫан пулсан, ал арманне те парса ямастӑп ак. Кӗртместӗп те».

«А эп карта урлӑ каҫса кӗретӗп».

«Ай-уй, пӑх-ха, сӗмсӗр те-ҫке эс, пӗлмен».

«Тарье, тух кӗҫӗр вӑййа, иксӗмӗр калаҫӑпӑр».

«Те пӗлетӗн-ха эс калаҫма?»

«Ал арманĕ пирки вара, калаҫĕ тесе калăн, хамăр туй валли те салат авăртса парăп ак».

«Чĕлхӳ ытла вăрăм та, темĕн...»

Хĕр чĕри хĕр чĕриех — каччăн шӳтле сăмахĕшĕнех ирĕлет. Пурнăҫра, ав, Энтри перре янă шӳтле сăмахах чăна килчĕ—тепĕр ҫулталăкранах эпĕ, Питрав куннe, ăна качча тухрăм... Ҫапла ҫав, Энтри шӳтле перре янă сăмах шӳт те пулман-мĕн, вăл мана хамăр ҫӳриччен ҫулталăк малтанах тĕсесе хунă-мĕн те, вăйăа, арҫын шутне тăма иртерех-ха, тесе урама та тухман, мана калас сăмаххине питĕ-питĕ калас патне ҫитсен тин, пирĕн пата амăшĕ килес вырăнне, алă арманне илмелле хăй пынă. Ара, чĕрере пур сăмаха ăна урăхла та калама пулнă та-ха, Энтришĕн, ав, ҫав урăхли, ал армань ыйтма килсен пулсă тухнă. Хăй мана килĕштерсе пăрахнине малтанах пĕлтерсе хумасăр вăййа тухма картман-мĕн каччă...

Қалистратпа вĕсем шутсăр расна ҫынсемччĕ. Қалистрат чĕмсĕр те вăтанчăкскер, кашни утăма тĕплĕн те виҫсе, ăнпа тăватчĕ пулсан, Энтри пачах урăхла ҫынччĕ. Энтри шухă та вĕриччĕ, пуҫне пырса кĕнĕ пĕрпĕр шухăшшăн пуҫне ҫухатса ыткăнатчĕ. Сан манерлĕрех ҫынччĕ пулмалла вăл. Эсĕ те пĕр пуҫлана ĕҫе вĕҫне ҫитермесĕр пăрахмастăн, шăлна ҫыртса тăватăн. Ун пек чухне пуҫа та час ҫухатма пулать... Мĕн хыпăнтарса ӳкернĕ-ши ĕнтĕ мана Энтрире? Унăн шуха та вĕри чĕри-ши е ҫамкине хăрах хĕрринчен лăп-лăп хупăрласа тăракан кăп-кăтра ҫӳҫ пайăрки-ши, ҫилпе вĕл-вĕл хумханса тăраканскер?.. Юратса пăрахрăм эп, ҫав пуҫҫавăрмăш Энтрие, уншăн ҫĕр ҫывăраймми пултăм... Мана вăл хăй юратни ҫинчен ăшă-ăшă сăмахсем калатчĕ, алла хыттăн-хыттăн чăмăртатчĕ, ҫав хитре те ҫепĕҫ сăмахсене илтнипе пуҫăм ыррăн та ыррăн ҫаврăна-ҫаврăна каятчĕ ман. Эх, мăнтарăн хĕр чĕри...

Илтмен эп Қалистратран Энтри калакан хитре те ҫепĕҫ сăмахсене... Илтнĕ пулсан... Илтнĕ пулсан-и?.. Тем пулатчĕ ĕнтĕ илтнĕ пулсан, калаймастăп...

...Питрав кунĕ те перре ҫитрĕ, хамăрăн ҫуллахи выляса-кулса ирттернĕ яш эрнесемпе талăксене ăсатса ямалли кун... Питрав кунĕ хыҫҫăн вăйă-кулă илтĕнместчĕ вара ялта, ĕҫҫи тапранатчĕ. Ĕҫҫи вăхăтĕнче шуйханса ҫӳрени вырăнсăр, ҫитменнине каҫ выртса

ир те тăмаллаччĕ — хĕвелччен çурла йăтса хире ĕлкĕрмеллеччĕ... Хĕрсем, чăлт шурă кĕпе тăхăннăскерсем, кăнтăрла иртеспе, вăйă каласа, карти-картипе пĕр урамран, тепĕр урамран аслă урама, Паканьсен тĕлне, пухăнса çитнĕччĕ. Хĕрсем кăна-и!.. Ватти те — вĕтти те пыра-пыра тулнăччĕ унта. Ытларах амăшĕсем пынăччĕ унта — хăйсен хĕрĕсем хĕр ĕмĕрĕн пирвайхи вăййине епле ăсатса янине курма... Ăшша, инçене ăсанакан кайăк хур сасси пек хĕрсен чĕрене çуракан сасси ян та ян тăратчĕ ял çинче. Паканьсен умĕнче вăйă каласа çитсен, хĕвел каçалана сулăнсан, ял хыçĕнчи çереме, Кивтара,ултă ял хĕрĕ пĕрле пухăнса юрлакан вырăна, тавралăха пасăрхиллех янраттарса утнăччĕ эпир. Тем авăкчен юрларăмăр вара ют ял хĕрĕсемпе пĕрле. Юррисем, юррисем еплерехчĕ:

Ирхи сĕллĕн шерепи
Сывлăм шывпе илемлĕ,
Ай-хай хамăр тантăшсем
Шур тутрипе илемлĕ.

Çăлтăр хушка çӳрен ут
Вылять хĕвел тухнă чух,
Сар ачапа сарă хĕр
Вылять çырла пиçнĕ чух.

Шинлă урапа кусасси
Кĕркуннеччен анчах у,
Эпир вăййа тухасси
Питрав каçчен анчах у.

Асилсен, халĕ те чĕрене пăчăртаса илеççĕ вăйă каланисем... Кутемĕн вăййисене те тухма пăрахрĕç... Манчĕ курăнать чăваш хăй йăлине... Мĕн тери чуна çĕклентерсе тăракан хӳхĕм япалаччĕ вăйă тени... Пирĕнтен анатарах, Сĕве тăрăхĕнче, тухкалаççĕ тенине илтнĕччĕ-ха эпĕ, темле... Тухкалаççĕ-и унта, Йынкка, мĕнле?

— Пĕлместĕп, анне, кайса курман...

Пĕлместĕр çав эсир, хальхи çамрăксем, пĕлместĕр... Радиви-телевисорне кĕрлеттеретĕр те—çитрĕ те сире... Шăпланчĕ ял... Итлекелесе выртатăп та çĕрлесерен, хăраса каймалла шăплăх тăрать... Купăс сасси илтĕ-

нинччĕ хуть, çук... Купăсне те калаканĕ пĕтсех пырать... Хăйсем каласа чăрманмаççĕ, на кăна пластинка çавăрттараççĕ... Эпир чух çаплаччĕ-и?.. Çук, апла марччĕ... Эпир чух ял урамĕ шăпланма пĕлместчĕ, чĕресене купăс-юрă сасси пăлхантарса тăратчĕ. А халь?.. Анрашса иртет те пĕр-пĕр ÿсĕр — çав кăна...

— Ÿсĕрĕ вăл ун чухне те пулнă пуль те-ха...

— Ун чухне тетĕн?.. Праçниксенче-мĕнсенче, хăнана кайнă тĕлсенче — пулкаланă... Ахаль, тăр-кăнтăрла, ĕç вăхăтĕнче, черкке енне алă тăсасси пирки асна та ан ил... Çынран именнĕ ун чухне халăх, çын сăмаххинчен асăрханнă... А халь мĕнле-ха?.. Лахханĕпех кÿпеççĕ... Пăсăлчĕ ял çынни те... Ĕлĕкхи мар ĕнтĕ халь, патшалăхĕ лайăх усрать халăха... Укçине те, тыррине те çителĕклех парать... Ма савăнса пурăнас мар, тепĕр тесен...

— Чарасса чарсах тăратпăр та-ха, пур-ха ĕçкĕпе иртĕхекенсем те...

Тарье кинемей, тин кăна хăй ĕçкĕсем мĕнсем çинчен каланине манса кайнăн, калаçма ÿркеннĕ евĕр, шăпăрт пулса выртрĕ. Сыпкăм чей ĕçрĕ.

— Мĕн теме тапратнăччĕ çав эпĕ паçăр, Йынкка,— терĕ те, ывăлĕ каласса кĕтмесĕрех, асилнĕ пеккĕн çамкине пĕркелентерсе, малтанхи евĕрех шăкăл-шăкăл калаçса кайрĕ.— Э-э, мĕн терĕм-çке... Питрав каç урама тухни вара маншăн вăйă картине юлашки хут тăни пулчĕ. Çавна пĕлнĕ пекех, вăйăра сассăм та манăн уçăрах, янкăсрах тухрĕ пулĕ, чĕрем те, вăйă кĕввипе çунатланса, хыттăнрах тапрĕ пулĕ:

Çĕмĕрт çеçки пит шурă,  
Пит шурă та час тăкнать.  
Хĕр ĕмĕрĕ пит лайăх,  
Пит лайăх та час иртет.

Укăлчаранах тытса кайрĕ мана Энтри хăйсен килне, ял вĕçне Питрав вăййине ăсатса яма тухсан, каçхине. Шăпчăк ыйхи пек, çÿл тÿпере пăр та пăр вĕçекен тăри сасси пек иртсе кайрĕ мана пÿрнĕ хĕр ĕмĕри çав каç... Хĕпĕртесе те савăнса, телей саманчĕсемпе йăл та йăл çиçе-çиçе илсе иртсе кайрĕ... Ÿкĕнĕççĕр, ÿпкевсĕр...

Пĕрлешсен тепĕр çур çултан Энтри хăй ирĕкĕпе çара ăсанчĕ, Хĕрлĕ Çара. Вăл кайсан виçĕ уйăхран

манăн асли, Миккул, çуралчĕ... Пилĕк çул çитеспе тин таврăнчĕ Энтри, хăйне унтан та, кунтан та шăтарса пĕтернĕ пулин те, чĕрĕ таврăнчĕ... Энтрипе эпир каллех, хĕрпе каччă чухнехи пек, шăкăлтатса пурăнма пуçларăмăр. Çавăн хыççăн тепĕр тăхăр уйăхран иккĕмĕш ывăл тĕнчене килчĕ: Элексей... Кайран колхозсем тăвас тапхăр пуçланса кайрĕ. Энтрие, хĕрлĕ командира, председателе суйларĕç... Калистрат, вăл та çартан таврăннăскер, ял Совет секретарĕнче ĕçлетчĕ ĕнтĕ... Энтри ку вырăнта лара-тăра пĕлместчĕ, вут пек ĕçлетчĕ... Малтан пĕрлешӳллĕ хуçалăха çичĕ килли çырăнчĕ, унтан, Энтри ӳкĕтленипе тата хăйсем курса тăнипе, ку йыш çирĕм киле çитрĕ, вăтăра, хĕрĕхе, утмăл кил урлă каçса кайрĕ... Колхозсем чăмăртаннă вăхăтра хайхи çĕнĕ саманана хирĕç тăракансене, кулаксене, Çĕпĕре тыта-тыта яма пуçларĕç. Пурччĕ пирĕн ялта та ун пекки — Кашкăр Кĕпĕрьянĕ, çĕрме пуян... Карти-хури чăх вĕçсе каçайми, пурлăхĕ — лав туртайміччĕ, çурчĕ — кермен пек... Кашкăр Кĕпĕрьянне эпир те, аннепе, çăкăрлăх ĕçлесе илес тесе, кĕрĕшсе, пĕрре кăна мар тырă вырса пană... Хăйне Çĕпĕре ярсан, çуртĕнче кайран правлени турĕç... Çав Кашкăр Кĕпĕрьянĕн шутсăр усал та шутсăр хитре ывăлĕ, ашшĕнчен пĕртте кая мар мула хапсăнаканскер, пурччĕ — Çилькка ятлăскер. Ялта вĕсем НЭП вăхăтĕнче лавкка та уçнăччĕ... Хайхи лавккине те, çуртне-йĕрне те туртса илсе, Кашкăрсене çемйи-мĕнĕпех Çĕпĕре ăсатрĕç... Халь лавккин те, çурчĕ-йĕрĕн те палли çук ĕнтĕ... Самана çилĕ тикĕслерĕ вĕсене... Эс, Йынкка, Кашкăр хуралтисене астусах та каяймастăн пуль?

— Тĕлĕкри пек кăна...

— Астума та кирлĕ мар... Пирĕн ялта тата çирĕммĕш çулччен пуп çемйи пурăнатчĕ — Ануфри атте çемйи... Эпĕ те кайкаласа курнă-ха ăна, мĕкĕрттерсе яратчĕ те вара Ануфри атте арман чулĕнни пек хулăм сассипе пĕтĕм чиркĕве чĕтретсе илетчĕ... Хĕрĕ пурччĕ тата унăн — пĕртен-пĕр хĕрĕ — Магдалина — пĕр вунпиллĕксенчискер. Çирĕммĕш çулта чиркĕве хупрĕç те (Энтрисемпе Калистратсемех хуптарчĕç-ха ăна — комсомолецсем) — пуп çемйи ялтан тухса шăвăнчĕ, таçта, урăх çĕрелле... Çав пуп хĕрĕн, Магдалинăн, ашшĕсем алă çапсах килĕшсе хунă йĕкĕчĕ

пулнă-мĕн — Кашкăр Кĕпĕрьянĕн ывăлĕ — Çилькка. Ануфри аттепе Кашкăр Кĕпĕрьянĕ хурăнташланасшăн пулнă ĕнтĕ... Тухса кайнăранпа шăп та лăп вунă çултан таврăнчĕ Магдалина яла, учительница пулса. Ялйыш кун пирки нимĕнех те шарламарĕ. «Кунтах çуралса ÿснĕскер, кунтах килсе ĕçлес терĕ пуль»,— текелерĕ кăна... Çирĕм пиллĕксенчискер, калама çук хитреччĕ Магдалина. Йĕкĕр ывăçа кĕрес пек пилĕкĕ те, йăкăл-йăкăл утти те, супăнь шывĕпе мар çунăн тап-таса пичĕ те, кăчăк туртса йăл-йăл çиçекен кусĕсем те, сарă-сарă çÿçĕ те, майралла кĕпи те, пĕр сăмахпа — пĕтĕм пĕвĕ-кĕлетки питĕ-питĕ килĕшÿллĕччĕ. Çавăншăнах тăнне çухатнă пулĕ ĕнтĕ Çилькка та... Вĕсен туйĕ пулмалла текен сас-хура та тухнăччĕ ял çине... Туя лармалла тейиччен эрне малтан Кашкăрсене, çыхса пăрахса тенĕ пекех, района леçрĕç. Районран килнисемпе, Кашкăрсене сыхласа пыма, Калистрат та кайнăччĕ... Тухса кайнă чухне Кĕпĕрьянĕнчен те ытларах Çилькки ылханса пĕтнĕ тетчĕç, хăйне чĕр мăшкăл кăтартнăшăн, нимсĕр тăратса хăварнăшăн Энтрие те, Калистрата та тавăрма пулнă тетчĕç...

Кашкăрсене Çĕпĕре ăсатнăранпа пăртакран, ман пуçăм çине хурлăх йăтăнса анчĕ. Энтри, манăн юратнă Энтри, çав Магдалина патне иленчĕ. Хыпарне илтсен, тĕнче пĕтсе килнĕ пек туйăнчĕ... Алăсем лăштăрах усăнчĕç. Хăй, Энтри, ман çине пăхатчĕ-пăхатчĕ те нимĕн те шарламастчĕ... Те пĕлмест, тенĕ ĕнтĕ вăл мана, те пĕлсен те, хĕрхенсе, хурлантарас темен... Магдалина патне çÿреме пуçланăранпа, унччен шăкăл та шăкăл калаçаканскер, сахал сăмахлакан пулчĕ, унччен айăн та çийĕн çаврăнакан Энтри — лăпкăланчĕ, чĕмсĕрленчĕ... Ăш çунсах тухатчĕ манăн, нимĕн тума аптăраттăм. Каларăм çавна пĕррехинче, Магдалина пирки, чăтайманран, Энтри правленирен таврăнсан. Çынсенчен, ялйышран намăсси пирки каларăм... Мăкăл та чĕнмерĕ Энтри, ачасене пуçĕсенчен шăлкаласа хăварчĕ те тухрĕ те утрĕ... Тепĕр каç та таврăнмарĕ Энтри, виççĕмĕш каç та... Чун кÿтсе-кÿтсе килнипе эпĕ тÿссе тăраймарăм, ачасене çывăрттартăм та урана çăматă тăхăнса, çие кĕрĕк уртса яма мансах, упăшка çапла хăтланнишĕн тарăхса та хаярланса çитнĕскер, Магдалина патне тухса чупрăм. Макăрса та такăна-такăна



2048-448
Чувашская республиканская библиотека им. М. Горького

ӳксе чупрăм эпĕ, çитетĕп те çав аскăн хĕрарăма çӳ-
çĕнчен тытса лăскатăп тесе чупрăм... Çав шалкăмлă
каç та, кĕçĕрхи пекех, асар-писер çанталăк тăратчĕ,
кутсăр-пуçсăр тăман алхасатчĕ... Çул урлă кĕрт хĕве-
хĕве лартнăччĕ... Кĕртне те, çилне те пăхмасăр чупрăм
та чупрăм эпĕ, халтан кайса, ăшша пиçсе чупрăм...
Чупса çитрĕм те Магдалинăсен умне (ашшĕ çуртĕн-
чех пурăнатчĕ вăл, шкула килекен учительсем валли
общежити тунăскерĕн пĕр пӳлĕмĕнче) — тăпах чарăн-
са тăтăм. Паçăр хамра пуçтарăнса-пуçтарăнса пынă
тарăхуллă кăмăл тăнчах юхса тухнă-мĕн: çуртăн кан-
тăкĕсем тĕттĕм, çутăсăр. Тен, чӳречисем çутă пулсас-
сăнах çĕмĕрттерсе кĕреттĕмччĕ-и те, чӳречисем тĕттĕм
пулни манăн алă-урама сăнчăрпа сăнчăрланă пекех
хытарса лартрĕç. Эпĕ, хамăн шăпама хĕрхенсе, ăшри
куççульпе сасăсăр макăрса ятăм... Манăн шалти куç-
çулĕме илтсе, Энтри çакăнта тухассăнах туйăнса тă-
нăччĕ мана... Кĕтрĕм эпĕ ăна, кĕтрĕм... Шăмшак та,
урасем те ним пĕлми пуличченех сивĕ çил айĕнче тăр-
тăр чĕтресе кĕтрĕм... Пĕр сехет кĕтрĕм-и çапла, икĕ
сехет-и, пĕлместĕп — тухмарĕ ман пата Энтри... Ма-
нăн телее вăрлакан Магдалина чӳречине, алăкне пырса
тӳнлеттерме хал çитереймерĕм... Çитереймен хал...
Ӳпкевпе, çĕр чăтайми хурлăхпа утнă та утнă вара эпĕ
таçталла, хама та, хамăн сая кайнă ĕмĕрĕме те ыл-
ханса... Калистратăн хăй çутиллĕ пӳртне пырса кĕрсен
тин кăшт ăна кĕнĕ пек пулнă... Астăватăп-ха, эпĕ ăна
хам ирĕкпе яланлăхах ун патне килнине каларăм,
ăшăтма, хӳтлĕх пама ыйтрăм... Калистратран лайăх-
хи тĕнчере урăх пĕр çын та çук пек туйăннăччĕ мана
çав каç... Энтрипе пулакан телейĕм каллех, çĕнĕрен
каялла таврăннă пек туйăннăччĕ... Тем çухатнă, тем
туяннă пекчĕ те...

Тарье кинемей юлашки сăмахĕсене ӳслĕкĕ витĕрех
аран-аран каласа пĕтерме вăй çитерчĕ. Ӳслĕкĕ хуп-
ласа килчĕ те ăна, карчăк темĕнччен ахлатса-кăхлат-
са выртрĕ. Кинемей туртăшса ӳсĕрнине илтсе, кăмака
хыçĕнчи шăрчăк та лап чарăнса ларчĕ.

— Ывăлăм, чей ĕçес килнĕ пек пулчĕ те... Вĕри
чей... Эй, çав пырпах ĕнтĕ... Паçăр сивви евĕклĕ пек-
чĕ... Халь, ав, вĕришĕн кастарать... Аптрамалла çав
анаталла пырпа... Чисти...

— Çиччас, анне.

Йынкка наччас чей вĕретсе пачĕ. Паçăр ĕçем-ĕçем тенĕскер, Тарье кинемей стакана тĕкĕнмерĕ те, алă лаппине анчах хуллен-хуллен яванакан пăсĕ çине тыт са ăшăтрĕ те, сăмаххине малалла чуптарчĕ...

— Çав каç, çав шалкăмлă каç, Энтри киле пынă-мĕн. Темле хирĕç пулайман вара эпир унпа урамра... Энтри мана кĕтнĕ-кĕтнĕ-мĕн те, кĕтсе илеймесĕрех, кăвак çут килеспе, шырама тухма тăнă. Шăп çав самантра пырса кĕтĕмĕр эпир Қалистратпа иксĕмĕр Энтри, пире курсан, хытă тĕлĕнчĕ пулин те, урлă та майлă та чĕнмерĕ. Қалистрат тĕпелелле иртрĕ, Энтри те иртрĕ. Пĕри те сăмах чĕнмеççĕ. Эпĕ вара: «Çук ĕнтĕ, Қалистрат, пултараймастăп, ан ӳпкеле», тенĕччĕ те, сасăпах макăрса ярса, Энтри умне ӳкнĕччĕ. Энтри мана йăтса тăратнăччĕ те: «Ан йĕр, Тарье, каçар»,— тенĕччĕ те, урăх пĕр сăмах та каламасăр, пӳртрен тухса кайнăччĕ... Эпир, Қалистратпа, çитетпĕр те, ачасене вăратса, япаласене пуçтарса, ун патне куçатпăр тесе тĕв тунăччĕ... Энтри алăкран тухса кайиччен Қалистрат ăна çапла каласа юлма ĕлкĕрнĕччĕ тата: «Асту, Энтри, Тарьене ан тĕкĕн» тенĕччĕ... Урăх пĕр сăмах та шарламанччĕ. Қалистрат та мана ӳкĕтлеменччĕ, йăлăнманччĕ те, пĕкĕрĕлерех, авăнарах кăна тухса кайнăччĕ пӳртрен... Çирĕп чунлă арçынсемччĕ çав вĕсем иккĕшĕ те, ытлашши вакламасăрах пĕр-пĕрне лайăх ăнланатчĕç... Эпĕ вĕсем хушшинче хурлă юрату пултăм пулин те, Энтрипе Қалистрат килĕштерсе ĕçлетчĕç... Урлă пулман, хирĕçмен...

Пĕлместĕп, çавăн чухне Қалистратпа килĕшнĕ пулсан, тен, канăçлăрах та пулнă пулăттăм-и те... Анчах та эпĕ Қалистрата мар-çке-ха, Энтрие, Энтрие юратнă, ывăлăм...

Вĕçнĕ пек çӳрерĕм эпĕ кайранхи уйăхсемпе эрнесенче. Çунат хушăнчĕ тейĕн — тытнă ĕç кал-кал пулса пыратчĕ... Энтри те Магдалина патне урăх ура ярса пусмарĕ, киле яланхи тăнăçлăх таврăннă пекчĕ... Ыйтмастчĕ Энтри Қалистрат çинчен те, çав шалкăм каç пирки те... Нумая пымарĕ пирĕн килти çак тăнăçлăх... Çăва тухаспа ман Энтри каллех вĕçерĕнсе кайрĕ, туртăнса-туртăнса пурăнчĕ те — вĕçерĕнсе кайрĕ, каллех Магдалинăна иленчĕ. Эп тата сана, ывăлăм, Магдалина пирки, хăй пирки каласа парам-ха, ячĕ пирки... Хутя эсир, хальхи çамрăксем, ăна-кăна аванах ăнка-

ратăр та-ха, эпир тĕттĕмрех пулнă та — пурнех тавçăрсах çитереймен... Пупĕ, Ануфри атте, яш чухне, таçта вырăсра пурăннă чухне, пĕр хĕре — Магдалина ятлăскерне — юратса пăрахнă-мĕн те, каччă илнĕ, лешĕ вара, Ануфрипе пăртак савăшкаланă хыççăн, таса аттене шĕшлĕ аври кăна кăтартса хăварнă — тепĕр арçынпа тухса вĕçнĕ. Тăрса юлнă вара Ануфри уй тăмани пек тăр пĕччен, пăртакран тепре авланса янă, пупсен хăраххăн пурăнма юрамасть, саккунĕ çапла хушать. Ачи çуралсан вара, хĕрĕ çуралсан, унччен хи арăмне ылханса, турăшăн та çав пӳтсĕр хĕрарăма ан пăхтăр тесе, ун ячĕпех тĕне кĕртет — Магдалина... Магдалина вăл мĕн тет-и, çылăха кĕрсе пĕтнĕ хĕр, тет-и... Библире çырнă теççĕ-и ăна-кăна... Ануфри аттен хĕрĕн ячĕ те библири пекех тӳрре тухрĕ, ав — Магдалина... Çавах çирĕ пулĕ тетĕп эп Энтри пуçне те...

Ку хутĕнче эпĕ ытларах та çухалса кайнăччĕ... Çук-ха, тĕрĕс каламарăм-ха. Çухалса мар, темле шалти çутăпа çуталса кайнăччĕ. Энтри Магдалина патне ахальшĕн анчах çӳременнине, ăна вĕрин те пуçне çухатса юратса пăрахнине, çав хĕрарăм ăна халлĕхе питĕ-питĕ кирлĕ иккенне, хăй çав юратуран хăранине те, ман умăмра каçармасла айăплă туйнине те, çав вăхăтрах вăл Магдалинăран пурăна киле пач сивĕнессе те, ман пата, хăйĕн Тарьи патне таврăнасса та чĕррĕн те шартарса ярасла туйса илнĕччĕ эпĕ. Эпĕ чĕнместĕм, нимĕн те каламастăм. Эпĕ тăвăл умĕнхи тинĕс пек çын сисмелле мар лăпкă та тӳлекчĕ. Ăшра анчах Энтри вут хунă кăвайт шартлатса çунатчĕ... Юрататчĕ Энтри Магдалинăна, çав юратуран мĕнле çăлăнса тухмаллине анчах пĕлместчĕ, çавăнпа хăйне ман умра тата айăплăрах туятчĕ...

Кун çитрĕ, хаяр та шелсĕр кун. Пуçне те кăларма ĕлкĕреймен хĕвел пирĕн ял çине хурлă хыпарне хăйĕнчен малтан çитерчĕ: «Энтрие вĕлернĕ!..» Шалтăр-шалтăр кайрĕ чĕре, пĕлĕт тайăлчĕ-тайăлчĕ... Чупса çитрĕм вĕтлĕх хĕрне, çул çине, Хĕвел тĕмескине... Пăхатăп... выртать ман Энтри сывламасăр, ӳпне тăрăнса аннă та, тухăçалла тинкерсе, çулăм чăмăркки çĕкленнине курас пек, çĕр чăмăрне ытамласа саркаланса выртать, аллинче — тайăлнă-тайăлнă чух татса илнĕ

пучах... Çамки çине, кăтра пайăркине çилĕмлесе, юн хытнă...

Куçăм хуралса-хуралса килчĕ, урасем — тайăлса-тайăлса. Пуля ăна ĕнсерен кăшт çӳлерех, пуç купташ-кине лекнĕ, перекенĕ куçа-куçăн тăрса пеме те хăранă иккен...

Пытартăмăр Энтрие хăй ӳкнĕ тĕлех, канлĕ те хăт-лă кĕтесе. Хĕвел тĕмески текен çак выранта пуринчен малтан хĕвел çĕкленнине курса вырттăр, хумлă-хумлă тырă пуссисен пучахлă хумне ĕмĕр-ĕмĕр тăнлатăр, терĕмĕр. Палăк лартрăмăр, йывăçран, тăррине хĕрлĕ çăлтăр касса... Халĕ ĕнтĕ палăкĕ те урăх, гранитран... Ара, хăвах тăрăшса тутартăн-çке, ывăлăм, атте ятне пултăр, терĕн... Каламарăм сана эпĕ ун чухне чăн сăмаха... Пытартăм...

Сиснĕ çав Калистрат чĕри те Энтрие кам пульли вĕçерĕнсе кайнине. Хайхи Магдалинăна сыхлама пуç-лать вăл. Пĕр каç сыхлать, икĕ каç... Иккĕмĕш каçхи-не пăхать: Магдалина, çынсем выртса пĕтсен, çур çĕр иртеспе, пĕчĕк кăна çыхă йăтса, пахча хыçĕпе уялла тухса утать. Калистрат — ун хыççăн. Вĕтлĕхе çитсен, çухатать вăл Магдалинăна... Нимĕн те пĕлеймесĕрех килне таврăнать... Тепĕр каç та сыхлать... Хĕр хыççăн, асăрханса, утăм юлмасла тенĕ пек, вĕтлĕхе пырса кĕрет... Магдалина пĕр çырма пуçне çитет те чăтлă-халла анса каять. Калистратваскамасть-ха, хăй те вĕтлĕх хушшине пытанса, хĕр каялла тухасса кĕтет... Чылай кĕтме тивет унăн... Тавралăх кăвакарма пуç-личчен кĕтет. Çырма пуçĕнчи йывăçсем шупкаланма тытăнсан, тухать хĕр чăтлăхран, Калистрат кĕтнĕ пе-кех, пĕччен мар, иккĕн тухать... Ыталашсах уйрăлаç-çĕ вĕсем, темскер мăкăр-мăкăр калаçаççĕ... Вĕсенчен аяккарах пулнипе, нимĕн те ăнкарса илеймест Кали-страт, леш арçыннин мăк пек сухалне анчах курса юлать... Магдалина ял еннелле кайса сукмакпа çĕтнĕ-çĕтменех, Калистрат çырма тĕпне утма тăнă çын енне «стой!» тесе кăшкăрса ярать. Çынни, çакна кĕтмен-скер, шарт! сиксе, пĕр саманта хытса тăрать, унтан, çаврăнса, сасă илтĕннĕ çĕрелле пăшалĕпе кĕрлеттерсе ярать те чăтлăхалла тапса сикет. Калистрат каллех «стой!» тесе кăшкăрать, лешĕ итлеменнине кура вара, вельверĕпе икĕ хутчен умлă-хыçлă тĕллесе перет. Вĕт-лĕхе кĕрсе тарма ĕлкĕрейменскер, лешĕ, хăлаçланка-

ласа илет те, ҫӗре кӳплетсе ӳкет... Калистрат чупса ҫитет те кӑкӑрне пырса тивнӗ пульӑсемпе чунӗ те тухма ӗлкӗрнӗ хура сухаллӑ таркӑна палласа илет... Калистрат сиснӗ пекех, ку этем Кашкӑр Кӗпӗрьянӗн ывӑлӗ — Ҫилькка пулах каять... Кӗске кӗпҫеллӗ пӑшалӗ хӑйӗн айккинелле ывтӑнса кайнӑ, куҫӗ, хӑранипе чарӑлса-алчӑраса кайнӑ, пуҫӗ хӗвеле кутӑн, ҫырма тӗпнелле усӑнса аннӑ...

Магдалини те нумаях пурӑнмарӗ ҫавӑн хыҫҫӑн, тухса шӑвӑнчӗ...

Энтри ҫӗре кӗрсен тепӗр виҫӗ уйӑх ҫурӑран, кӗр сиввисемпе, эсӗ тӗнчене килтӗн, ывӑлӑм...

Телее мар, хурлӑха ҫуралчӗ пулӗ ку, теттӗмччӗ эпӗ сана. Ара, мӗн-ҫке-ха, ютпа тупнӑ ачан сумӗ-хисепӗ те... Калистратпа пулнӑ каҫранпа тепӗр икӗ уйӑхран ҫие юлнине туйса илсен, Энтрипе эпир пурпӗрех ютшӑнаттӑмӑрччӗ ҫав, пуҫӑма тата тепӗр хуйхӑ шуратрӗ... Эпӗ, санран хӑтӑлас тесе, ывӑлӑм, пульницине те ҫитнӗ, юмӑҫне те... Ял сас-хуринчен аван мар тесе (ун чухне ку тӗлӗшпе саккунӗ хытӑччӗ пулин те), пӗррехинче район пульницине тухса утрӑм-утрӑмах эпӗ. Энтрие каламасӑр-тумасӑрах, район центрӗ те вунӑ-вуник ҫухрӑмра анчахчӗ те, кун кайса кун килӗп, тенӗччӗ... Шыв-шур вӑхӑтӗнчеччӗ... Хӗнпе-тертпе тенӗ пекех кӑнтӑрла тӗлнелле ҫитрӗм-ҫитрӗмех пульницине... Сан телейне пулчӗ пулинех, ачам, ман тӗле шӑп ҫав тухтӑрӗ вырӑнта пулмарӗ... Таврӑнсан, кӑштах вӑхӑт иртсен, эпи карчӑк патне те ҫитсе пӑхас терӗм те, ун килӗ умӗнчен каялла пӑрӑнса килтӗм... Хӗрхентӗм эпӗ сана, ывӑлӑм, ҫылӑхпа тупнӑ тӗпренчӗк пулин те, тӗнчене килес чӗрӗ чуна — хӗрхентӗм... Куҫҫульпе шӑварӑнса ӳсрӗн ӗнтӗ эсӗ, Йынкка, тен, ҫавӑнпах-тӑр, патвар ҫитӗнтӗн...

Тарье кинемейӗн куҫӗ шывланса-шывланса пычӗ те, икӗ вӗри тумлам тути хӗррисене ҫурса анчӗҫ.

— Халь шутлатӑп та, ывӑлӑм, турри сана ман валли юриех пиллесе пачӗ пулӗ, тетӗп, ватӑ кунӑмсене тирпейлӗ кӗскетме, эппин... Аннӳне усал сунманшӑн, пӑхса пурӑннӑшӑн сӑпаҫҫипех ӗнтӗ сана, ывӑлӑм... Савнӑ ҫыннӑмпа юратса ҫуратнӑ ачамсен уссине кураймарӑм, ав... Миккул, асли, ҫамрӑклах тухса кайрӗ те — ҫӗтрӗ, хыпарӗ те ҫук... Таҫта... Тӑпри ҫинче, тен, халиччен мӑян та кашлать пуль... Тӑван амӑшне ҫап-

ла манмалла-и, эпĕ чун парса пăхса ӳстернĕ-çке-ха ăна, эпĕ... кăкăр сĕчĕпе ĕмĕртсе ӳстернĕ... Элекçейĕ те Миккул хăраххиех, çар хыççăн çĕр кăмрăкĕ кăларнă çĕре ĕçлеме юлчĕ те, хăть çулталăкне пĕр çыру çырин... Килсе курасса аса та илмест... Кучченеç е укçан ярса парас пур хуть... Амăшĕ-çке-ха эпĕ, амăшĕ... Вĕсен кучченеçĕ-укçипе халь тин нимĕн те тăваймăп та, пурпĕрех ячĕ, сăвапĕ, манманни паха-çке... Амăшне чĕре патĕнче тытса усрани паха... Ытти çынсен ачисенчен пĕртте катăк ӳстермен, апатне те, тумне те хĕрхенсе тăман, мĕнпур пеккине йалт панă, пĕлместĕп, темшĕн çапла çитĕнчĕç. Вĕсене, иçмасса, патак та лексе курман... Сана, хуть, ху алхаскаланă тĕлсенче, мĕн тесе, вĕлтĕрен кайăк тесе, леккелетчĕ ĕнтĕ, хытах... Çапах та, ывăлăм, Йынкка, эсĕ те катăк ӳсмен, сана та вĕсемпе танах савса ӳстернĕ... Сăпаççипех сана ырă кăмăлушăн... Калистрат, ăт, такки эсĕ ун ачи пулнине пĕлеймесĕрех, ĕмĕрне хăраххăн ирттерсех, çĕре кĕрсе выртрĕ... Кайран-кайран та, хăй колхоз председателĕнче ĕçленĕ çулсенче те, пĕрре кăна мар ыйтнă вăл ун пирки... Эпĕ — тунаттăм... Сиснĕ ĕнтĕ вăл, мăнтарăн Калистрачĕ, сиснĕ... Пĕрле пурăнасса та мĕн чул тилмĕрчĕ — килĕшмерĕм...

Тарье кинемей шухăша кайнă пек пулчĕ те каллех шăпăртланчĕ. Тарьепе пĕрле шăрчăк та сас пама пăрахрĕ. Тарье калаçма пуçăнсанах, ăна та чун кĕчĕ.

— Йынкка,— терĕ амăшĕ,— те çапла кал-кал юмахланăран, апат ыйтнă пек пулчĕ-ха. Тем уçă апат ыйтнă пек пулчĕ. Мĕнччĕ те çав, яшка çакса шăн пулă çине сухан тураса ярсан...

— Çиччас, анне...— хыпаланса ӳкрĕ Йынкка. Чăлантан шăн пулă илсе кĕрсе, ăна тасатса, сухан тураса ярса ик-виç çăпалалăх яшка çакса янă вăхăтра вăл, амăшĕнчен мĕн илтнипе тĕлĕнсе те аптраса ӳксе, каласа панисем çинчен шухăшларĕ. Халиччен хăйне Энтри ывăлĕ тесе пурăннăскер, сасартăк Калистрат ывăлĕ пулса тăнăскер, кун пирки тӳрех амăшĕпе мĕн сăмах хушмаллине те чухласа çитереймерĕ арçын. Пĕр япала анчах хытарса ячĕ-ха ăна: мĕншĕн амăшĕ Калистрата та, çавăн чухлĕ пурăнса та, тĕрĕссине каламан?

Яшка та пиçсе анчĕ. Пăсланакан турилккене Йынкка амăшĕ умне, тенкел çине пырса лартрĕ. Çăкăр

касрĕ, кашăк хучĕ. Амăшĕ яшкине: «Сивĕнтĕр-ха, вĕрилле ухатах мар»,— текелесе, кашăкне те тĕкĕнмерĕ.

— Çапла... Пурăнса ирттертĕмĕр эпир пурнăçăмăра... Энтри те, Калистрат та... Вĕçне тухрăмăр,— ывăлĕ шухăшне пĕлнĕ пек çав йĕр çине ӳкрĕ Тарье кинемей.— Пултарайман эпĕ Калистрата шантарма, пултарайман... Энтришĕн пултарайман... Пирĕн хушшăмăрта яланах Энтри тăнă... Вĕри те чăрсăр Энтри... Хама хам эпĕ нарăс уйăхĕнчи çав çил-тăманлă каçшăн, шалкăмлă каçшăн каçарма пултараймарăм... Калистрата та эпĕ, ахăр, çавăншăнах, пурнăçăмра хам çапла пĕр саманта чӳкле çемçелсе кайнăшăн, çунтарса пурăнтăм пулмалла... Хам та вутпа çулăм хушшинче ирттертĕм кунăмсене,.. Пултарайман эпĕ Калистрата шантарма, пултарайман, ăнланатăн-и, пултарайман... Энтришĕн те, хамшăн та, уншăн та пултарайман... «Хаяр çын эсĕ, Тарье»,— тетчĕ мана Калистрат, вăл апла каласан та пурпĕр хам кăмăла хирĕç каяймарăм эпĕ... Вăрттăн та пулин, çын умĕнче те пулин тасалăха, ырă ятăма упрарăм... Ывăлăм пирки те, сан пирки, çавăншăнах пĕлтермен-тĕр... Тĕрĕссипе, мĕскершĕн чăтса пурăнтăм пулĕ эпĕ Калистрата чат тĕрĕссине калама... Апла-и, капла-и, чĕлхемрен чăн сăмах вĕçерĕнсе каймарĕ манăн.,. Пĕлместĕп, мĕн тейĕн мана эс куншăн, анчах та темскер чи кирли, çепĕççи, пурăнма ĕмĕтлентерекенни пурччĕ çавăнта... Халĕ ĕнтĕ ку та пĕтрĕ, вĕçне тухрĕ... Тен, эп телейрен те хăранă пулĕ, хапхам умĕнче, уçса кĕртессе кĕтсе, кĕçенсе тăракан телейрен, Калистрат ман валли упранă телейрен... Çук, ывăлăм, пĕрре пулнă телее тепĕр хут туртса-туртса тăссан та икĕ пая пайланмасть иккен, пайлансан та катăлса анчах пайланать.., Пĕрре суранланнă тĕл, темĕн чул пирчесен-пирчесен те, çĕвеклĕ пулать, хăйне асилтерсе тăрать... Кирек те мĕн шутла ĕнтĕ, ывăлăм, чăн сăмаха ăна хăçан та пулин пĕрре каламаллах.,. Калистрачĕ, Калистрачĕ... Вăл пурăннă чух мана та ăшăччĕ пурăнма, тен, яш чухнехинчен те ăшăрахчĕ-и... Ватта сулăнсан, хĕрĕвĕ те ытларах кирлĕ-çке этеме, ывăлăм...

Тарье кинемей темиçе минут пек шăрчăк сассине итлесе выртрĕ.

— Ах, ытла та шеп чăрлатать-çке шăрчăкĕ, кăмака хуралçи, тулти асар-писер çанталăк та ĕмĕр тăсă-

ласс пек чарлататъ,— карчăк шăпланчĕ те, пуçне чўрече енне пăрса, картишĕнче парăлтатакан тăман çине пăхса выртрĕ.

— Мĕн тетĕп-çке, ывăлăм... Энтрие пăхнă тетĕпçке сана. Қăмăлу аçунни, Қалистратăнни пек пулсан та, карахтерў — Энтрин... Ах, вĕри пуçа мĕн кирлĕ те çав...

Тарье кинемей, «вĕри пуçа мĕн кирли» пирки шухăшларĕ пулмалла та, те шухăшласа çитермесĕрех, Йынккана шăтарса пăхрĕ.

— Йынкка, ывăлăм, пыр, кай.., Натюш кинĕм патне кай, тетĕп-çке... Юр хўсех лартиччен çавăрса кил ăна каялла. Қĕтет вăл сана. Виç çухрăма ку тăманпа та çитме пулать... Ан хăвар ырана, Йынкка, ан хăвар... Тăман ассах кайиччен, пыр... Аташсах каймăн... Çул хыттипе,.. Çул хыттипе...

Тарье кинемей каллех туртăша-туртăша сывларĕ.

— Юр хĕвет... Мотьăсен тĕлне хўсе тултарнă ĕнтĕ вăл, кĕми-тухми туса хунă... Çил çинчи киле ялан çаппа тăлпалать çанталăкĕ... Пыр, ывăлăм, Натюш кинĕм патне... Хўсех лартиччен çитсе ўк...

— Аннем, эс нимĕн те çимерĕн-çке.

Тарье кинемей мăкăл та чĕнмерĕ.

Йынккана пăчă пулса кайрĕ. Пăтаран кĕске кĕрĕкне илсе тăхăнчĕ те вăл, нимĕн каламасăрах, картишне тухрĕ. Қартишĕнчен, калинкке алăкне аран-аран уçса, урама.

Юр тăкăнать. Пар! та пар! пыра-пыра çапăнать Йынккана тăман çĕклемĕ, питне уçăлтарса пыра-пыра çапăнать. Урама тухсан Йынкка тăвалла, Мотьăсен еннелле, утма тăчĕ, унтан, тăкăрлăкалла варт пăрăнса кĕчĕ те масаралла—ашшĕн, Қалистратăн, юр хупласах хума ĕлкĕреймен вилтăпри патне васкарĕ. Шутсăр сывăххи те çирĕппи, хăйне Қалистратпа сыхса-пĕрлештерсе, ăна малалла пурăнма хавхалантараканни, тĕрек параканни пур пек туйăнчĕ ăна халь çавăнта. Çав туйăм Йынккана уçăлтарса та вĕчĕлтеттерсе унта йыхăрчĕ...

Кунтан, ял хĕрринчен, Надюшсен ялне çитме виçĕ çухрăм. Қайĕ-и унта Йынкка кĕçĕр, каймĕ-и, юр хўсех лартиччен арăмĕ патне çитсе ўкме талпăнĕ-и, çакна халь хăй те шарт татса калама пултараймарĕ вăл. Пĕр япалана анчах тĕсерĕ арçын, ку самантра —

унăн часрах масар çине, Қалистрат вилтăпри умне çитмелле. Апла пулин те, арăмне асне тунă-туманах ăна нихçанхилле мар ăшă-ăшă та савăк пулса кайрĕ...

Тарье кинемей, ывăлĕ хыççăн алăк хупăнсан, хырăмĕ выçнă пеккĕн, кашăкпа пулă шӳрпи сыпма тăчĕ. Сыпам-сыпам тенĕ кашăкĕ унăн, çăварĕ патнех илсе пынăскер, ланк усăнчĕ те, тăкăнса кайса, урайне кăпăлт тухса ӳкрĕ. Сывлам-сывлам тенĕ кĕлетки те, сасартăк туртăна-туртăна илсе, лăш пулса выртрĕ, сулахай алли, чей стаканне тӳнтерсе ярса, çĕрелле усăнса анчĕ...

Шăрчăк анчах, нимĕн те ăнланмасăр, пĕр вĕçĕм чăрлатрĕ те чăрлатрĕ...

Тулта кутсăр-пуççăр çил-тăман алхасрĕ, этем çӳрес çул-йĕре шăлчĕ те шăлчĕ...

*1974*





# çупкă

Музыкантсем арăш-пирĕш калакан кĕвĕ ахаль те пĕччен пĕр кĕленчене яхăн ӳпĕнтернĕ Бориса ывăнтарнăçемĕн ывăнтарса пычĕ. Ресторанри тĕтĕм-сĕрĕмлĕ, лăпланма пĕлмен шăв-шав ăна лĕклентерсех çитерчĕ. «Тула, ирĕке!»— çăлăнăçлăн янăрарĕ унăн ĕмĕчĕ. Халсăрланнă куçĕсемпе каччă официанткăна шырарĕ. Тапранми тăват-пилĕк сехет ларса эрех ăшне кĕрсе ӳкнĕскерĕн, çакăн пек тирпейсĕрлĕхшĕн хăйне айăпласси те, юлнă çынлăхне пухса чиперленесси те пĕтсе пыра пуçланă ĕнтĕ. Çапах та Борис хăйĕн ăспуçĕ шухăш шухăшламалла марах арпашăнса кайманнине картма ăнкарчĕ-ха.

Черкке янравӗ, ӳсӗрсен йӑславӗ... Йӗкӗт, хӑй мӗн сӑлтавпа пуҫ ҫӗклесе тӑрнаккайланса ларнине манса, ушкӑнран ушкӑна, ресторанӑн пӗр кӗтессинчен тепӗр кӗтессине куҫ вӑйратрӗ. Кунта чӑтлӑхри майлах: тем тӗрлӗ этеме те асӑрхатӑн: сылтӑм аллине хӗр ҫурӑмӗ хыҫне вырттарса пӳрнисене вӗчӗлтеттерсе курнӑҫланакан арҫынна та, кӑркка пек хӗремесленсе пакӑльтетекен сӳтӗке те, теме пула шухӑша кайса шӑпӑртланнӑ чӗмсӗре те, сӑра умӗнче килти евӗр шӑкӑл-шӑкӑл пуплекен ҫамрӑк мӑшӑра та. Хӗрлӗ стена ҫине ӳкерсе хунӑ чӑмса-ярӑнса ҫӳрекен хӗрпе каччӑ кӗлеткийӗсем тӗлне ҫитсен, Борис куҫӗсем чарӑлса, урӑлса кайрӗҫ. Борис ӳкерчӗк айӗнчи сӗтел хушшинче никама та мар, ӑна — Клавӑна курчӗ. Кӗтмен хӗпӗртӳ, шанӑҫ вӑйкӑнса хӑпарчӗ йӗкӗт кӑкӑрӗнче. Йӗкӗт ӗнтӗ, май ӑнӑҫлӑ килсе тухнишӗн кӑсӑкланса, ларнӑ ҫӗртен ҫӗкленме те пикеннӗччӗ, анчах та ҫак вӑхӑтра Клава ҫумне тапчам хул-ҫурӑмлӑ ҫамрӑк ҫын пырса ларни ӑна каялла, хӑй вырӑнне, лӑпчӑнтарчӗ. «Курӑннинчен курӑнманни, эппин. Тен, ку ӑслӑрах та...»—ӑнманлӑхне тӳрре кӑларма ҫырлахам пек турӗ Борис.

Официанткӑна мӗн тӳлемеллине тӳлесе ячӗ пулин те, вӑл тухса кайма васкамарӗ-ха. Тухса кайма ӑна васкатмарӗҫ те, мӗншӗн тесен, вӑхӑтне час-часах ресторанра ирттерекенскере, кунта ӗҫлекенсем пурте палласа ҫитнӗ ӗнтӗ, ҫавӑнпа ун пирки пустуй сӑмахюмах туса чӑрманмаҫҫӗ те.

«Пурнӑҫ тӗлӗнӳлӗхпе тулӑх,— килсе тухнӑ ӗҫпуҫа яланхи йӑлипе шӗкӗлчеме пӑхрӗ каччӑ.— Ҫав кӗтесрех, ҫав сӗтел хушшинех вырнаҫнӑччӗ эпир те. Унтанпа... Унтанпа — камшӑн мӗнле — маншӑн ҫулталӑк кӑна мар, ик ӗмӗр иртнӗн туйӑнать. Эрех те сыпкаланӑччӗ эпир. Клава, халиччен тумлам та ҫӑвара ярса курман тесе ӳкӗтлеттерсе тӑнӑччӗ пулин те, икӗ черкке ӗҫнӗ-ӗҫнӗччех. Ҫӗр грама яхӑнччӗ-и ҫав?.. Ялта чухне эпӗ ӑна палламан тесен те юрать. Паллама паллану та-ха, ун чух вӑл сӗм-сӗмекке кӑна пулнӑ, сӑмсине шӑлма ҫеҫ вӗреннӗ. Эп, ак, часах вӑтӑра ҫитсе перӗнетӗп. Клава, мӗн каласси, симӗс калча-ха — ҫирӗмре... Тивӗҫлӗ-ши эпӗ юрату телейне? Чӑлах чунлӑ тӑрса юлмарӑм-ши? Тен, Клавӑпа ҫав ҫамрӑк ҫын ҫеҫ савӑнӑҫа тивӗҫлӗ? Ахӑртнех, вӗсем хӑйсене телейлӗ тесе шутлаҫҫӗ пулас... Ҫук, ҫук, мӗн анрашатӑп-ха эпӗ,

кам вăл, мĕнле çын çав арçын, нимĕн те пĕлместĕп-çке. Пĕр шутласан, çав çамрăк çын нивушлĕ Клавăн хĕрлĕхне вăрлама ўркенсе тăрĕ? Пурнăçра çапла: пĕри тепĕрин телейне маларах вăрлама тăрăшать. Ку хутĕнче, акă, ку хутĕнче мана хама ухмаха тăратса хăварчĕç иккен-ха... Çапах та эп — ўсĕр. Ыран ирхи сменăна ĕçе каяс пулать, канмалла...»

Пĕлет Борис: унăн чун-чĕринче ку таранччен упраннă темĕнле хаклă, хăйне халиччен питĕ кирлĕ пулнă хĕлĕх татăлса кайнă. Çав хĕлĕхпе миçе çул пĕртăван пек пурăннă хыççăн лешĕ, пантлатса кайса, хуçине пĕчченлĕхе тăратса хăварни ăна хăратать те, тарăхтарать те, тепĕр чух хĕпĕртў иккĕленĕвĕ те илсе килет. Борис ку тапхăрта хăйне тарăн çырма хĕрне пырса тăратнă суккăр пек туять, ури айĕнче — чуна çўçентерекен пушлăх, ярса пусма — шиклĕ...

Клавăпа тапчам хул-çурăмлă çамрăк, тăрса, алăк патнелле утрĕç. Борис та, вĕсен тĕлне пулмасăр, хыççăнах вестибюле иртрĕ, тăхтарахпа, шăв-шавран аран-аранах хăтăлма вăй çитернишĕн савăкланса урама тухрĕ.

Бензин çунăкĕпе тата çăра тусанпа лўштĕркенĕ хула, ресторан сывлăшĕпе танлаштарсан, чăн-чăн ырлăх: сулхăн ўкме пуçланă сĕмлĕх, пăчăх кăмăла сирĕлтерсе, чĕрĕ варкăш кĕртет. Борис, хĕрпе качча куçран вĕçертмесĕр, тăвалла хăпарчĕ. Хăй ăçталла утнине питĕ аван чухлать вăл, анчах та вĕсем хыççăн мĕн тума сĕтĕрĕнсе пынине чухласа пĕтерейместь. Малта, вунă-вунпилĕк утăмра, палăрса пыракан Клава кĕлетки ăна çулăмсăр çунтарать, ярса пусмассерен вутта пăрахать. Хĕр, пулăшу ыйтса, кăшкăрас пулсассăн, пĕр тăхтаса тăмасăр унта чупса çитсе, тапчам хул-çурăмлă çамрăка çапса ўкернĕ пулĕччĕ вăл, шăмми-шаккине ватса, сăмах чĕнми тăвиччен хĕнĕччĕ, ăна çын тĕсĕ кайиччен ислетĕччĕ, хăйне асапланса çўреме тивнишĕн тавăрмаллипех тавăрĕччĕ. Кўтсе килнĕ чун хуйăхĕпе вара, пуçне Клава кăкăрĕ çине пытарса, ачалла ĕсĕклĕччĕ, суеçĕ куççулĕсĕр, таврăннă телейĕшĕн хўхлесе, йĕрĕччĕ. Анчах та хĕрпе каччă çаплипех шăкăлтатса утрĕç. Вĕсен вăхăтран-вăхăта кăлтăртатса каякан кулли çĕрлехи урама пушшех те илем кĕртсе пычĕ. Пединститут общежитийĕн картишне пăрăнса кĕрсен, Борис хўтлĕхе юлчĕ, мĕншĕн тесен

лешсем те общежити алăкĕ умне çитсе, чарăнса тăнăччĕ ĕнтĕ.

Пурнăçра пĕрремĕш хут хăйне çупкă тыттарса янăн туять Борис. Çавнашкал мĕскĕнлĕхе кĕрсе ӳкессе хăçан та пулин шухăшланă-и вăл? Ĕмĕрне те. Шухăшлама кăна мар, асне те илмен. Вунçиччĕре чухнех арлăх туйăмне кăмăл еккисĕр пĕлсе курнăскерĕн, пур чухне те хĕрлĕхе йӳнĕ хакпа тутанма пултарасса çирĕп ĕненсе лартнăччĕ. Тĕл пулкалатчĕç ун тĕлне çирĕпреххисем те, çапах та çĕнтерӳсĕр каялла таврăнманччĕ-ха вăл нихăшин патĕнчен те. Суя ăнăçăва пула çемье телейĕ те илĕртместчĕ ăна. Мĕн тума çемье? Хăйне ултала ма-и? Хăйне улталамасан та, арăмне пурпĕрех улталĕ. Тепĕр тесен пĕччен пурнăç савăкрах пулма кирлĕ. Никампа та çулăмланаймастăн, пурте пĕрешкелех, пиçсе çитнĕ-тĕк — çырлана камăн та пулин татмаллах. Арлăх туйăмне Борис ялти Хăрахкас кĕтессинче пĕчĕк хĕрĕпе пурăнакан япшар Аннапа туйса курнăччĕ.

Вăл пĕрре çапла, каç пулттипе, пулăран таврăнатчĕ те (шыв хĕрринче вăлтапа ларма юрататьчĕ йĕкĕт), Аннасен тĕлĕпе иртнĕ чухне, хĕрарăм ăна чарса тăрсах («ай-уй, пуллисем епле чипер, яшка тути те тухать-и вара вĕсенчен?..»), хăй патне çавăтса кĕрсех калаçтарнăччĕ. Апат çакса ярсах кăптăрмăшланнăччĕ вĕсем. Эрех те ĕçнĕччĕ...

Қлавăна тĕл пуличчен пурте кивĕ йĕрпех чупатчĕ, пуçĕ тăрринче яланхиллех тăп-тăрăччĕ, савăкчĕ Борисшăн. Қлавăн кĕтмен çĕртен вăркăнса кĕнĕ тасалăхĕ, çирĕплĕхĕ унăн чылай çулсем хушши пухăнсачăмаккаланса ларма пуçланă мăнаçлăхне хура çĕлене таптаса лапчăтнă пек таптаса каçса кайрĕ.

Борис телейне, Қлавăпа тапчам хул-çурăмлă каччă ыталанмасăрах уйрăлчĕç, алă çеç пачĕç. Ку ăна кăштах лăплантарчĕ. Қлавăна ют арçын ытамĕнче самантлăха курасси те унăн ахаль те кĕвĕç кăмăлне татах та вĕрилентерсе янă пулĕччĕ. «Çапах та ку ача манран ăслăрах пулас,— мухмăр енне сулăннă шухăшĕсене малалла сĕтĕрчĕ Борис.— Пăх-ха эсĕ ăна, çуламан пăру, хĕре ыталама пĕлмест. Тен, пуçласа паллашнăскер кăна-ха? Ку, пĕр те пĕр тесен, япăхах та мар, мана ал май. Нивушлĕ вара эпĕ çакланмаллипех çаклантăм? Халиччен хама нихăш хĕршĕн те виçĕ пуслăх çунтарманнине, Қлавăшăн çапла асапланатăп-и-ха?

Чир мар-ши ку ман? Ват хусах чирě? Ватă качча юлса пынăçемěн çамрăк хěрсене кăмăллас чир, э? Тен, чăнахах та юрату текен туйăм манра? Вара мěн?» Çак ыйту патне пыра-пыра тухсанах йěкěт хăйне нимле мар туйса илет. Пŷрнě япала патне çитсе тухнăнах пулса каять ăна. Анчах, пŷрнипе çěнсе илмелли хушшинче çав тери пысăк пушлăх пуррине курсан, çěклес-çěклес çуначěсене те лăштăрах усăнтарать. Ку туйăм тěп-тěрěс хăçан çуралнине те каласа параймасть вăл. Ăна темле вăй кашни кунах варкăш сасăпа малалла йыхăрать пек, таса мар хупăна сŷсе пăрахма хистет пек. Тěл-тěл унăн çак туйăма парăнас та килет, пěтěм иртнине манса, çав туйăмра çухалса каясси килет, анчах темскер вěçěмех ура хурса такăнтарса пыраканни тупăнсах пырать-ха уншăн. Мěскер-ши ку? Çакна Борис хăй те тěплěн ăнлантарса параймасть...

Çěрлехи сулхăн сěрме купăс сасси евěр кăмăла лăпкать, ăспуçа уçăлтарать. Борисăн, чылай вăхăт хускалмасăр тăнăран-и, урисем те сăрăлтата пуçларěç. Каччă, хŷтлěхрен тухса, урисене хуçкаласа илкелерě те хваттерě еннелле сěнкěлтетрě. «Тур канашěпе виççě теççě, эпир вара унпа шăп та лăп тăваттă тěл пулнă»,—Клава таврах хěвěшсе çŷрерě йěкěтěн хěв шухăшě. Борисăн ку шухăша хăйěнчен хăваласа ярасси те килмерě. Пачах урăхла, унпа ăшăнса, ачалла киленěçленсе çеç пычě: «Клавăна эпě пуçласа троллейбусра курсаттăм. Хěр кинона вăскатчě, эпě — ěçе, завода. Пěр ялсем-çке-ха эпир — сăмах çине сăмах, ялйышсем пирки перкелешŷ,— паллана çынпа тупăнать вăл калаçмалли. Эпě вара ыран курнăçасси пирки те çиййěнчех систерсе хутăм... Ăçта? Театра йыхăр-тăм. Унта шăпах «Энěш хěрринче» комедие кăтартатчěç. Интереслě тесе калаçкаланисене илткеленěччě те, хěрпе каясси юравлă та пулса тухрě. Клава хирěçлемерě. Тепěр кунне, спектакль курса тухнă хыççăн, ăсатса ятăм ăна. Калаçăвě те унăн мěнешкел айванччě. Пурнăçа темле ěненсе, çутă ěмěтлěн пуплерě вăл. Мана, паллах, хěре итлесе пыма питех те кулăшлаччě. Çěрěпех çŷренě çав каçхине иккěн. Атăл хěрне çитсе тухнă. Кунти скверта вара ăна тытнă та чуптунă. Пирěн хушăмăрти калаçу вара татах та çывăхланчě. Ěçсем çавнашкал хăварт аталанса пынишěн эпě кăсăклантăм çеç. Атăл хумěсем ыйăх витěр канăçлăн

шĕпĕлтетрĕç. Эпĕ хама çĕнтерӳçĕ вырăнне хурса, Клавăна кăкăр умне туртса иле-иле чăмăртарăм, лĕпĕш пек тутинчен чуптусах тăтăм, çак ăшă кукăль пек хĕр часах ытама кĕрсе ӳкессе çирĕппĕн шанса, аллăмсене унăн пилĕкĕ çинчех вырттартăм. Мĕнешкел хаваслăхпа, мĕнешкел çамрăклăхпа çиçрĕç çавăн чух Клава куçĕсем. Манăн туйăмсем вĕриленсе çитнĕпе пĕрехчĕ ĕнтĕ, çапах та, сыпкăм эрехсĕр хĕр хĕвне çылăх вăрлама кĕрсе кайма хăюлăх çитерсех пĕтерейменнипе, ку хапсăнчăк шухăша каяраха хăвартăм. Виççĕмĕш кунне калех Атăл хĕррине килсе тухнă. Унта тухиччен ресторанта лартăмăр. Эп, хăюлăх валли тесе, самаях ӳпĕнтеркелерĕм, кӳршĕм те, хистевшĕн ĕçсе, чиперех çепĕçленнĕччĕ. Атăл хумĕсем çĕркаçхи майлах канăçлăн шĕпĕлтетрĕç. Эпĕ пĕрре те лăпкă марччĕ. Клавăн такам та ăмсанмалла, тапсан мечĕкле вăркăнса каймалла пиçĕ кĕлеткийĕ манра çăткăнлăх вăратрĕ. Чĕлхем вĕçĕнчен халиччен пĕрре кăна мар каласа курнă япшар сăмахсем хĕр пуçĕ çине тăкăнма пуçларĕç. Клавăна ыталаса тытрăм, çӳçĕнчен тĕкĕнтĕм, çӳçĕнчен шăлтăм. Вăл çаплипех ман сăмаххăмсене ĕненчĕ, ытамăмран вĕçерĕнме тавçăрмарĕ те. Ăна нихçанхилле мар питĕ ырă-ырă пулнă пулмалла та — вăл, лĕштĕрех кайса, куçĕсене хупнăччĕ. Эпĕ хĕре çирĕпрен те çирĕпрех çумма пăчăртарăм, пӳрнесене ирĕке ятăм. Клава, шарт сиксе, куçĕсене уçрĕ. Куçĕсенче — кĕтмен хурлăх, хаярлăх, курайманлăх. Хăй танатана çакланнине сасартăках ăнкарса илнĕскер, вăл чĕнмесĕр хирĕçлерĕ, мана сирсе ярасшăн хăтланчĕ... Пĕлместĕп, мĕнле килсе тухрĕ ку, анчах та эпĕ, хам кĕтмен çĕртен хĕртен сирĕлтĕм те усал та, ырă та чĕнмесĕр, пăрахса утрăм. Ăхăртнех çынлăх туйăмĕ мĕлтлетсе иртнĕ пулмалла манра. Кайран, Клавăпа темĕн чухлĕ курнăçас тесен те, курнăçса пулмарĕ. Курасса ăна тепĕр виçĕ уйăхран тин куртăм, каллех троллейбусра. Эп ӳкĕнӳ сăмахĕсем калама тапратрăм, каçарма ыйтрăм, тĕл пуласси пирки сăмахларăм. Анчах нимĕн те ыйтса илеймерĕм. Хăй хыççăн çӳреме кирлĕ маррине çеç хытă систерчĕ вăл мана.»

...Борис, хваттерне çитсе вырăнĕ ăшне кĕрсе выртсан та, Клавăпах арпашрĕ. Мĕн чухлĕ манма тăрăшрĕ пулĕ вăл хĕре — манаймарĕ. Хĕр каччă чĕрине йĕп пек тирĕнсе кĕрсе вырнаçрĕ. Борисăн уншăн çунакан тун-

сăхĕ сÿнме мар, амалансах пычĕ. Арçын тунсăхĕ хĕре асамлатнăçемĕн асамлатрĕ. Чунĕ кÿтсе çитнĕ вăхăтсенче йĕкĕте ресторан шăв-шавĕ пулăшрĕ. Çук, халь вăл пĕлтĕрхи çын мар, чылай урăхланнă. Клавăна тин хăй патне тавăрма çуккине те ăнланать Борис, апла пулин те чунĕ çакна ĕненсе пĕтерейместчĕ-çке. Ĕненĕччĕ — ĕненсен пурнăçĕ пĕр тĕревсĕр, пĕр шанчăксăр тăрса юласран шикленет.

...Тепĕр икĕ уйăхран, отпуск вăхăтне ирттерме тесе, Борис тăван ялне тухса кайрĕ. Атăл леш айккинчи пляж та, кану çуртĕнчи ĕçсĕрлĕх те кăчăк туртмарĕ ăна кăçал. Унăн, хула шавĕнчен хăтăлса, ял шăплăхĕнче хăйпе хăй юласси килчĕ.

Борис çитсен иккĕмĕш кунне яла Клавăсем килнĕ текен хыпар сарăлчĕ. Клава, имĕш, качча тухать, пулас упăшкисем патне кайиччен хĕрĕн пĕлĕш-тăванĕсене туя чĕнмелле, кунта кĕрсе тухма шутланă иккен вĕсем. Упăшки пуласси пысăка вĕреннĕскер тет-мĕн — инженер, укçаллă вырăнта ĕçлет. Ял çăварĕ Клавăна та ÿпкелем пекки тукаларĕ: «Ырă-сывă çитĕннĕ «тынашкана» кирек-хăçан та туянас текен тупăннă пулĕччĕ те-ха», тесе калаçкаларĕç, «хĕр ĕмĕрĕ иккĕ килмест — выляса-кулса çÿремеллеччĕ — ма васканăши?» — текелерĕç.

Клава качча тухать тени Бориса тăнлавĕнчен юри пуртă тăршипе пырса çапнă пекех пулчĕ. Пĕлтерессе ăна ку хыпара кÿршĕ арăмĕ пĕлтерчĕ, сăмах майăн. Клава хăйĕн çеç пулассине чĕри тĕпĕнче ĕненсе пурăнатчĕ йĕкĕт, çакна усăмлăнах шухăшлама хăймастчĕ пулин те, ĕненсе тăратчĕ. Пĕр çу, ик çу иртĕччĕ-и — çапла пулмалла пекчĕ. Юлашки çур çул хушшинче кăра туйăмсене кару тытма вĕреннĕскерĕн, усал хыпара илтнĕ-илтменех, çакна пĕлтерекене те — кÿршĕ арăмне — тăруках çапса пăрахасси килсе кайрĕ унăн — çапла тунипе илтнĕ хыпар илемленме пултарас пекех.

Борис, ырă кăмăлпа урам курма тухнăскер, талăрса, каялла варт çаврăнчĕ те, картишĕнче ури айне пулнă витрене тапса ывăтса, алкум кĕтессинче выртакан чăх валашкине ÿпĕнтерсе ярса, çенĕк алăкне хăнлаттарса хăварса, пÿрте вашкăртса кĕчĕ. Тĕпелте шăнасемпе сĕрлекен стакана кап! илчĕ те, ăна шывпа чÿхекелесе, урай ункинчен хăмине хăпартрĕ, тĕпса-

кайне анса кайрĕ. Тепĕрçемĕн тĕпсакай хăвăлĕнчен виçĕ ăстрăм пĕль-пĕль-пĕль туни тата техĕмлĕн лĕрплеттерни илтĕнсе кайрĕ. Кăштахран, çак паллă мар инструментпа каланă пек илтĕнекен тăкăска лĕрлев лăплансан, тĕпсакай анинче çиллес сăн-питлĕ кĕлетке курăнчĕ, вăл, урай хăмине çӳлтенех кĕмсĕртеттерсе пăрахса, тулалла танкăлтатрĕ. Алăк урати урлă каçнă чух, мăрлатса ларакан кушак аçине асăрхасан, ăна пушмак вĕçĕпе тăрăнтарчĕ. Лешĕ, чуна çӳçентермелле хăрушла ихĕрсе ярса, чалт сиксе, çенĕк маччи тăрне хăпарса тарчĕ. Борис, ку сасăпа чăлханса, пĕр самант, чăнах та чĕтренсе илчĕ. Йĕкĕте чĕрине такам çивчĕ çĕçĕпе сĕрсе илнĕнех пулса кайрĕ. Çавăнпа пĕр харăсах унра шиклĕх тапса хăпарчĕ, вăйсăрлăхне туйтаракан шиклĕх. Шиклĕх хăйпе пушлăх илсе килчĕ. «Ухмаха хăварчĕç. Çаратрĕç, пĕрремĕш хут мана тăп-тăр уяр кун нимсĕр тăратса хăварчĕç... Тен, ахалех пăрахса кайрăм эпĕ çавăн чухне? Шеллев туйăмĕ пулнă-ши ку?.. Çук, эпĕ вăл мана ăнланасса шаннă пулас, ирĕксĕрлемесĕр, хăй еккипе, тулăклă... Ах, тăмпай, ах, тăмпай... Халь мĕн, хĕр вăрлас-и асаттесен йăлипе?! Ай, вăйлă çупкă тыттарса ячĕç мана»,— сăмакун хăвачĕ ейĕлтерчĕ йĕкĕте. Анчах ăна пĕр хăй кăна, урăх никам та мар, хытă çутăлтарса янине тĕсмĕртмерĕ те вăл. Тĕрĕссипе, айăплисен шутне ытларах Клавăна та мар, унăн арçыннине кĕртрĕ йĕкĕт.

Борис пӳртум пахчинчен пуçлă сухан тăпăлтарса çирĕ, унтан, кĕреçепе чавалакаласа темиçе ырхан ăман тупнă хыççăн, вăлтине йăтса, пĕве хĕррине лăпăстатрĕ.

Тĕнче ăна паçăрхинчен хитререх пек те туйăнчĕ: аншарли ăшчикне сăрăлтаттарчĕ, тăнне савăштарчĕ. Каччă умĕпе, качака путеккилле сиккелесе, кĕске çивĕтлĕ, кĕске кĕпеллĕ хĕрача вирхĕнсе иртрĕ. Борисăн ку йăр-япăша, ана çинчи çерçие пистернĕ пек, шӳтле çуйхаштарса илме те кăмăлĕ пурччĕ — ун вырăнне вăл çапла çеç мăкăртатса утрĕ: «Ĕмĕр çылăха кĕме пĕлмен чун тейĕн çав — шыв таки пек ĕрĕхтерсе çӳрет. Халлĕхе çеç çапла вĕсем. Кайран вĕсенчен Клавăсем çитĕнеççĕ, ăшçунтармăшсем пулаççĕ. Кама лекет вĕт? Пĕри тепринчен туртса илме васкать. Ав, мана та шăхăртса хăварчĕç-няк...»

Çĕр çине тăсăлса выртнă хĕвел, пахча хыçĕсемпе,

пĕвене аннă. Ĕшеннĕскер, çывăрма хатĕрленсе, тӳшекне ылтăн шывĕнчен хăпартать. Борис, çыран хĕрне майлашса ларса, ăман тирнĕ вăлтине шыва ывăтрĕ: Пĕвере самайран самая, вĕтĕ ункăсемпе мăн ункăсем шăта-шăта тухса, малтан хăвăрт, унтан сĕвĕрĕлсе пырса, тĕрлĕ еннелле ярăна-ярăна чупаççĕ. Пĕрисем сӳнсенех, теприсем чĕрĕлеççĕ — каçхи лĕппе кăмăллакан пулăсем хĕпĕртеççĕ çакна. Қанăçлăх, ăш вĕçменлĕх таврара. Пулăсен лăпкă вăййине сăнаса ларнăçем, çак сулăма туртăнмах пуçланăччĕ йĕкĕт, анчах та вăл, тĕлĕрӳллĕ кăмăлне тĕккелесе, вăлти çине куç вăйратрĕ те хулкки вĕчĕлтетсе тăнине асăрхарĕ. Сылтăм алли пĕçерсе кайрĕ унăн, пӳрнисем хыпаланса ӳкрĕç. Борис, вăлтине хăй çине ӳпĕнтерсе пырса, йĕппе çакланнă пулла кăптăрт çеç çереме кăларса пăрахрĕ. Виç-тăвата кĕрепенке те таять пулĕ — карас çакланнă. Қарас, вăйлă тăлпĕвĕпе çĕклене-çĕклене, çĕр çумне çапăнчĕ, çаврăна-çаврăна лӳчлетрĕ. Борис пулла хĕрхенсе те илчĕ. Хăй пекех туйăнса кайрĕ ăна шыври чун. Акă, темле ухмахла вăлтана çакланчĕ те мĕскĕн— тип çĕре сирпĕнсе тухрĕ. Атту пулсан, пурăнатчĕ-ха лерех ним шухăшсăр. Борис та, акă, Қлава вăлтине тирĕнчĕ. Унччен йĕкĕт асаплану, ырату мĕнне ăша та илместчĕ, тӳттӳрӳт пек пурăнатчĕ те пурăнатчĕ хывăх сăвăрса. Халĕ, ак, каччă, йăлт аптрана ӳкрĕ, хĕр ăна сисĕм те тумасть. Сисĕм тума кăна мар — мăшкăллать тата, такама-темлескерне каччă тухать. Вăл, мĕн, тункатаччĕ-им?

Борис, вăлтине тепĕр хут шыва пăрахса, çыр хĕрринче чĕмсĕрленсе ларчĕ. Ăна хирĕçех, пĕвере, тепĕр Борис ларать. Тахăшĕ лайăхрах вĕсенчен — çыр хĕрринчи-и, шыв тĕпĕнчи-и? Қăна каччă хăй те чухлаймасть. Вăл çапах та, кăмăлсăрланса, шывран пăхаканнине хӳтерсе яма хăтланчĕ: тăпра муклашки хыпашласа тупса, ăна хуллен хăй умне пăрахрĕ. Шыв ункă-ункă кăларчĕ. Пĕвери Борис, таткаланса каяс пек, хум майăн тăсăла-тăсăла сиккеленчĕ, унтан пĕчĕкленсе-пĕчĕкленсе пычĕ те пĕр Борисран икĕ Борис пулах кайрĕ. Каччă шыври мĕлкине ӳпĕнсех пăхрĕ, вара, ку тепĕр çыннăн ĕмĕлки пулнине ăнкарса, каялла çаврăнчĕ.

— Çакăнта кĕреççĕ-и-ха шыва?— ыйтрĕ кунти çыран хĕрне килсе тухнă çын. Борис ку этеме çиййĕнчех

палларĕ. Палламасăр! Ку ăна пурнăçра пĕрремĕш суран тăвакан-çке, пуçласа хур кăтартакан — Клава арçынĕ. Лешĕ, ытлашши сăмах ваклама юратманскер пулмалла та, Борис мĕн каласса кĕтмесĕрех, унран кăшт анатарах салтăнса, хĕпĕртӳллĕн шыва сикрĕ. Хĕвел пайăркисене хуçкалантарса-кăтралантарса, ырлăхлăн ишсе, чăмса çӳрерĕ вăл шывра. Арçын мар пĕвере, пĕве арçынра шыва кĕрет тейĕн.

Борис ăшĕнче хаярлăх ӳснĕçемĕн ӳссе, йӳçсе пычĕ. Унăн шыври этеме мĕнле те пулин тарăхтарасси, ыраттарасси килчĕ. Кăмăл-туйăмĕ йӳçрĕ каччăн: «Тен, путарас, шывпа чыхăнтарас!» Анчах та вăл ку шухăш хăй еккипе килĕшсе тăманнине тӳрех сиссе илчĕ те ăна пăрахăçларĕ. «Темрен тем сиксе тухас пур, шыв тĕпне иксĕмĕртен тахăшĕн анса каймалла килсе тухĕ-ха тата? Хăратса илсен, ăт — пăсмастчĕ. Мĕскĕнĕнне куççульне çеç курасчĕ...» — хăравçăллăн тарăхса, йăшăлтатса ларчĕ йĕкĕт. Хăй çак самантрах, кĕтменçĕртен çил пуçланнишĕн хĕпĕртесе, çиçкĕнсе илчĕ. Леш йĕкĕт пĕвен тепĕр вĕçĕнчех ишсе çӳретчĕ ĕнтĕ. Борис, çавăнпа усă курса, унăн çыран хĕрринчех выртакан кĕпи-тумтирне шывалла тĕксе-тĕксе пычĕ, хăй вара, хăтарма чупса çитнĕ пĕрремĕш çын пек: — «Эй, кĕпӳ-йĕмӳ шыва кайрĕ», тесе янраттарса кăшкăрса тăчĕ. Кăшкăрнине илтрĕ пулас та каччă, васкасах каялла çаврăнчĕ. Борис, чăнах та, ырă тăвас çынла, лешин тумне çăлма хыпаланнăн, аякран асăрхамалла мар, тапчам арçыннăн кĕпи-йĕмне шыва путара-путара кăларчĕ.

Çил, те çумăра систерсе, вăйланнăçемĕн вăйланчĕ. Тӳпе анинче çутă сĕмĕ хухса-хухса пычĕ. Хĕвел те пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн, ку тăрăхра паянлăха ĕçне пĕтерсе, килне ăсанчĕ.

Клава упăшки (кам пултăр тата — упăшки пулмасăр!) шăл шурри те кăтартмарĕ. Те чухларĕ, те чухламарĕ вăл çакна хăйĕнчен кулса тунине — кĕпи-йĕмне пăрса типĕткелерĕ те, тепĕр иккĕ чăмкаласа тухнă хыççăн, тумланса, Бориса ни тав тумасăр, ни ятламасăр — ялалла утрĕ. Борис та, хăрах пуллипе вăлтине йăтса, килне янкăлтатрĕ.

Такам такама çĕнтерчĕ халь, такам такамран кулчĕ, йĕкĕлтерĕ? Борис çакăн пирки пуçне чылай ваткаласа пычĕ пулин те, ним те тупсăмне тупаймасăр, пӳрте

кĕрсе карасне чĕресе чăмтарса хăварса, аслăк тăрринчи кив улăм çине хăпарса выртрĕ. Пурнăçĕ пирки вăл нумайччен шухăшлакаласа выртрĕ, шухăш çемми май вара ыраш улăмĕн хытă пĕрчине çырта-çырта вакларĕ, Клавăран аяккарах тарас тесе, хăй тахçан çӳренĕ хĕрсен сăнĕсене куçĕ умне килтерсе-килтерсе пăхрĕ, пĕр вĕтĕрккине ыталамах тăчĕ — ыталамарĕ, çакă килпетлех курăнманнипе ăна хăех тĕртсе ячĕ. Вĕлтĕрккийĕ, ним пулманла, хирĕç килекен тепĕр арçынран кĕлентĕрленчĕ те, чанкăлтатса, çухалчĕ. Борис хăяккăн та, ӳпне те, месерле те выртса пăхрĕ, аслăк шăршипе тăнăçланчĕ — пурпĕрех каччăн ăшĕ çунни иртсе каймарĕ. Унăн куçĕ умне пĕрехмай Клава тухатуха тăчĕ. Клава Клава та мар ĕнтĕ тек — пирĕшти, алă тăсса, чикмекпе хăпарса çитейми инçетлĕх. Тем парĕччĕ йĕкĕт хĕр ун патне каялла таврăнма кăмăл тăвас пулсан! Вăл тарçи пулĕччĕ унăн. Клавăна ĕмĕрне пĕр сивĕ сăмах каламĕччĕ, турилкке çинче йăтса çӳрĕччĕ... Çук, Борисра темскер халиччен тĕрĕс-тĕкелех пурăннăскерех, таврăнмиех çухалнă, йăмнă. Кампа тупĕ ĕнтĕ вăл ăна урăх, Клавăсăр? Кампа?..

Кӳршĕ йытти, тем çăмăлпа, лĕрлеттерсе вĕрсе ячĕ. Ун сасси лăпкă урама кĕтмен-çĕртен вĕтĕ хăйăр такса янă пекех пулчĕ. Борис тек чăтса выртаймарĕ, аслăк çинчен хăвăрт анса, урама вашкăртса тухрĕ. Урисем каччa, хăй сисмесĕрех, кĕпер урлă илсе каçса, Клавăсен кассине ертсе кайрĕç.

Клавăсен пӳрчĕ хавăслă çутăпа ялтăрать. Хапха умне яш-кĕрĕм пухăннă — Клавăпа упăшкине курма пырса тулнă ĕнтĕ вĕсем. Ытларахăшĕ кунта хĕр тантăшĕсем; çенĕкелле кĕрсен тин, Борис хăй çулнелле çывхарнă хĕрипраçсене те пăт-пат асăрхарĕ.

Мĕн тума килчĕ-ха кунта Борис? Тем тума. Çакна йĕкĕт хăй те чухласах çитереймерĕ. Пӳртре, купăс кĕвви майăн, тăрăшсах чăваш ташшине тĕвеççĕ. Алкумĕнче, курма килнисене, иккĕн тан сăра-эрехпе сăйласа çӳреççĕ. Йăли çапла. Борис ял каччисемпе хĕрĕсене куç ывăтса çаврăнчĕ те кĕтесре паçăрхи кĕске çивĕтлĕ хĕрачана курах кайрĕ. Хĕрачи текех ташлакансене тĕсеме вĕткеленет — пĕрре аслисен хушшинче тĕрткеленсе çӳрет, тепре, тăп хытса, хăй ăссăн ăсласа тăрать. «Эй ку ухмантее, ма хӳтерсе ямаççĕ ара? Тути çинче амăш сĕчĕ типмен, çĕр хута туй-çуй таврашне янкăл-

татнă, элле вăйăçа тухасшăн-и, купăс çеммине ытла та хытă тăнлать,— йĕкĕлтесерех пăхкаларĕ кĕске çивĕте Борис.— Кускер япшар Анна сăнлах. Çавăн вĕлтĕрен кайăкĕ пулмарĕ-и ку?»

Борис сĕннĕ икĕ стакана лашт пушатса пачĕ, çавăн хыççăн пуçĕ те самаях хĕрчĕ, шăмшакĕ çăмăлланчĕ. Ташлакансем çине те вăл халь кăçалхи юр çине пăхнă пек мар, вĕсене çук вырăнне хурсарах пăхрĕ. «Хĕр параççĕ,— вĕчĕхрĕ йĕкĕт,— Икĕпитленни-ши ĕнтĕ ку? Çав хĕрĕнкĕ йышшăн хĕре кирек кама качча парсан та пĕр мар-и? Урай хăмине кисрентерсе сиксе пултăр вĕсене. Клава арçынĕ вырăнĕнче эп пулас пулсан та çакнашкал хаваспах тĕпĕртететчĕç вĕсем... Анчах та эпĕ — ухмах. Тĕрĕссипе мĕн тĕлĕнмелли — хăшĕн тивĕçĕ хĕр умĕнче çӳлерех — хĕрĕ çавăн. Кăна эп ахалех пĕлмелле...»

Пӳртри халăх ташласа ывăнсан, алкумĕнчисене пĕр-ик çавра сиксе пама йыхăрчĕç. Кăруççел евĕрех туйăнса кайрĕ Бориса кунти пăтрану. Ку пăтранура вăл хăйне мăшкăлтăкри çӳп-çап пек, килсĕр ют пек туйрĕ. Каччă пĕрехмай хăйне çак арпашуран пистерме, пăрахса утма хистерĕ, тарăхрĕ, халь тин çакна чĕптĕм те улăштарма çуккине виçсе илсе, талăрса тăчĕ. Туйăмĕсем пĕртте итлемерĕç ăна. Ташша чĕнсен Борис, пĕррех урай варне вăркăнса тухрĕ те, аçа-çиçĕмĕн тăпăртатса, пуçне уха-уха, чăваш кĕввипе вĕриленчĕ. Борис ташланине ăнсăртран татăлса аннă пăрлă çумăрпа танлаштарма юравлă. Ăна никам та кĕтмест, çавăнпа та вăл кĕтменлĕхпе хăратса ӳкерет, шăнтса ярать, хăй çине пурне те çаврăнтарса пăхтарать. Персе амантнă пăшилле мăнкăмăллăн та ăшша пиçсе тăрăшрĕ хусах. Никама та асăрхамарĕ вăл, чăваш ташшине тӳрĕ те тӳрĕ. Сĕтел çинчи черккесем каçса кайса чанкăртатрĕç, витрери сăра тăкăнасла чӳхенчĕ.

Чĕнмен хăна кунта килсе çил кăларса ташлани пирки мĕн шухăшларĕ-ши Клава? Сăпайлăн çеç сăра ĕçтерсе çӳрекенскерĕн лăпкă хусканăвĕсем никама та нимĕн те евитлемерĕç. Икĕ этем хушшинче пĕлтĕрсем пулса иртнĕ пĕчĕк трагеди, пĕринче тахçанах ӳт илсе, теприне, акă, юлашки вăйĕпе ашкăрнине хĕр туххăм та палăртмарĕ — пухăннă хăнасемпе шăкăл-шăкăл юмахне ыррăн çеç чуптарчĕ...

...Вӗсем ӗнтӗ паҫӑрах пӳрт ҫумне тӗртсе тунӑ пӗчӗк кӗлете кӗрсе ҫухалчӗҫ. Вӑхӑтран вӑхӑт шалтан сисӗнчӗклех илтӗне-илтӗне каякан сас-чӳ ҫын пахчинче йӑпшӑнса тӑнлакан Бориса саламатпа ҫунтарнӑ пекех вӗтелерӗ. Шалта вӗҫӗмех тем мӑкӑртатрӗҫ, пичеври ӗрӗхӳллӗ лашана лӑплантарса пынӑ евӗр туйӑнакан тытӑнчӑклӑ ахӑлтату ҫӗрлехи урама сӑрхӑна-сӑрхӑна тухрӗ — каярахпа ҫакӑ та пӗтӗмпех йӑмрӗ. Борис умӗнче виҫесӗр анлӑшӗпе тӗлӗнтерекен ҫӑлтӑрлӑ тӳпе анчах тӑрса юлчӗ. Ҫаччӑ хӑйне ҫак шӑплӑхра лутраланнӑҫемӗн лутраланса, пӗчӗкленнӗҫемӗн-пӗчӗкленсе пычӗ. Лутра акаци тӗмисем те халь ӑна хӑйӗнчен темӗн чул пысӑкраххӑн курӑнчӗҫ. Сывлӑшне пусарса, темӗнччен тӑнласа тӑчӗ вӑл — шалтан урӑх пӗр сас-чӳ те йӑлӑнса илеймерӗ. Вӑл ҫӗкленме, тапранма хал ҫитереймесӗр, тӗмӗсем хӳттинче пуҫне усса, шухӑша путса ларчӗ. Йӗкӗт асне кӗтмен ҫӗртен ҫепӗҫ кулӑпа йӑл-йӑл ҫиҫсе ирӗлекен япшар Анна килсе лекрӗ. Темшӗн ӑна кӗҫӗр пӗртен-пӗр Анна кӑна, урӑх никам та мар, ӑнланассӑн, хӑйӗн ӑшӑ капӑртма пек ӑшӑ-ӑшӑ кӑмӑлӗпе хӳтлӗх кӳрессӗн, шӑп ҫавӑнта анчах ҫӑлӑнӑҫ пулассӑн туйӑнса кайрӗ. Ҫак ӑшхыпиллӗ шухӑш унӑн кӑмӑлне ӑшӑтса ярсассӑнах, Борис, ҫурхи хӗвел пайӑрки пек яшт чӗрӗлсе, самантрах аял карта урлӑ ывтӑнса каҫрӗ те пӗр ҫынсӑр урампа тӑвалла вирхӗнчӗ.

Тепӗр темиҫе самантран вӑл, Хӑрахкаса ҫитсе, ҫырма хӗрринче ларакан япшар Анна пӳрчӗн ансӑр чӳречинчен пырса шаккарӗ.

*1968.*





# эртюк

ЭЛЕКÇЕЙ ВАСИЛЬЕВА

Каç пулчĕ. Саплăк пек вăрман варрине вырнаçнă вăтăр вĕллеллĕ утар çине çуллахи сĕм анчĕ.

Утарçă пӳртне кăнтăр çутипе кĕрсе юлса анкă-минкĕленнĕ пыл хурчĕ алăкăн-тĕпелĕн тек нăйăлтатса çӳрерĕ. Нăйăлтатса çӳресен-çӳресен, вăл чӳрече хашакне пырса çапăнчĕ те тăрăхла сак çине месерле лап! кайса ӳкрĕ, тăрасла, çăмлă урисемпе сывлăшра тĕпĕлтетрĕ.

Эртюк, алăк патĕнчи путмар çинче кушел çаккин лĕнчĕр-ленчĕрĕпе аппаланса ларакanskер, пыл хуртне ывăçĕпе хупласа, тула кăларса ячĕ.

Уйăх ури, кантăкран йăпшăнса кĕрсе, урай варне лаплаттарса пусрĕ.

Эртюк кушил çаккине хăвăртрах тирпей кěртсе çитерчě, кушил ăшне виç литр кěрекен савăтпа кěрчеме тултарса лартрě, пысăк катрам пěлтěрхи пыл хучě, вара, ěнер лавккара туяннă вěр-çěнě сăрă костюмěпе шăлаварне тăхăнса, ялалла уттарчě.

Йытти, Ыйхăларě, хуçи хыççăн лěпěстетме хăтланса пăхрě — Эртюк ăна утартах юлма хăмсарчě. Лешě ун сăмахне хăлхине те чикесшěн пулмарě, çул хěррипе мăкăл-мăкăл чупрě. Итлеменнине кура, Эртюк янавара çăкăр татăкěпе улталаса тытрě те, каялла кайса, пусма картлашкинчен кăкарса хăварчě. Ыйхăларě, ерсе пыма ирěк паманшăн çěтěле-çěтěле, çук çын яшки хăпартланма евěкленнě евěр, лěкěр-лěкěр вěрсе ячě.

Пуç тăрринчех тулли уйăх çакăнса тăрать. Пўрне вěçěпе тěкěнсенех çав кăлтăрмачри сар çу çěр çине шапăр тăкăнса анассăн туйăнать. Уйăх çути, хăтлă çул урлă каçса, тěмсем айне, çулçă хушшине пытаннă. Çěрлехи вăрман шăплăхне шарт сиктере-сиктере, ўхě кас-кас чуна çўçентерсе ўхěлтетет. Ура сасси ян каять.

«Хе,— терě хăй ăшěнче Эртюк ярăнса утнă май, йытти пирки шухăшласа,— ерсе пырасшăн тата, шеремет чăмакки. Мěн тăвас тейěн, ан кўрен ěнтě, Ыйхăларăм, ан кўрен. Санпа канашламалли ěç мар-ха ку хутěнче, ырă пěлěшěм, çăмламасăм, санпа канашламалли ěç мар. Ак ěçěме ăнтарса килěп те, ун чух вара... Тепле çав, э-хе-хей...»

Ку еннелле лав кустарса килнě сасă Эртюк хăлхине пырса кěчě. Утарçă тăнн хытса тăчě. Урапа сасси кунталла мар, вăрман хěррипе кўршě ял еннелле пăрăнса унăн хăлтăрě-хăлтăрě илтěнми пуласпа тин арçын чěри лăш пулчě. Лав сасси йăмсан, вăл, хăйне çакнашкал сыхă пулма хушакан ытти сас-чў илтěнмес-и тесе, тăнлакаласа тăркаларě те, тăвăр çулпа ўсěмлěн малалла танккарě.

Кěçěр унăн никам куçне те курăнасси килмерě.

«Эй, пурнăçу-масару! Аре, çын куçěнчен пытанса çўремелле пулса тухмарě-и-ха капла,— пěр иккěленсе, пěр çуйкăнланса хыпăнчě Эртюк чěри.— Кăнтăр çутипех тумалла марччě-ши кунашкал ăшхыппи ěçе? Çěрле чěлхе-çăвар çыпăçсах пырě-ши, темěн... Этем латлă тумалла пекчě те çав, пěр шутласан, чăплă урхамах кўлсе, тус-тăвана пухса. Ак халь, вăрă пек... Э, тепěр тесен, тин мěн пуçа минретсе пымалли пур-ха. Пўлен-

кине каснӑ-ҫурнӑ. Ҫӑмакине анчах хутса ямалла. Пырап ҫав хам та ансухланса».

Хӑйне ятлам пекки тукаласан, ҫӑмӑл тӑрантас пекех ҫӑмӑлчахланса кайрӗ Эртюк. Хул-ҫурӑмне тӳрлеткелесе илчӗ, ҫӑмӑллӑн яра-яра пусрӗ.

Яла та вӑл ҫаплах кӗрлеттерсе пырса кӗчӗ. Урлӑ урам кӗтессинчи пӗр кил хапхи умне ҫитсе тӑрсан, тӑпах чарӑнчӗ. Сывлӑш ҫавӑрса ячӗ. Кӗрем тесе алӑк шашулккин кантрине туртма аллине ҫӗкленӗччӗ кӑна арҫын — кӳршӗре кӗҫӗн алӑк сасси пулчӗ те тарасаллӑ пус патне, витрисене чӑнкӑртаттарса, Пӑлаки шыв ӑсма тухрӗ.

Эртюк йывӑҫ сулхӑнне йӑпшӑнчӗ: «Хӗрарӑм чӗлхинчен турӑ сиртӗр!»

Пӑлаки кӗрсе кайсан, аялтан, правлени енчен, трактор тӑртлаттарса хӑпарчӗ. Пус патне ҫитсен темех пулчӗ-ҫке ӑна — моторӗ пӗр-икӗ хут шӑп-шап туса илчӗ те сӳнсе ларчӗ. Тракторисчӗ уншӑн вӗтеленсе ӳкмерӗ, ларкӑчӗ ҫинчен васкамасӑр анса, пусӑран шыв кӑларчӗ, ӗҫрӗ, гусеница ҫине сӗвенсе, пирус мӑкӑрлантарса ячӗ. Вара трактор ӑшчиккинче чакаланса пӑхрӗ. Лешӗ пӗр ҫур сехет пек муталансан та шарламаннине кура, тракторист аллине сулчӗ те каялла, колхоз правленийӗ еннелле уттарчӗ.

Ҫак вӑхӑтра Эртюк йывӑҫ хӳттинче ни вилӗ, ни чӗрӗ тӑчӗ. Хӑйне халь-халь пырса тытасран сехӗрленнипе намӑсланчӗ вӑл, ҫӗр хута сӗтӗрӗнсе тухнишӗн ятларӗ: «Капла пулассине пӗлнӗ пулсан, ларас-мӗн утартах кута хӗссе. Шалта тепле-ха тата. Инкек-синкекӗ хампа пӗрле чух шӑвас мар-и пӗрех хут кунтан?»

Тӳлек. Лӗп. Лавкка тӗлӗнче, хӗрсем пӗрене ҫине пӗрӗнес вырӑнта, ял ҫине ыйхӑ сапаласа, купӑс нӑриттетет. Купӑс сасси Эртюк кӑмӑлне ача сӑпкин лӑнкӑр-лӑнкӑрӗ пек канӑҫлантарчӗ. Кӗтери пӳрчӗ халӗ те ҫутӑ-ха, ҫывӑрмасть ӑшҫунтармӑш: «Кӗрес.»

Шашулккана шӑкӑр-шӑкӑр тутарчӗ Эртюк. Пӳртрен сас-чӗв илтӗнмерӗ. Хытӑрах шакӑртаттарчӗ. Килнӗ ҫын патне тухам тени ҫав-ҫавах туйӑнмарӗ-ха пӳртри ҫыннӑн. Эртюк, шашулккана шакӑртаттарнӑ май, алӑка уҫасла, хӑлӑпӗнчен тытса ланкӑртаттарса пӑхрӗ.

— Кам унта?

Эртюк ку сасса илтсен, ҫӳҫенсе илчӗ:

— Эпӗ-ха ку, Кӗтери, уҫ?

— Кам вара эсӗ?
— Эпӗ-ха ӗнтӗ, Эртюк, Утар Эртюкӗ.
— «Пылсухал-и?»
— ...Ҫавӑ.
— Мӗн ҫӗр хута ухмах сутса ҫӳретӗн ҫак эс?..
— Ухмах сутса ҫӳресси-мӗнӗ, уҫ тетӗп-ҫке?
— Те уҫмаллах сана...

Алӑк сӑлӑпӗ шӑлтӑрт! сикрӗ те Эртюк картишне кӗрсе тӑчӗ. Аялти кӗпи вӗҫҫӗнех тухнӑ Кӗтери пусма картлашкипе пӑрчкан пек вӗтӗртетсе хӑпарса кайрӗ:

— Кӗр эппин.
— Хапха алӑкне питӗрместним?
— Питӗр ху.

Алкум алӑкне те сӑлӑп ярсах питӗрсе хӑварчӗ Эртюк.

Кӗтери пӳрчӗн ӑшчикки пукане пек: ҫутӑ, типтер. Вырӑнӗсем капӑртма пек хӑпарса тӑраҫҫӗ. Тӗк пӑрахсан тӗк пашт! анса каймалла. Кӗтери хӑй, чаршав хыҫне кӗрсе чечеклӗ кӗске кӗпе тӑхӑнса тухрӗ те, ура хырӑмӗсене ҫиҫкӗнтерсе, пилӗк айлӑмӗсене пӑркалантарса, тӗпеле тухса ларчӗ, килнӗ ҫын мӗн каласса кӗтнӗн ун ҫӑварӗнчен ӑшшӑн пӑхрӗ. Эртюк сӗтел ҫине кушелти япалисене кӑларса хучӗ:

— Эп, мӗн-ха... Кучченеҫпех: кӗрчеме, пыл... Кӗтери, эс ҫав урам енчи чӳречене туртарах кар-ха — шанчӑклӑрах пултӑр. Каҫӗ те ҫутӑ та кӗҫӗр...

Кӗтери карӑ хӗррисене пӑтаран лектерсе туртӑнтарсах карӑнтарчӗ, Эртюк та сӗтел хушшине вырнаҫрӗ:

— Мӗн тени мар-и ара, килем-килем тесе тӑраттӑм та. Виҫӗмкунсемех пуҫтарӑннӑччӗ — ху таҫта кайни хупларӗ. Кӑҫта кайнӑччӗ вара эс?

— Эп-и? Виҫӗмкун тетни-ха? Виҫӗмкун эпӗ Курнавӑш пасарне кайнӑччӗ. Аннен хӗреснай хӗрӗ патӗнче ҫӗр каҫсах килмелле пулчӗ,— питне-куҫне аванлатса йӑкӑл кулса ячӗ Кӗтери.

«Пӑх-ха, шеремет чӑмакки, суять, аннӳн хӗреснай хӗрӗ мар, хурӑн тӑрри хурӑнташу та ҫук-ха унта санӑн. Аннен хӗреснай хӗрӗ, тет тата. Сенӗк аври мар-и, ак, пӗрех хут. Тӑвану! Сарӑ питлӗ каччӑ патне, Ҫитӑр Кӗркури патне йӑсӑрлантарнӑ-ха ху. Пӗлетпӗр»,— пӑнтӑх кӗвелӗк пек наймакаланчӗ Эртюк. Хӑй сӑмаха ҫавах чӗлхе май ҫавӑрчӗ:

— Çапла пулмасăр, аре, пулĕ те. Халь вăхăчĕ те пасар тăрăх çӳремеллискер кăна: утçи... Эс, Кĕтери, кăлар стаканна. Сăмахлар текелесе йĕпе япала та чиксе килнĕччĕ, ак,— кĕрчеме савăтне сĕтел варрине тĕртерех лартрĕ Эртюк.— Пĕр-ик турам çыртмалли пулсан та тиркемĕп.

— Пур-ха вăл стаканĕ те. Шыраса пăхсан, çыртмалли те тупăнĕ.

Кĕтери, тĕпел кукрине кĕрсе, икĕ стаканпа шăрттан татăкĕсем хунă турилкке тупса тухрĕ.

Ĕçрĕç. Ĕçсен, Эртюка хăюлăх кĕчĕ:

— Эх, Кĕтери, шеремет чăмакки! Ăнланмастăн эс мана. Çак куна кĕтни миçе ĕмĕр. Пĕлетни çавна?

Ăнланам-пĕлем пекки туса, Кĕтери каллех йăкăл кулчĕ.

— Ăнланан пулсан çапла тăвăн-и? Пĕтертĕн эс мана, пурнăçăма çилпе вĕçтерсе ятăн. Такам арçынни те сан хӳттӳнте çылăх тупрĕ пулĕ, эп анчах уй тăмани пек...

— Арçынсене ма кĕвĕçен, хăв ухмах. Маларах вăранмалла пулнă.

— Ара, мĕн-çке-ха... Çынран аван мар тени...

— Çынран аван мар тени... Килнĕ-ха ху çавах сĕтĕрĕнсе.

— Кĕçĕрхи вăл урăх шут... Тепрер ĕçер-ха.

Ĕçрĕç тепрер.

— Кĕçĕрхи вăл урăх шут, каларăм-çке,— икĕ стакан кĕрчемене ӳплентерсе хурсан самаях чун кĕчĕ Эртюка.— Кĕтери, тух мана качча...

Кĕтери, арçын урăх кăмăлпа килсе кĕнине ĕненсе лараканскер, тĕлĕннипе лĕпсĕр пулса кайрĕ:

— Качча?.. Сана-и?

— Качча çав, мана. Вара мĕскер?

— Тăнран тухса кайман-и эс, пылсухал?

— Кайман-ха, тăнпах.

— Асатте пулатăн вĕт эс ман.

— Аслаçу мар-ха. Тетӳ тесен раç. Аллă тăххăрпа анчах пыратăп. Ху та эсĕ манран пĕр вунă çул анчах кĕçĕн пулмалла, э?

— Вуннă мар, вунвиççĕ.

— Тата мĕн калаçмалли пур... Тухатни?

— Те тухмалла ĕнтĕ сана... Ытла вата сăнлă курăнан.

— Эс, Кĕтери, сăна ан пăх, чун ман кăçалхи пыл карасĕ пек шĕп-швеши... Мĕн-и, сан патăнта чĕлĕм туртса яма юрать-и? Пыр шăтăкĕ кĕçĕте пуçларĕ.

— Турт ара, арçын шăрши кĕтĕр...

«Арçын шăрши кĕтĕр... Пыл хурчĕсене вĕртерекен вĕркĕçпех хăваласа кăларса ямалла та-ха ку шăрша кунтан. Шăртанĕнчен те пулин арçын шăрши сăмсана çурасла перет. Меллĕ пулсан — ӳлĕм».

— Карту-хуру та юхăннă. Кĕлет кĕтесси çĕрĕшсех аннă. Пус хăвăлĕ çурри таран çĕр айне путса кĕнĕ. Пĕр-пĕр швелтрун астумасăр шыва кайса вилĕ. Тăватăмкун çапла сирĕн умпа иртсе пыраттăм та такам качаки картишне кĕрсе кайнă, хăваласа кăлартăм.

— Мĕн тума мана кил-çурт, çипуç питĕ пултăр. Хуларисене кур-ха, пурте янтă, шывĕ, газĕ, хваттерне те пулин патшалăхĕ туса парать, пурăн кăна патша майри пек саркаланса.

— Аккăнь, аплах ан кала-ха эсĕ, Кĕтери. Хула та хула майлах пулĕ-ха у, нуши-качки унта та çителĕклех-тĕр. Эс хăв уттунах ут. Çын ятламĕ.

— Чим-ха, эс, мĕн, мана ăс вĕрентме килсе ларнă темĕн? Качча тух тесе тилмĕрсе тăрать тата. Сан пеккине качча тухăн та — эс мана çĕнĕрен утма вĕрентес тейĕн. Шалишь!

— Эккей, тулхăрса кайрĕ. Эп, аре, мĕн вит-ха, лайăх тăвас, тетĕп. Çынсем пек.

— Çынсем пек... Атя, кĕрчемӳне ĕç те сирпĕн хăв çулупа, пылсухал.

— Кĕтери, Кĕтери теп те, аплах ан хăтлан-ха. Ăс вĕрентмĕп урăх, сана итлĕп.

— Тоттă çав. Пĕлес пулать ăна хăçан мĕн калаçмаллине. Пыл пек япшар пул, вара — курăнĕ.

Кĕрчемене тепĕртак чĕпĕтсе лачĕç. Эртюк хĕрчĕ:

— Эс, мана, пуклак чĕлхене, каçар-ха, ан вăрç... Итле-ха, Кĕтери, эп çавăн пиркиех-ха. Ара, çурт çавăрасси пиркиех. Эп, ав, хамăнне сутса ярса, вăрманта, утарта, пӳрт лартрăм. Пире, иксĕмĕре, вăл та çитет. Çуртне-йĕрне тирпей пит кĕртесех килмесен, чăрманасси теесрен, атя, эппин, хăвăнне сутса яр. Пурăнкалăпăр. Чăх-чĕп, хур-кăвакал та усрама пулать, кăмăл пулсан. Ерçмесен — туян. Укçине те пуçтаркаланă-ха эпĕ пăртак, аптрамастпăр.

— Пурăнкалăпăр, аптрамастпăр... Эс, мĕн, урăх

сăмах пĕлместним? Отне пĕр сăмаха кавлен. Те çурт килĕшме килнĕ эсĕ, те мана çураçма? Уçăмлăрах калаç, мĕн мемлен?

— Ара, мĕн теп-çке, çуртна сут, пĕрле пурăнар, тетĕп.

— Пĕрле пурăнар... Пĕр-ик кун мирлĕ усрăн та унтан тапса кăларса ярăн, пĕлеп эп сире, арçынсене...

— Кĕтери, апла ан калаç-ха, эп чăнласах... Эп сана ар пулса çитнĕреннех савса пурăнатăп, хăвна калама кăна хăяйман...

— Темĕн... Чавса тăршшех лартмастăн-ши?

— Çук-çке... Вунулттăраччĕ эсĕ ун чухне. Эп çирĕм тăххăрта. Ват хусах шутĕнче çӳреттĕм. Авланма васкаман. Пичче те Кĕпĕрьян хĕрне Хвеччиса илсе мĕн курса пĕтрĕ те. Арăмĕ ăна вĕлерме тăнă тесе чут-чут хуптараччĕ вĕт. Кама кирлĕ ăна вĕлерсе. Чăваш арçыннин пулать ĕнтĕ вăл çапкаласси те, çавăншăнах... Характерĕ те кăраччĕ çав пиччен, эп кăна мар. Астăватăн-и эсĕ ăна хуть?

— Манман-ха, астăватăп. Çӳллĕ те хытканскерччĕ. Эпир, ачасем, унран темрен хăранă пек хăраттăмăр.

— Ия! Çавăн чухнех тĕсесе хунăччĕ эпĕ сана. Хытса каймалла. Тепĕр-ик çул кĕтетĕп те авланса яратăп, теттĕм, сана качча илсе ĕнтĕ. Вĕчӳсем ун чухнех сан йӳçекен пичке пек тапса тăратчĕç, çитĕнсе çитнĕ хĕрарăмăнни пек, пиçсе çитессе анчах тăхтамаллаччĕ. Хыçалтан вăрттăн пăхса ăмсанса юлаттăм вара. Кăкăрусем, кăкăрусем тата!.. Хуплу пек хăпарса тăратчĕç вĕт. Çавăнтанпа чĕрене вут тиврĕ. Канăçа çĕтерртĕм. Мĕн тăван, вунулттăри хĕрпех сăмах пуçарма хăранă ĕнтĕ, иртерех тенĕ. Хамăр йăлана, чăваш йăлине пăхăннă.

Кĕтери каçхи хăнана тимлесех тăнларĕ. Эртюк калать-калать те хаш! сывласа ярать:

— Хайхи вăрçă тапранса кайрĕ. Малтан пиччене илсе кайрĕç. Унтан ман ят тухрĕ. Пичче çапăçу хирĕнче выртса юлчĕ, эпĕ, тăватă çул йĕтрепе пуля витĕр танкканă хыççăн, таврăнтăм. Тĕрĕс-тĕкелех. Çав тăватă çул хушшинче сана, Кĕтери, асăмран пĕрре те кăларман. Çитеп те — авланса яратăп, текен ĕмĕтпе пурăнаттăм. Çитрĕм те, ăçта унта авланма, ял çинче яту ырăмара тухнă-мĕн. Куран — пĕри сан çинчен таса мар калаçать, пăсăлнă хĕре тухнă-мĕн эсĕ. Ирĕксĕ-

рех чун тăвăлне пусарма тиврĕ: ялйыш сăмахĕнчен иртеймĕн... Эх, çавăн чухнех тытмалла та авланса ямалла пулнă, ниме пăхмасăр, шат та пат! Çÿремĕттĕмччĕ вара паян кун çакнашкал сĕтĕрĕнсе. Кĕтери, тухнă пулăттăн-ши эсĕ ун чухне мана качча, э?

— Пĕлместĕп. Ун чухнехине ăçтан пĕлен, миçе çул иртсе кайнă та. Ыйтса пăхнă пулсан, тен... Хĕрарăм чĕри хĕрарăм чĕриех ĕнтĕ вăл: арçын ăшшине савать.

— Ан та кала, чавса çывăх та çыртма çук, тени ман тĕле тĕрĕсех тухрĕ иккен. Утмăла çитеспе тин пуç уçăлса çитрĕ. Ĕмĕр çын сăмаххине уянипе иртсе кайрĕ, пăсăк хĕрпе çыхлансан ял çинче хăвăн питне хĕретме тивет-çке-ха, намăс!.. Чун кÿтсе килнĕ вăхăтра пĕрре çапла хама качча тухма ыйтса, сан патна пырса пăхас патнех çитнĕччĕ — ял Совет секретарьне лартрĕç. Каллех ĕмĕт пăчланчĕ. Ял Совет секретарьне ят сарнă çынпа çÿрени килĕшмест,— вырăнти çын, пуçлăх, ял куракан çын, ăна типтерлĕ çынпа мăшăрлă пулни ятуллă... Типтерлĕ мăшăрĕ тупăнмарĕ, ав, ху куран. Çапла вăхăт иртрĕ те иртрĕ, пурнăç кустăрми пĕрехмай хăй йĕрĕпе мăкăлтатрĕ. Каярахпа кладовщике лартрĕç. Каллех çын çинчи çын пулса тăтăм. Каллех авланаймарăм. Иккĕленсе пурăнни, татăклă шухăш патне пырса тухайманни хупларĕ мана... Пурнăçăн унăн хăйĕн йĕрĕлчи пур, туртмассерен ялан пĕр кĕвĕ каламасть. Кладовщикрен кĕлет хуралçине çитсе лартăм. Пĕрехмай сан пирки шухăшпа çÿренипе çÿç шурма пуçларĕ: аре, мĕн-çке-ха, хăвна ху çын эретлĕ тытса пурăнаймарăн, чараксăра кăлартăн. Эп... Çавăн чухне намăсран, çын сăмахĕнчен хăрамасăр сан патна чăннипе килсе пăхас тесе ĕмĕте меллесе те хунăччĕ — колхоз правленийĕ тепĕр ответлă ĕç шанса пачĕ: утарçа лартрĕç. Ултă çул хушшинче пилĕк вĕллерен вăтăра çитертĕм. Тепĕр çавăн чухлĕрен çĕр патнех çитерессĕн. Ĕçлесен ĕç пулать, уншăн пăшăрханмастăп-ха эпĕ, пурнăçăм сая кайни ăша çунтарать, акă мĕн, эххе-хей... Кĕтери, вара мĕнле, тухатни мана качча, э?

Эртюк ăшша пиçнĕ лаша пек паш-паш сывласа ларчĕ, Кĕтери куçĕнчен тĕмсĕлчĕ.

— Аре-е,— тăстарса ячĕ Кĕтери, паçăрхи манерлех ейкеленсе.— Качча тухасси арçынна алăк уçса кĕртесси кăна мар та-ха вăл... Ытла хăвăрт эс...

— Мĕн хăвăртти унта. Аре, пурнăçăма эпĕ санпа

сыпас тетĕп-çке, ĕмĕрлĕхех, кĕçĕре кăна мар, итле...

— Шан сире, арçынсене. Те, йăлт суйса кăтартрăнха эс. Мана, пĕччен хĕрарăма, улталама — наччас!

— Эккей, улталассипех эс. Кам улталатăр сана. Улталама терĕ. Аре, мĕн теп-çке, ик кил вырăнĕ тытасси, тетĕп. Сан хăлтăр-халтăрна сутса ярар та куçар утара, ман пата. Çĕрулми лартса тума та лаптăк пур унта. Улах вырăн. Çын куçĕнчен, çын сăмахĕнчен аякра. Ăнлан-ха эсĕ, Кĕтери, э?

Кĕтери шăлне шатăрт çыртрĕ:

— Эй, пылсухал, мĕн эсĕ пĕр вĕçĕм пĕр юрра мемлен: сут та сут! Пит сутассу килсен сут, ара, хăвăнне. Юттине ма хăпсăнан! Çын сăмаххинчен хăрама эпĕ, тепĕр тесен, нимĕнле усал ĕç те тумастăп, хам кăмăлпа анчах пурăнатăп. Ман çумра камăн мĕн ĕç пур. Ларан лапăртатса. Килĕшместĕн пулсан—тух та тасал. Сана никам та кунта çĕр хута ирĕксĕрлесе илсе килмен, ху килнĕ.

— Вăл çапли çаплах-ха...

— Тата мĕн сӳпĕлтетсе ларан...

— Ара...

— Ара, ара...

— Килĕшсен, ара, перекет кассинчен укçине те ыранах кайса илнĕ пулăттăм тетĕп-çке. Пурăннă пулăттăмăр чĕвĕлтетсе, чĕкеçсем пек.

— ..?

— Эппин, янклаттарар-ха тепрер стаканне. Эх, шутсăр паха япала-çке çав кĕрчеме тени...

Янклаттарчĕç. Кăна ĕçсе пань хыççăн Эртюк хĕрĕнкĕленсех кайрĕ. Савăкланчĕ. Кĕтери çумне пырса ларчĕ. Ăна пилĕкĕнчен ыталарĕ. Кĕтери — хирĕçлемерĕ:

— Эй, ĕнтĕ санпа...

— Эх, Кĕтери... Пур Кĕтерирен те Кĕтери çав эсĕ. Кĕтери мар эсĕ, шеремет чăмакки, пыл чĕресĕ. Ача та туса парăн-и-ха пĕрре, эх...

— Эй, санпа, сӳтĕлсех кайрĕ.

Эртюк кăмăлĕ тулнипе пĕр çавра юрă та юрласа пăхрĕ:

Хура тур лашине кӳлме пĕлес пулать,
Кӳлме пĕлес пулать анчах мар.
Кӳлме пĕлес пулать,

Тытма пӗлес пулать,
Унсӑрӑн ҫулне ҫухатан...

Кӗтери те, Эртюка пулӑшкалам пекки туса, юрра ёнерчӗ.

Савӑт тӗпне юлнӑ кӗрчемене те ӗҫсе ячӗҫ.

— Кӗтери, ара, мӗн теп те, юлам-и?

— Эй, ӗнтӗ санпа... юл ара.

Эртюк тӗпел кукринчи тӗк пек хӑпарса тӑракан чӑлт шурӑ вырӑн ҫине лаш кайса выртрӗ. Кӗтери ҫутта сӳнтерчӗ...

Кӗтерипе Эртюк тепӗр икӗ кунне утарта ирттерчӗҫ. Эртюк перекет кассинчен укҫине кайса илсе килчӗ, Кӗтерине пачӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн урӑлса курмарӗ утарҫӑ, «чун савнӑ Кӗтерине» ытараймасӑр, ӗмӗчӗ ҫитнӗшӗн хӗпӗртесе ӗҫрӗ те ӗҫрӗ.

Ыйхӑларӗ, выҫӑпа аптранӑскер, мӑйкӑчра нӑйкӑшрӗ.

Тӑваттӑмӗш талӑк ҫине кайсан — Кӗтери ҫухалчӗ. Мухмӑрпа аптраса выртакан Эртюк ӑна каҫчен кӗтрӗ. Кӗтери утара урӑх килсе курӑнмарӗ. Эртюк вара «арӑмӗн» хыпарне пӗлмелле, яла анса пӑхрӗ. Унӑн Кӗтерийӗ, пыл чӗресӗ, малтан сӑмах татса хунипе, Курнавӑшри каччӑпа, Ҫитӑр Кӗркурийӗпе, ӗнер ирпе ирех хулана ларса кайнӑ-мӗн, пурӑнмаллах. Пӳрт чӳречисене те хӑма ҫапсах питӗрсе хӑварнӑ.

*1972*





# ТУЙ

**Малтанхи ҫавра**

ТУЙ УМӖН

Сивӗтет.

Ӗнер кунӗпех йӗпхӳ йӑсӑлтатрӗ. Масар таврашӗнчи ҫеремлӗх, унччен ҫумӑрсемпех кӳпчесе ҫитнӗскер, татах та шурӗ, пусмассерен пӑчӑл та пӑчӑл путса кӗрекен пулчӗ. Ир енне — уяртрӗ. Пӗр авӑк лапка-лапка

юр шуралса иртрĕ. Çил çĕкленчĕ. Вилтăприсем çинчи пилешпе вĕрене тĕмисем, талăкĕ-талăкĕпе çумăр айĕнче куççуль тăкса ĕшеннĕскерсем, самантрах кăчăрланчĕç, çӳп-çӳхе пăр çурхахĕпе витĕнчĕç. Хĕрес хĕррисем, çил сĕртĕннипе калама ĕнĕрнĕ сĕрме купăс хĕлĕхĕсем ирĕксĕртен татăла-татăла кайнă чухнехи евĕр, чĕрене çӳçентерсе, кас-кас нăйкăш сасă кăларчĕç.

Купи карчăкшăн кунтан ĕрехетлĕрех кĕтес тĕнчере урăх çук. Илĕм-тилĕмпех вăранать те вăл, качакине çавăтса, пахча хыçĕпе (Кайрикасра пурăнать карчăк) масар таврашĕнчи çеремлĕхе анать. Хул хушшине, çитсен ларма тесе, такам сĕм авалах ăсталаса хăварнă лутра тенкелне хĕстерет: шăмшака сивĕ ан тыттăр. Хăнăхнă йăлипе, Купи тенкеле çулла та хăйĕнчен хăвармасть. Тăван килĕ пек, тăван килĕ умĕнче икçĕр çул ытла кашласа ларакан лаштра юман пек тăван ăна çак тенкел. Калăпăр, касса тат-ха аллунти пĕр-пĕр пӳрнӳне — ыратать, ӳт илеймесĕр ăшна вĕçтерет. Купишĕн те хайхи йывăç япала çавах — пурнăçне ĕмĕрлĕхех ӳт илнĕ саплăк.

Тӳрех вырнаçмасть-ха карчăк масар хĕрне. Малтан ун тавра утса çаврăнать. Шăп та лăп тăхăрвун тăхăр утăм тусан — масар лапамĕ çавнашкал — вара тин, качакине ярса, çăва тулашне, Пĕтмен шывĕ тӳпемне пырса ларать.

Кивĕ масар ку, пӳкле вилнисен масарĕ. Тĕп масарĕ, ав, хыçарах. Унăн лапамĕ, утса çаврăнсан, тăхăрвун тăхăр кăна мар, виççĕр тăхăрвун тăхăр утăм та пулать пулĕ, теççĕ. Ку кивĕ масарне Купи çураличчен çулталăк малтан, шăп та лăп тăхăрвун тăхăр утăм виçсе картланă-мĕн: çĕре кĕрекен тăхăрвун тăххăра çитмесĕр те çĕре ан кĕтĕр, тенĕ-мĕн. Кун çутипе сахалтарах савăннă çав ĕлĕкхи çын, масарпа тĕшмĕшленнĕ чăн мар япалана та вĕсем çавăншăнах — тĕнче ырлăхне чылайрах курса пурăнасшăн — шухăшласа кăларнă ĕнтĕ... Эппин, килес ăрусен ĕмĕрисем те вăрăмрах-тăр-ха.

Масартан инçех те мар, пĕр-ик пахча лererехре, яла кĕрекен çул иртет. Кивĕ çăва хĕррипех — такăрлатнă сукмак, тавра çаврăнас мар текенсемшĕн, тӳрĕрен çӳрекенсемшĕн. Ларать вара Купи карчăк яра кунта çакăнта, çĕре кĕнисен ĕмĕрхи канăçлăхне усалтĕселтен сыхлакан пек. Урине вăл тĕпĕпе хĕррисене

сăран сăртарнă кăçатă тăхăннă (çулла та ăна урараи ямасть: сыпăсем ан сурччăр), çийĕнче — хĕлĕн-çăвĕн пĕр тумтир: кĕрĕк, чĕркуççи таран. Пуçне çăм тутăр çыхнă (пасартан туяннă ахăртнех), тутăрĕ çине мулаххай уртса янă. Çавăнпа татах та сивлекрех, ăшăнкисĕртерех курăнать Купи. Чунĕ ырă унăн. Хăлхи витĕрех мар пулин те (ара, çитес çулхи çимĕкре тăхăрвун тăххăр тултармалла вĕт-ха), иртен-çÿрене пурпĕрех сăмах хушмасăр ирттермест. Лешсем те карчăка хапăл, курмассерен: «Епле чупан-ха, çÿретне»,— тесе хăвараççĕ. Купи вĕсем каланине пур чухне те ăнкарсах çитерейместессĕн те, ăнланнă пекне тавăрса: «Пехил, ачам, пехил ват çынна манманшăн, хăвăра та хисеп»,— тесе каласа ăсатать. Пурăнса çитнĕ ĕнтĕ карчăка, ыран-паян тупăка выртмаллискер—курнă-пĕрне пехил парса хăварас, хама сума сăвакансем юп курса пурăнччăр, тет. Курасса çивĕч курать-ха кинемей. Куç вăйĕ хĕр чухнехи пекех пулмасан та, таçти-таçтине те уйăрать.

Хăнăхнă ĕнтĕ ялйыш Купи карчăка кунĕ-кунĕпе масар тулашĕнче ларнине курма. Вĕсем астăвассах кунта вăл. Ваттисем çеç (кусем те ашшĕ-амăшĕсенчен илтнипе кăна — ялта чи нумай пурăнаканни Купи) хуйхăпа çунса кайнă хĕр шăпи пирки асăнкалаççĕ; хăшĕ-хăшĕ, каярах çуралнисем, карчăк çава çине мĕн çăмăлпа çÿренине те тĕшмĕртсе пĕтерейместĕ, кама кирлĕ ара çĕр çулхи йÿтенĕ Купи ăслайĕ, кăмăлне кайнă таран хăтлантăр-и, унпа тĕнче пĕтес çук, теççĕ те — çырлахаççĕ.

Купи кăна сакăрвунă çул ытла каяллине паянхи пекех курса тăрать. Ун чухне вăл Купи те марччĕ-ха, Куççульпиччĕ — амăшĕ çапла ят хунăччĕ ăна: ара, çуралан-пĕри хĕрача пулса пычĕ-çке, пиллĕк таран тĕнчене килчĕç, пĕр ят çĕрĕпе çавăн чухлĕ пыра ăçтан тăрантарса усрайăн. Аппăшĕсен ячĕсем те, тарса-тарса пыракан кун çути пек, пĕринчен-тепри тăкăскăрахчĕ: малтанхи Хĕвелпи пулсан, ун хыççăнхи Уйăхпиччĕ, ваталăххисем — Çĕрлепипе Хуйăхпи, Нушапи, чи кĕçĕнни — улттăмĕшĕ, çемьери тепĕр янтă пыр — Куççульпи пулчĕ. «Килйыш шанчăкне çуралаймарăн иккен, хĕрĕм. Килес-килес телейĕмĕр куççулĕ витĕр те курăнмасть»,—Куççульпие пăхса тек-текех ăшне çунтаратчĕ амăшĕ.

Кайран-кайран çеç, вăхăт иртнĕçем, çынсем мана-мана пуçласан, вăл Куççулыпирен Купи пулса тăчĕ.

Шутсăр хӳхем ӳсрĕ Купи. Çамрăклăх çамрăклăхах çав, пурнăç тем тери пусса-пусса тăрсан та, хĕр, каччă куçне шартармалла, пĕлĕт сенкерĕ пек таса та чĕкеç чĕппи пек эреветлĕ çитĕнчĕ. Çавăнпах-тăр, хĕр вунçиччĕ тултарса вунсаккăра кайсан, ăна Хирĕçкасри хăй пекех чухăн çын ачи — Тракка, Купирен виçĕ çул аслăрахскер, тĕсерĕ. Тракка сăнĕпе йăвашчĕ пулин те, чĕрипе харсăрччĕ. Купи ачасемпе пĕрле Кӳртемен тăвайккинчен пăралапа ярăннине астăвать: пĕрре çапла шакла пекех якатса пĕтернĕ сăртпа вирхĕне-вирхĕне анма урама тухнăччĕ те, ун пăралине староста ывăлĕ Траккапа пĕр тантăш хăйпашка Культтӳç туртса илнĕччĕ, çырма тĕпнелле яра панăччĕ, анса çитсен, хĕрача пăралине тунката çумне персе хăварнăччĕ. Ах хытă йĕнĕччĕ çавăн чухне Купи. Тракка та, кунтах хĕвĕшсе çӳрекенскер, Культтӳçе хăваласа çитнĕччĕ те ай-ай ĕнсе кукли çитернĕччĕ. Лешĕ ку ăстăрккаран Кӳртемен тăвайккине пыма та пăрахнăччĕ, Турикас ачисем çумне ермешнĕ, тетчĕç.

Тракка Купие куçларĕ те, Купи те Траккана куçларĕ. Купи вăйă картине тăрсан, хĕр шутне кĕнĕ хĕре Тракка килĕ умнех ăсатса хăвара пуçларĕ. Лаштра юман айĕнче вăрах лараймастчĕç пулин те — ара, кăвак çутлах ана çиневаскамаллаччĕ-çке-ха — пĕр-пĕрин куçĕнчен пăха-пăха илсе шăкăлтататчĕç вĕсем. Темĕн ырри, савăкки, чеченни варкăштарса-килентерсе тăратчĕ иккĕшин чĕрисене те. Каç пуласса, вăйăра тĕлпулас вăхăта кĕте-кĕте шутсăр тĕмсĕлетчĕç яра куна Тракка та, Купи те. Туй пирки те сăмах татнăччĕ ĕнтĕ пикепе йĕкĕт, тепĕр çул çимĕкре, çурхи ĕçсем вĕçленсен, кĕрхи ĕçе пикенес умĕн пĕрлешме калаçса хунăччĕ. Иккĕшин чĕрине те пĕр хĕвел — пурнăçĕсене ĕмĕр-ĕмĕр юп курса пурăнас юрату хĕвелĕ ăшăтса тăратчĕ.

Калаçни калаçнипех юлать çав, пур чухне те екки май çаврăнмасть. Ярăнса-ярăнса утам тенĕ тĕлте те, урупа чул муклашкине лексе, тăрăнса кайма пулать. Юрату тӳпинче хĕртсе хĕвел пăхнă вăхăтрах, акă, Траккапа Купи пуçĕ тăрне пăрлă пĕлĕт татки купаланать. Купие чылайранпа арăм тума сăхланса пурăннă Культтӳç килтисене ӳкĕте кĕртет-мĕн те (ашшĕ ăна

тупраллă хĕр илсе парасшăн пулнă) хĕр патне евчĕсем ярать. Хĕрĕн ашшĕпе амăшĕ, нушаран тухса курайманскерсем, хуть кĕçĕн ачин шăпине те пулин телейлĕ тăвас ĕмĕтпе (аслипе ун хыççăнхи те, авă, хăйсем пек чухăн-чахăна кăна юрарĕç,— халĕ те çийиçими кăна пурăнакалаççĕ, тепĕр иккĕшĕ, кур, пусма ларнă чăх пек шăпăрт-ха, çăвар та уçмаççĕ тапранасса) Купи кăмăлне ыйтса-туса тăмаççĕ, килĕшеççĕ евчĕсемпе. Килĕшмесĕр, ара, пулас хăтасем хăйсемешкел ачаль-махаль çынсем мар вĕт—пуянсем, ял çинче ятлă çынсем.

Ним тума аптăраççĕ Купипе Тракка çак хыпара илтсен, йăлт хуйăха ӳкеççĕ. Культтӳç те туя хĕрсех хатĕрленет,— сăра, эрех тутарттарать. Унччен, Культтӳç туя лариччен пĕр кун малтан, яла кантуртисем ĕрĕхтерсе çитеççĕ, куланай пухма. Староста патĕнче çисе-ĕçсе тултарсан, хайхисем ял тăрăх тухса танккаççĕ, килĕрен-киле. Культтӳç те вĕсенчен юлмасть. Староста ывăлĕ-çке. Çитменнине тата ăна кантуртисем, килмессерен, хăйсем патĕнче темĕнле вырăн та тупса парас пек калаçкалаççĕ, эппин. Культтӳçĕн аслисемпе çӳресе, аслисем пек те пулма хăнăхмалла чи малтан.

Кантуртисем пĕрин карти çумне çитеççĕ те, тепĕрин карти умне, пĕринчен пăтавккапа тырă илсе тухаççĕ те, тепĕринчен; тырăпа татăлайманнисенчен — кил-çуртĕнче мĕн пур, çавна урапи çине тиеççĕ. Траккасен умне те çитеççĕ хайхисем. Траккан куланайран нимпе татăлмалли çук, пĕлтĕрхи тырри те раштав тĕлне анчах çитрĕ (икĕ ят çĕрĕ пулин те — Тракка хăйĕнчен икĕ çул кĕçĕн шăллĕпе пурăнать — сăрт çамкине, тăмлă вырăна виçсе панă май тыррине пĕр ят çĕрĕ чухлĕ те ăнăçтараймаççĕ), çавăнпа ирсеренех, хырăм выççи кӳ те кӳ каплана-каплана килсен, шăл айне мĕн хумаллипе аптăраççĕ. Тырри пуррине пур-ха вĕсен пăртак (куланайне кĕркунне те саплаштарса яма пулĕ!), туй валли усранă икĕ кĕрепенке урпа салачĕ, авăртсах хунăскер. Киле çĕнĕ çын кĕртнĕ чухне йăлана пăхăнманни те аван мар. Туй...

Лешсем тăрăшсах хĕстереççĕ, куланай тӳлемесен, чĕн чăпăрккапа çара çурăма ăшаласси пе шăмараççĕ. Тракка тӳресене çĕнĕ тырăччен, кĕркуннеччен, тăхтама тилмĕрет. Лешсем, старостăпа ывăлĕ хĕтĕртнипе, тавайлатса кăна тăраççĕ. Калаçкалаççĕ-калаçкалаççĕ

те, Тракка «хăлăхсăррине» кура, Культтӳçе «çав çара пакартасен» пӳртĕнче путлĕ япала мĕн пур, пĕтĕмпех сĕтĕрсе тухма хушаççĕ. Культтӳç (пĕлнĕ çав вăл хăйĕн тăшманĕ кам иккенне, ял хыпарĕ — Тракката Купи сăмах татни — ун хăлхине те пырса кĕнĕ ĕнтĕ, акă «çара пакартана» тавăрмалли — текех каçăралса çӳретчĕ-ха — майлă самант та меслетленсе çитрĕ), хушнă-хушманах, пӳртелле тапса сикет те унталла-кунталла пăххалать, шалта мĕн пур — тирĕкĕ, кашăкĕ, çăпали, тенкелĕ (кутник саккине сĕтĕрсе тухаймастăн), витĕнсе выртмалли кашми таранах (çула май тата кĕтесре, çекĕлре çакăнса тăракан урпа хутаççине те илет), йăтăрласа тухать. Çакна курсан, Тракка талăрсах каять. Тарăхнипе, Культтӳçе тӳрех янахран янклаттарса ярать, лешĕ месерле кӳп кăна лаплатса ӳкет. Ачине пулăшма ашшĕ чупса пырать, Тракккана патаккипе пуçĕнчен кӳнчлеттерет, Траккан пĕр саманта куçĕ хуралса килет, анчах та вăл çийĕнчех вăй пухать те старостăна та чышкипе хăлха чиккинчен шанлаттарать. Кантуртисем те старостăна хӳтĕлеме варшăнаççĕ. Çакна куратăркач, Тракка шăллĕ çĕртен чул илет те яра парать пĕрне тĕллесе. Лешин сăмсинчен, чул хытă пырса çапăннипе, юн шапăрах палкаса анать. Ĕç-пуçсем капла çаврăнса тухнине кура, тӳресем ыранах, çак «смутьянсене» тытса кайса тĕрмере çĕртессипе кăшкăрашса, татах патак лекесрен сехĕрленнипе, васкасах анаталла таплаттараççĕ, старостăпа ывăлĕ вĕсен хыççăн сĕнкĕлтетеççĕ...

Пăртакран хăй мĕн туса хунине тин ăна илет Тракка, ăна илет те йăлт сăнран ӳкет. Ара, вĕсем, Купипе иккĕшĕ, хĕр ашшĕ-амăшĕ умне ӳксе пуççапасшăнччĕçке кĕçĕр, хăйсен шăпине телейлĕ тума (Купипе Культтуç пĕр мăшăр пулаяс çук) йăлăнасшăнччĕ, ватăсем килĕшмесен вара (лешсем, инкеке риснĕ пек, хĕрне урама та кăлармаççĕ), туй ларнă каç, ташă-кĕвĕ сикки сикнĕ вăхăтрах, пикен пахча хыçне тухмаллаччĕ те, савнă йĕкĕчĕпе пĕрле çывăхри Паттал вăрманне тармаллаччĕ. Унтан вара малалла мĕн тумалли курăнĕччĕ... Траккан староста патаккипе çапса шăйăрса янă пуçĕ хĕссе-хĕссе ыратать. Кун пек юнăхса пĕтнĕ питкуçпа епле пырса кĕрĕ-ха вăл хĕр килне. Эппин, пӳрмен телее ыран каç вăйпа туртса илме тĕв туса (кунтах юлсан, паçăрхи çапăçушăн тытса каясси те

паллах), Траккапа шăллĕ пур-çук япалине пуçтаркалаççĕ те, тĕттĕмленсен, Паттал вăрманне тухса утаççĕ...

Вăрманта Тракка пуçĕ ыратнăçемĕн ыратма пуçлать, талăкран кӳпчесе-шыçса каять. Шăллĕ вара, Купие чĕнсе кăларма, пĕчченех яла анать. Туй-çуй лăпланичченех кĕтет Тракка шăллĕ Купие пахча хыçĕнче, анчах та кĕтсе илеймест çав (Культтӳç, чее вăрă-хурах, арăм пулассине хăраххăн ниçта та кăлармасть), хĕвел ĕмĕлки тăкăрлăксемпе урамсем, уйсем çине лаплаттарса пуссан, нимсĕрех каялла таврăнать...

Туй-çуй лăпланиччене кĕтет Купи те кăмăл туртнă çыннине — Тракана. Хăй ун патне тухма пултараймасть пулин те — кĕтет, туйран та пулин çăлса илсе тухса каясса кĕтет, хĕвве хупас вăхăт çитиччен кĕтет. Староста автăнĕсем чĕрене çурасла шарлаттарса авăтса ярсан тин вара, Культтӳçĕн тимĕр пек минтерне хĕр ĕмĕрĕн ӳкĕнĕçлĕ куççулĕпе йĕпетсе, хĕвве хупăнать...

Туй иртсен улттăмĕш кунне тин тухать Тракка вăрмантан. Тăвата талăк хушши пĕрре пĕçертсе, тепре шăнтса пăрахать ăна пуç шыççи. Шăллĕ тетĕш суранне темле-темле курăкпа та сиплет, курăк шывне вĕрете-вĕрете ĕçтерет. Самайлансан, ыратни аплах туртма пăраха пуçласан, Тракка яла васкать. Йăлт шутласа хунă ĕнтĕ вăл: Купие чĕнсе кăларать те, вĕсем вара, яланлăхах хăйсене пил кӳмен тăван таврапăхĕпе сывпуллашса, Атăл тăрăхне, ирĕкерех çĕре тухса каяççĕ... Çырмара, Культтӳçсен хыçĕнченех пуçланса каякан вĕтлĕхре темĕнччен кĕтсе ларать савнине Тракка. Купи шыв ăсма ансан, ăна хăй шухăшне пĕлтерет. Каччине курнă-курманах Купи йĕрсе ярать, анчах та вăл ун шухăшĕпе килĕшмест: арăм ĕнтĕ, тин унталла-кунталла пăркаланаймăн, ваттисем те пĕрле пуç шуратнă çынпа ĕмĕр ĕмĕрлеме хушнă, эпĕ те, кунашкалскер, сана кайран-кайран кирлĕ пулмăп, тет. Тракка ӳпкелет, савниййĕ хăвăрт манса кайма пултарнишĕн хурланать, Куписĕр тĕнче çути те тĕнче çути марри пирки калать. Купи кăмăлне улăштармасть: тĕнче хĕрне кайсан та, тĕнчи те пĕрех пулĕ ĕнтĕ пирĕн пек мĕскĕнсемшĕн, тет.

Тепĕр кунне те килет Тракка вĕтлĕхе. Купи кĕçĕр те килĕшмесессĕн, нихçан таврăнмасла, чĕринчи куççулĕпе, чунĕнчи Куççульпипе, хăй ыран ку тăрăхран

яланлăхах тухса каясса пĕлтерет. Килĕшет Купи. Паян та, ĕнер те, виçĕмкун те, туй иртнĕ кунранпах упăшкин патаккине çисе пурăннă Купи килĕшет: савман çынпа чĕрĕллех шăтăка кĕринчен эппин, савнă çынпа тĕнче кассa шар курас... Ыран каç, çынсем çывăрма выртсан, Купи çакăнта, пахча хыçне, вĕтлĕхе, тухать те (япала çыххине малтанах килсе хурать), Тракkапа пĕрле вара вĕсем Атăл тăрăхне, курманпулман çĕрелле, çул тытаççĕ...

Арăмĕн кашни утăмне сăнасах тăраканскер, сисет çакна Культтўç те. Тарçипе, упа лек вăйлă та, çынна кушак вырăнне те хуман пилсĕрпе, тепĕр каç сыхласа тытаççĕ те Траккана чунĕ тухиччен хĕнеççĕ. Вилнĕскерне, мăйĕнчен вĕренпе йăлмакласа, Куписен умĕнчи лаштра юманăн аялти тураттинчен çакса хăвараççĕ: савнине кĕвĕçсе хăй çине хăй алă хунă...

Кăшт каярах юлса тухнă Купи савнине вĕтлĕхре шуçăмччен кĕтет. Кун тăрăла пуçласан, Тракка килменнипе эрленсе-хуçăлса, каялла кĕрет. Ирпе ял çине Тракка çакăнса вилнĕ текен сас сарăлать. Шар! çурăлать Купи чĕри, çак хыпара илтнĕ-илтмен, хăйсен умне тухса чупать. Юман тураттинчен çакăнса тăракан савнине курсан, ĕçĕ-пуçĕ епле пулса иртнине пĕлменскер, ун умне татăлса анать, хăйне ылханса, ӳкĕне-ӳкĕне куççуль тăкать. Йăлт ăсран каять Купи, курнине те курми, илтнине те илтми пулать. Пĕртенпĕр савнийĕ анчах тăрать ун куçĕ умĕнче, Купи хăйпе пырасса шанман, Купинчен уйрăлас темен пĕртен-пĕр шелсĕр савнийĕ — Тракка...

Траккана масар тулашне, пӳкле вилнисен çăвине пытарттараççĕ. Лаштра юман кутне пухăннă çынсем мăйкăч вĕрене те асăрхаса юлма ĕлкĕреççĕ: виççĕлле пăртарса явнăскер — Культтўçсен вĕренĕ...

Çавăн хыççăн, тепĕр эрне ытларахран, масара, тĕп масара, тепĕр виле кĕрет. Культтўç, кантура ĕçе кĕрешме кайнăскер, виле пулса таврăнать. Виллине, кăкăртан çĕçĕпе чикнĕскерне, хăйсенни евĕрлех вĕренпе мăйĕнчен йăлмакласа, урапа çине хурса янă. Лаши вара, чарăлса, тĕссĕрленсе кайнă шывак куçĕсене пĕлĕтелле кăнтарса выртакан Культтўçе, хапхи умнех илсе пырса тăратать...

Ял çăварĕ ку виле пирки Тракка шăллĕне асăнчĕ. Шăллĕн, пиччĕшне пытарма та вăрмантан тухма май

килменскерĕн, таврулла ĕçĕ ку, терĕç. Чăнах та, çак пӳкле вилесем хыççăн Тракка шăллĕне Паттал таврашĕнче урăх никам та, нихăçан та куракан пулман. Ахăртнех, пиччĕшĕ тухса кайма тĕв тунă çĕреллех, Атăл тăрăхне, тен, леререх-те-и,— пысăк хуласене — çул тытнă пулĕ вăл...

Купи те, Траккасăр кун çути пĕтнипе, савнипе пĕр тупăка кĕрес тесе, кикен шывĕ те ĕçсе пăхрĕ — чĕрĕлчĕ. Хĕрхенчĕ ăна пурнăç, вĕлермерĕ. Пурăнать-ха, ак, çул шутне те, кун шутне те маннă кинемей...

...Шăнтать. Кӳ те кӳ! вĕрет хăнчăр çил, йăрăл та йăрăл тăвать Пĕтмен шывĕ, кăтрашкаланать. Çăтăл та çăтăл калаçаççĕ шыва перĕнеслех усăннă йăмра çулçисем, Купи чĕрине тăнăçлăх, канлĕх кĕртсе çатăлтатаççĕ. Çилпе çуйкăнланакан çулçăсем кас-кас Купие çĕре кĕнисен чунĕсем пек те туйăна-туйăна каяççĕ, ашшĕпе-амăшĕн, аппăшĕсен, пĕлĕшĕ-тăванĕсен, савнин, асран кайми Траккан, чунĕсем пек те туйăна-туйăна каяççĕ. Вĕсене, çĕре кĕнисен чунĕсене, пурнăç çилĕпе çулçă пек шепĕлтетекенскерсене, кашнинех хӳтлĕх парĕччĕ Купи, анчах та кунçул юххи пĕр унран кăна килмест вĕт-ха, çыннисем, ав, çуралаççĕ те вилеççĕ, çуралаççĕ те вилеççĕ, юхăмăн вĕçĕ-хĕрри те курăнмасть... Çак юхăм Купирен анчах килес пулсан, çынсене тем пек телейлĕ тăвăччĕ вăл, ĕмĕр-ĕмĕр юратса, ырлăх курса пурăнма пилленĕ пулĕччĕ... Хĕвел тухать, хĕвел анать — ĕмĕр иртет, пурăнас кун катăлать... Тракка вилсен, Культтӳçе те «турă курсан» (ăна вăл пытарма та каймарĕ — вĕрене палласа илни Купи хăлхине те пырса кĕчĕ), старостăсем патĕнчен тăван килне лăрахса тухса килчĕ... Халĕ кунта, масарта, канлĕн çывăраççĕ ĕнтĕ Купин çывăх çыннисем пурте: ашшĕпе амăшĕ те, аппăшĕсем те, пĕлĕшĕ-тăванĕсем те, савнийĕ Тракка та... Пĕр Купи анчах, вĕсен çĕр çинчи сывлăшне кун çути пек упраканĕ, тĕнче ăслайĕ пек, Пĕтмен шывĕ тӳпемĕнче куллен хĕвел кĕтсе илет...

Акă качаки те, курăка качăртаттарса, масар тавра пĕр çавра турĕ, Купие сухалĕпе сĕртĕнчĕ, эппин кăнтăр апачĕ тума вăхăт çитрĕ — шĕвĕр сухал кăнтăр апачĕ тĕлне масар тавра шăп пĕрре çаврăнать. Купи, ăна вара, пĕр татăк çăкăр хуçса пачĕ те, лешĕ, сухалне кăмăллăн лăс-лăс силлесе, каллех тепĕр çаврана ӳкрĕ:

качака тепре çавранса килнĕ çĕре кас пулать, киле кайма кун чанĕ çапать.

Купи те хĕввинчен пусмапа чĕркенĕ чĕл çăкăрпа пуçлă сухан кăларчĕ (тăварне килĕнчех сапса тухнă), майĕпен, тĕпретмесĕр, чĕлле суханпа çыртса çиме пуçларĕ. (Шăлĕсем те справнăй-ха карчăкăн). Пĕчĕк татăк çăкăр та хĕлхем сухан, пĕчĕк татăк çăкăр та хĕлхем сухан — çапла апат еккине кӳчĕ.

Ял енчи сукмакпа кунталла пĕр çын ярăнса утса килни курăнчĕ. Купи ăна асăрхарĕ те, çăкăр чĕллипе суханне каялла чĕркесе чиксе, хирĕç тухрĕ. Килекен çынни, салтак тумĕпескер, Купипе танлашсан, ват çынна ăшпиллĕн сăмах хушрĕ.

— Çӳретни-ха, Купи асанне? — терĕ вăл, аллинчи чăматанне çĕре лартса.

— Э... мĕн тен? — уйăрса илеймерĕ карчăк яш çын сăмахне.— Сивĕтет тетне?.. Çăвать-ха çав çумăри, çăвать... Аптрамалла ĕнтĕ,— терĕ, салтака тĕсесе пăхса.— Тем, паллаймарăм-ха эпĕ сана, ачам. Аякран пулатна?..

— Салтакран эпĕ, Купи асанне, салтакран. Тĕппипех таврăнатăп. Икĕ çул çӳрерĕм... Петĕр эпĕ, Нуша Кавĕрлин ачи, паллатăн-и Нуша Кавĕрлине, Турикасра пурăнатпăр, çавăн ачи эпĕ.

— Э-э-э... Апла тен-ха, нушапа пĕрле эппин... Пурнăçне-на такам та нушапа хутăш ирттерет çав... Хысна çăкăрĕнчен таврăнан-ха апла... Сусăрланмарăн-и? — хăлхи уçăлнă пек пулчĕ Купин.

— Тĕрĕс-тĕкелех, сусăрланман. Халь вăрçи те çук ĕнтĕ чылайранпа. Хăраççĕ тапăнма. Пăхчăр-ха пирĕн çине кĕрсе! Хыттăн кăна чăмăрпа сулса ярсан!..

— Эппин, апла-капла сас-хура илтĕнмест-ха. Пурнăçĕ тăнăç тăтăрччех. Пĕрехмай вăрçса та ывăнчĕç пулĕ ĕнтĕ этеммисем те...

— Пулмасть урăх вăрçă, Купи асанне, пулмасть, каларĕ тесе калăр...

— Сăмахху тӳрре килтĕрччех, ачам... Сирĕншĕн, çамрăксемшĕн, калатăп. Мана, хуть, ват каскана, пурăнса çитнĕ...

— Ялта мĕнле хыпарсем пур, Купи асанне, пурте сывах-и, чупаççĕ-и?

— Э? Чупаççĕ-ха,— хăлхи чиккинче тем ян! турĕ те каллех илтми пулчĕ Купи.— Чупаççĕ-ха, чупмасăр.

Ёнер анчах яла çĕнĕ тăрахтăр илсе килчĕç, арман чулĕ пек урапаллăскер, кăрлаттарса кăна чупать. Машини те çине-çинех, пурте чупаççĕ... Таçта чупаççĕ... Ҫам ывăлĕ пултăм терĕн çак эс, уйăраймарăм-ха, Нуша Ҫавĕрлин мар-и? Ҫавăн ачи, вăталăххи, çартан таврăнмалла, тетчĕç те...

Петĕр, килĕшсе, пуçне сулчĕ.

Купи, кача пӳрнине тутăрĕ айне чиксе ярса, хăлхи шăтăкне пĕр самант кăтăртаттарчĕ-кăтăртаттарчĕ те— хăлхи каллех янк! уçăлса кайнă пек пулчĕ.

Петĕр те ыйтса пĕлмех кăсăкланчĕ:

— Ялйыш темле чупать ёнтĕ, терĕм те. Вилни пур-и, çурални, качча кайни, авланни... киле кĕни, уйрăлни...— юлашки шӳтлерех сăмахĕсене шăппăнрах каларĕ те вăл, карчăк илтмерĕ те пулас.

— Ара, чиперех тăраççĕ-ха... Ҫуралнă-качки, халь килсеренех ача-пăча та, пĕлсех пĕтерейместĕп... Ҫитăр матки Хĕветле каллех йĕкĕреш туса панă, терĕç пулас, виççĕмĕш хут ёнтĕ йĕкĕреш—ывăлсем. Ашшĕ, Мăтти-Мăтти Ҫитăрĕ, савăнать, тет, эрне урăлса курмарĕ, куран-пĕрне ĕçтерет, тет, ӳсĕрле кунта та, масар çинче, çывăрса кайрĕ-ха пĕрре... Лаххан Тимуххи вилнĕренпе пурте сывах-ха, çулталăк çитет ёнтĕ... Ҫынни те путлех марччĕ те, турри ăна масар хураллаттарать, ав... Усал çын вилсен çапла вăл, ун хыççăн ырă çын çĕре часах кĕмест... Авланни, качча кайни тесен... Аре, Мирун Михали тепре авланса ячĕ, утмăлти урçа. Хĕрĕхрех арăмсăр тăрса юлнăскер (Пăлаки шăнса пăсăлса çĕре кĕчĕ вĕт!), тытрĕ те хăйпе пĕр тантăш ват хĕре—Кĕçение — илсе ячĕ, аре, пĕлетĕн пулĕ ёнтĕ, пӳрчĕ унăн кĕпер хĕрринчех...

— Пĕлетĕп, пĕлетĕп,— терĕ Петĕр, Купи сĕтĕрттерсе калаçнине тăнланă май.

— Пурăнаççĕ-ха, шăкăлтатсах... Ҫамрăксем пирки, темĕн, илтмен ку хушăра. Аре, хальхи çамрăксенне ăçтан чухласа çитерен, те туйлах пĕрлешсе пĕтеççĕ вĕсем..,— темшĕн хаш! сывласа илчĕ Купи.

Салтак, карчăка тав турĕ те, чăматанне йăтса, кайма тăчĕ. Пĕр-ик утăм тунăскерне, ăна, Купи сасси каялла çавăрчĕ:

— Чим-ха, чим, ачам, аре, ватлăх мар-и, ăну-пуçу, мансах кайнă... Аре кĕçĕр Турикасра туй пулать, терĕç-няк... Саттул Ваççи авланать, тет... Турикасри

Вĕçелисах, хулара вĕренекенскерне, илет тет-и... Çамрăксен пĕрлешмелле, çемьеллĕ, ача-пăчаллă пулмалла. Çапла, çамрăксăр тĕнче малалла каймасть... Санăн та вăхăт çитнĕ ĕнтĕ, ачам, куçласа хунă хĕрӳ те пур-тăрха... Унсăр епле-ха... Çамрăксен пурнăç тăсмалла...

Петĕр, Ваççа туйĕ çинчен илтсен, шалт хытса кайрĕ. Алли-ури сулчăрланчĕ, куçĕ хуралса килчĕ унăн, чĕрине юн пырса çапрĕ. Яла, часрах çитме, тӳрĕрен, сукмакпа кĕрес тенĕскер, вăл каялла вăрт çаврăнчĕ те, тăн-тăн утăпа, ăшĕнчи кăмăлне палăртмасăр, Купи тĕлĕпе иртсе, укăлча хыçĕнчи Паттал вăрманне таплаттарчĕ. Çук, çак хыпар хыççăн яла кĕресси килмерĕ унăн. Мĕншĕн, мĕн тума?.. Петĕр çартан таврăннăшăн ашшĕпе-амăшĕ, шăллĕпе йăмăкĕ сиксе савăнĕç, Турикаса уйрăлса тухнă пиччĕшĕ персе çитĕ, тăванĕ-хурăнташĕсем пуçтарăнĕç, Петĕр мĕнле çитни пирки ыйтаыйта пĕлме пуçлĕç, кулă-хĕпĕртӳ, ĕçкĕ-çикĕ тапранĕ... Мĕншĕн, мĕн тума кирлĕ халь Петĕре çак савăнăç, çак ытлăх... Яла вăл луччĕ тĕттĕмленсен, хăйă çутсан, урамра çын сайралсан, пырса кĕрĕ... Пырса кĕрĕ те, сĕтел хушшине ларса тăмасăрах, чăматанне хурса хăварса, Саттул Ваççисем патне тухса утĕ... Мĕн тăвĕ-ха вăл унта?.. Кăкăртан çулса илсе, Ваççапа калаçĕ-и?.. Çук, çук, Ваççапа мар, Вĕçелиспа, Вĕçелиспа кăна куçа-куçăн тăрса калаçмалли пур унăн... Мĕнле хăйнă-ха вăл çапла тума, мĕнле?!.

Кӳ те кӳ пыра-пыра çапрĕ Петĕре шухăш хумĕ. Астăр та ăстăр пакăртатрĕ унра кăмăл йӳçекĕ...

Купи карчăк, яла кĕрес салтак мĕншĕн вăрманалла таплаттарнине ăнланаймасăр, йĕкĕт утнă еннелле пĕр самант пăхса тăчĕ-тăчĕ те каллех, тенкелĕ çине пырса ларса, çиме пуçланă çăкăр чĕллипе суханне хĕввинчен кăларчĕ...

Петĕр, шăнкăр та шăнкăр çырма урлă каçса, вăрмана кĕчĕ, çинçе хурăна ыталаса тытрĕ, лăс-лăс пĕлĕтелле тинкерсе, пуçĕпе вулă çумне тĕршĕнчĕ, йывăççăн нӳрĕ хуппине вĕриленсе кайнă алă лаппипе текех сăтăрчĕ те сăтăрчĕ. Хурăн тăрринчен, çын сĕртĕннипе, турат çинче йăва çавăрнă тумлам салтак çамки çине пăт та пат, пăт та пат ӳкрĕ. Пăчăртасан та тухман куççуль евĕр, йăрăл та йăрăл куса-куса анчĕç вĕсем йĕкĕт питçăмарти тăрăх...

Петĕр çапла нумайччен тăчĕ, хăй мĕн тунине йĕркеллĕ ăнланаймасăрах, хурăн вуллине ачашларĕ те ачашларĕ... Пăртакран, тунката çине пырса ларчĕ...

Акă унăн ачаран пĕлсе, савса ӳснĕ тăван ялĕ. Çук, савса кĕтсе илмест иккен савса ăсатса янă тăван ялĕ, тăнăçсăр хыпарпа кĕтсе илет. «Мĕн туса хутăн-ха ĕнтĕ эс, Василисса — Вĕçелис, мĕн?» — чĕлхи çинчен эрлĕклĕн вĕçерĕнсе кайрĕ Петĕрĕн ăшри шухăшĕ.

Ав, çав тӳпеме вĕсем, Турикасри вĕт-шакăр, юр кайнă-кайманах сурăх çитерме çӳретчĕç; сурăхĕсене шыв хĕррипе хурах, курăклăрах çĕре, хăваласа антаратчĕç те, хăйсем кутчиккилле вылямa пуçлатчĕç. Шит çӳллĕш шакмака çирĕм-çирĕм икĕ утăм леререх кайса лартатчĕç те, черетлесе, алтуйипе тĕллесе перетчĕç, лешĕ вара, лектерейсен, палт кăна сирпĕне-сирпĕне каятчĕ. Лектерни — татах перетчĕ, лектерейменни — черет çитессе кĕт... Çавăн чухнех, тӳпеме сурăх çитерме çӳренĕ чухнех, туслашса кайнă пулĕ ĕнтĕ вĕсем — Вĕçелиспа Петĕр. Килĕсем те иккĕ урлă анчахчĕ те, пĕрле вылямасăр кунĕ те иртмен вĕсен...

Ав, çав шкула та, шатрун тăраллă çурта, вĕсем пĕр класах çӳрерĕç, çитменнине, пĕр партта хушшинех лекрĕç. Çавăншăн, хăйне хĕрачапа лартнăшăн (кӳршĕ хĕрачи пулин те), астăвать-ха, макăрса та илнĕччĕ Петĕр. Киле парса янă ĕçсене те пĕрлех тăватчĕç вĕсем, йĕппипе çиппи пекех туслăччĕ, йĕппи — Вĕçелис пулсан, Петĕр — çиппиччĕ; кайран, саккăрмĕш класа ют яла çӳреме тытăнсан, тин ютшăннăччĕ вĕсем пĕрпĕринчен, ларасса та класра расна ларатчĕç ĕнтĕ...

Ав, çав лаштра юман айĕнче Петĕр Вĕçелиса пирвайхи хут чуптунăччĕ. Тăххăрмĕш класра вĕреннĕ чухне, хĕлле, вĕсем иккĕшĕ те уроксем хыççăн ташă кружокне юлнăччĕ те яла тĕттĕмленсен анчах çитнĕччĕ. Çавăн чухне, Кулисен тĕлĕнчи лаштра юман тĕлне çитсен, каласси не тахçанах калама хатĕрленнĕскер, Петĕр хăюлăх çитерсе (çул тăршшĕпех шыв сыпнă пек пынăччĕ каччă), Вĕçелиса аллинчен тытса хăй енне çавăрнăччĕ те (хĕр хирĕçлеменччĕ) ăшă-ăшă тутинчен хыттăн-хыттăн чуптунăччĕ, «Вĕçелис, юрататăп сана», тенĕччĕ. Тепĕр кунне хĕр, вăтаннипе, шкула та пыманччĕ. Кайран та çын умĕнче, кăнтăр çутипе, куçран-куçа пăхма иментетчĕç хăйсем, клубра кино пулнă каçсенче кăна, фильм пĕтнĕ хыççăн, Вĕçелиссен умĕн-

че, çума-çум тĕршĕнсе (сивĕ-çке!), пĕр-пĕрин аллисене ăшăтса тăратчĕç... Вĕçелис та юратнă-мĕн Петĕре, пиллĕкмĕш класранпах... Ашшĕ илсе панă çуран машинăпа никамран малтан Вĕçелиса лартса ярăнтарнă-мĕн те Петĕр, çавăншăн Вĕçелис Петĕре шутсăрах килĕштерсе пăрахнă-мĕн, тытса чуптăвасси патнех çитнĕ (ара чуптунинче мĕн усалли пултăр-ха, киносенче кăтартаççĕ вĕт! — курнă çав вĕсем, шĕшлĕсем, курма юраман киносене те). Çиччĕмĕш класа куçсан Вĕçелис хăй Петĕре юратнă пирки, ытти хĕрачасем пек, çыру та çырса парасшăн пулнă-мĕн те — Петĕр куласран хăранă... Петĕре Вĕçелис малтан вăл пиллĕксемпе анчах вĕренме пултарнишĕн, хĕр пек таса тумланса çӳреме юратнишĕн, кăтра çӳçĕшĕн килĕштернĕ-мĕн. Каярахпа, пурăнсан-пурăнсан, хăй те сисмесĕр, йĕкĕтĕн кăтра çӳçне те, таса тумланса çӳреме юратнине те, пиллĕксемпе анчах вĕренме пултарнине те мар, ăна хăйне — çут тĕнчере кунĕн-çĕрĕн хĕр чĕрине вăркаттаракан Петĕре — юратса пăрахнă-мĕн вăл...

Çав лаштра юман айĕнчех вĕсем пĕр-пĕрне ĕмĕр манмасла тупа тунăччĕ, юрату тупи...

Ирхи шуçăм пĕлĕт хĕррине чĕлтĕртете-чĕлтĕртете кĕренленетчĕ ĕнтĕ, çырмара, вĕтлĕхре, çĕнĕ кун çитнине евитлесе, шăпчăк каçса кайса шăхăратчĕ. Çĕрĕпех ăсану каçĕнче юрласа-ташласа ĕшеннĕскерсем (сыпнă ĕнтĕ хĕрлине те — кĕçĕртенпе вуннăмĕш класс ачисем çитĕннисен шутне кĕреççĕ), алла вăтам шкул пĕтерни çинчен калакан аттестат илнĕскерсем, калама çук телейлĕччĕ, хаваслăччĕ... Петĕр Вĕçелиса куçĕнчен пăхрĕ, пăхрĕ... Вĕçелис та Петĕре куçĕнчен пăхрĕ, пăхрĕ... Иккĕшин чĕрисенчен вара, хăйсем те сисмесĕр, юрату-тупа сăмахĕсем каплана-каплана тухрĕç... Вĕçелис кăçалах педагогика институтне экзамен тытма каясшăн иккен, вăл питĕ-питĕ учитель пуласшăн. Петĕр вара, çара илмесен, пĕр çул кунта, колхозра, ĕçлет те пысăк хулана архитектора вĕренме кайса кĕрет, вăл та питĕ-питĕ çурт ăсти, ял сăнне илемкӳревçĕ пулма ĕмĕтленет... Вĕренсе пĕтерсен, иккĕшĕ те яла таврăнсан, вĕсем вара шеп кăна туй тăвĕç, пĕрлешĕç...

Çара кайма ят тухсан, хура кĕркунне, ăсатма та килнĕччĕ Вĕçелис хуларан. Вăл ĕнтĕ студенткăччĕ... Ун чухне те, хальхи пекех, утса тухма çук пылчăкчĕ, лаппа-çĕпреччĕ... Анчах та кăмăлĕсем çутăччĕ вĕсен, тĕтре-

сӗрччӗ, савӑкчӗ... Канаша ҫитиех ӑсатма пынӑччӗ Вӗҫелис Петӗре, куҫҫульпех ыталаса макӑрнӑччӗ, хӑй ӑна «чун пек, куҫ пек кӗтсе пурӑнасса» шантарнӑччӗ...

Эппин, ултав... Халь тин пӗлет ӗнтӗ Петӗр: ав мӗншӗн сас памарӗ иккен вӑл, юлашки виҫӗ уйӑх хушшинче пӗр хыпар та тумарӗ. Петӗр ҫунчӗ, асапланчӗ, института та темиҫе ҫырса пӑхрӗ, яла та. Кӗтрӗ-кӗтрӗ салтак хӗр хыпарне — кӗтсе илеймерӗ, ялтан кӑна йӗкӗте ҫапла ҫырса пӗлтерчӗҫ: «Вӗҫелис пирки ун пек — кун пек нимӗн те илтмен, килсе ҫӳремест, пӗлместпӗр...»

Халь тин паллӑ ӗнтӗ апла: авӑ кампа улӑштарса янӑ иккен Вӗҫелис Петӗре, хӑйӗн те, унӑн та тӑшманӗ пулнӑскерӗпе — Саттул Ваҫҫипе... Пуҫа шӑнӑҫман киревсӗр, ирсӗр япала!.. Ҫавна, хӑрах ҫунатлӑ ҫил армане пек уксах Ваҫҫана тухать-им-ха апла Вӗҫелис?.. Мӗнне савса, мӗнне курса тухать?.. Шӑчӑ пек тӑсланкӑ пӳне те эрӗм вӑрри сапнӑ пек путӑк-путӑк питне е шултра ала пек лӑппи-лаппи ӑсне кура-и?.. Тӗлӗнсе хытса каймалла!..

Лӑс та лӑс вӗрет кӗрхи ҫил вӑрманта. Йывӑҫ тӑррисенчен лӑс та лӑс тӑкӑнать ӗнтрӗк тумламӗ. Петӗр ҫил вӗрнине те, тумлам йӑсӑлтатнине те туймасть, унӑн кӑмӑлӗ халь кӗрхи ҫанталӑкпа мар, урӑххипе тӑр та тӑр ҫӳҫенет.

Петӗр Ваҫҫапа пулса иртнине астӑвать.

Петӗрпе Вӗҫелис лаштра юман айӗнче юрату тупи тунӑ тӗле пырса тухнӑччӗ ҫакскер. Те юри сыхласа тӑнӑ ӗнтӗ вӑл (саккӑр пӗтернӗ хыҫҫӑн малалла вӗренме каяймарӗ Саттул — ара ӑҫтан каяйтӑр-ха, виҫҫӗсемпе те аран-аран сӗтӗрӗнкелесе пычӗ-тӗк, саккӑр пӗтерттернӗшӗн те учительсене ҫӗре ҫити тайӑлса тав тумалла-ха унӑн — лаша пӑхма кӗчӗ, конюха, те ҫавӑнтан таврӑннӑ вӑхӑт пулнӑ ӗнтӗ — ачи ку, ашшӗнчен пӗрехмай патак лекнӗрен, витерех ҫывӑрса пурӑнатчӗ, килне апат ҫиме анчах анатчӗ — Ваҫҫа лӳппер те хӑлинскерччӗ, кутӑн та итлеменскерччӗ, тӑвас ӗҫе те иккӗ каламасан та пикенместчӗ, ҫавӑншӑн ӑна класра та кӑмӑлламастчӗҫ, ашшӗ те ҫавӑншӑнах патак ҫитернӗ ӗнтӗ ӑна), Петӗрпе Вӗҫелис чуптуса тӑнӑ вӑхӑтра вашт анчах сиксе тухнӑччӗ те юман хыҫӗнчен, вӗсене шарт! сиктернӗччӗ. «А-а, савӑшатӑр-и-ха!»— тенӗччӗ вӑл лӑр-лӑр сассипе. «Савӑшӑр, савӑшӑр, Вӗҫелис пу-

рĕпĕр манăн пулать»,— тесе лăпăртатса пĕтнĕччĕ. Петĕр ăна кăкăрĕнчен çулса илнĕччĕ те, тапранма та шутламанскере, кула-кулах, чăрмантарса çӳренĕшĕн тарăхса, ĕнсерен чикелентерсе ăсатнăччĕ. Ваççа, аяккарах кайса, вĕсем енне лач! сурнăччĕ те — «каларĕ тесе калăр, Вĕçелис манăн пулать, эпĕ ăна юрататăп», тесе пăрăнса утнăччĕ.

Мĕне шанса çапла хăюлланнă-ши вăл çавăн чухне, тăмпай... Юратăвах аптратнă-ши ăна?.. Ваççа унччен те Вĕçелис çумне пĕрре мар çыпçăнкалама хăтланатчĕ те, пуçне те ватман ун пирки Петĕр. Ара, Вĕçелиспа иккĕшĕ вĕсем пĕр-пĕрне чун пек юрататчĕç вĕт-ха... Ваççа пырса çулăхни Петĕр чĕрине самантлăха кăна эрлĕк пусарса хăварнăччĕ çав каç. Ку эрлĕк, шăпчăк ыйхи пекех, вăшт! анчах иртсе кайнăччĕ...

Вĕçелис чĕри улшу тапнă пуль, эппин, вăл каç?.. Пустуй сӳпĕлтетӳ... Ара Вĕçелис ăна çиччĕмĕш класра чухнех, лешĕ юратуллă çыру çырса парсан, еплерех мăшкăл кăтартнăччĕ те, Ваççа çырăвне, хĕрлĕ кăранташпа йăнăшĕсене тӳрлете-тӳрлете тухсах, пĕтĕм класс умĕнче вуласа панăччĕ... Вуласса Вĕçелис хăй мар-ха, Петĕр вуласа панăччĕ Ваççа çырăвне, ачасем тĕркешкеленĕ самантра çыру ун аллине кĕрсе ӳкнĕччĕ те, вăл шăкăртаттарса панăччĕ... «Хитререн те хитре Вĕçелисăм! Қаç выртсан та, ир тăрсан та куç умĕнче пĕр сан сăну кăна, туска çине çыракан пурă пек шапшурă сăну. Мĕнпе ухса çăватăн-ши эсĕ ăна, пус шывĕпе-ши, çырма шывĕпе-ши? Қирек мĕнпе çусан та чип-чипер санăн сăну, куллу пекех чип-чипер. Эпĕ санăн сăнна та, куллуна та, кĕпӳне те, урунти шăкăлт-шăкăлт пушмакна та шутсăр кăмăллатăп... Эсĕ паян, кĕтӳ кĕрсен, урама, лаштра юман айне, тух-ха, ман сана каламаллисем пур... Эпĕ сана тăмран шăхлич тума вĕрентĕп, чĕкеç тăмĕнчен шăхлич тума пĕлетĕп эпĕ... Ан ман вара, тух... Қĕтетĕп... Ваççа»,— тенĕччĕ унта... Ну, ахăрнăччĕ те вара ачасем, варĕсене тытсах кулнăччĕ... Ваççа, хыçалти парта хушшинче хирĕнкеленсе лараканскер, çырăва вуласа пĕтерсенех, ялт! сиксе тăнăччĕ те, Петĕр енне шурă куçĕпе мăкăл! пăхса, «а мĕн, тĕрĕс çырнă!» — тесе, алăка шалтлаттарсах хупса тухса кайнăччĕ... Çавăн хыççăн Саттул Ваççине шкулĕпех «тĕрĕс шăхлич» теме тытăннăччĕ...

Апла, çав «тĕрĕс шăхличе» качча тухать пулать-ха Вĕçелис, Петĕрĕн юратăвĕ, ăшçунтармăшĕ, пĕрле пурнăç сыпма тĕв тунă çынни?..

Йĕпхӳ пĕлĕчĕ йывăç тăррисене перĕнеслех шăвашăва иртет. Çил, пуçласа акана тухнă чалак тиха пек, пĕлĕт лăстăкĕсене хăяматалла вăш та вăш! хăвалать. Çилхипе курăк тунисемпе çӳçе тураттисене, çамрăк ăвăспа хурăн, вĕренепе пилеш, шĕшкĕ тĕмисене чӳхентере-чӳхентере хăварать... Таврана кас сĕмĕ карсакарса пычĕ.

Çывăхрах, Петĕр ларакан çĕртен пĕр çирĕм-вăтăр утăм анатарахра, лаша тулхăрни, урапа чуптарса килни илтĕнсе кайрĕ. Пăхрĕ те Петĕр пуçне çĕклесе, калт! турĕ унăн чĕри. Тăнлавĕнче тем тан! тан! янăраса илчĕ. Никама та мар, Вĕçелиспа Ваççана курчĕ йĕкĕт. Ваççи тилхепе тытнă, парласа кӳлнĕ лашисене пĕрехмай васкатать, чĕн чăпăрккапа турта-турта çапать, кĕрхи вăрмана шуйăхтарса, юрă янраттарать:

«Тăпăртатса тăрать тур лаши,
Тăпăртатса тăрать тур лаши,
Малтан-мала каясшăн,
Ай-ай-ях! каясшăн...»

Вĕçелисĕ — те савăнăçлă, те кулянчăклă — пĕлме çук, çĕрелле пăхнă та шăпăрт ларса пырать. Тата тепĕр иккĕшĕ, урапа хыçнерех вырнаçнăскерсем (Петĕр вĕсене палласа илеймерĕ, ахăртнех Ваççан ют ялти тăванĕсем пулчĕç пулмалла), лавçа пулăшкаламалла кăшкăрашкаласа пыраççĕ. Анчах та вĕсен юрри урăх:

«Пирĕн инке пуласси, пуласси, эх!..»

Çук, асăрхамарĕç вĕсем Петĕре. Ĕрлешсе-кĕрлешсе вашт! кăна иртсе кайрĕç. Çĕклемĕ-çĕклемĕпе, çĕтĕк фуфайкăна таткала-таткала пăрахнă пек, пылчăк çеç сирпĕнсе юлчĕ урапасенчен... Петĕр те ыткăнмарĕ çула пӳлме. Шăпăрт ларса пыракан Вĕçелис çине, хăй икĕ çул курман савнийĕ çине, тĕмсĕлсе, шăтарасла пăхса тăчĕ-тăчĕ те, лав укăлча хапхинчен кĕрсе çухалсан тин, чăмататне йăтса, ял еннелле сӳрĕккĕн, пĕкĕрĕлерех утса кайрĕ.

Çук, çĕмĕрттерсе пырса кĕмĕ вăл Саттул туйне,

Ваççана кăкăртан та çулса илмĕ, Вĕçелиспа та çын умĕнче калаçмĕ, лере, лаштра юман айне, юрату тупи пыллăхланнă вырăна, чĕнтерсе кăларĕ те ăна, тин унпа куçа-куçăн сăмахлĕ... Вĕçелис вара тухмаллах, лаштра юман айне, тухмаллах... Ниушлĕ вара унра юрату тупин хăрах тĕпренчĕкĕ те юлман-шим?..

## Варринчи çавра

### Туй

Туй тенĕ хыпар ял çине наччас сарăлчĕ. Чылайăшĕсемшĕн пĕççе шарт! çапмалли хыпар пулчĕ ку: «Вĕçелис Саттул Ваççине качча тухать-и?.. Çавăн пек чипер хĕр-и?.. Каласатăр та... Пулма пултарайман япала!.. Ара, Вĕçелис Петĕр варлийĕ вĕт-ха, хăçантанпа сăмах татса хунă та... Кай, кай!.. Ан тĕлĕнтерĕрха... Пулать-мĕн хыпар, тăп-тăр кăнтăрла уяр аçа шанлаттарнă пек...»

Вĕçелисшĕн хăйшĕн те ку япала тăп-тăр кăнтăрла уяр аçа шанлаттарнă пекех пулса тухрĕ-ха. Асра çук çĕртен, сасартăк. Петĕре кĕтсе пурăнатчĕ вĕт-ха вăл, халĕ, ак, Ваççапа пĕр мачча айне тăмалла...

Ку шухăш патне килсе тухиччен пуçне нумай ватрĕ Вĕçелис, апла та, капла та виçсе пăхрĕ, юлашкинчен, урăх ниçта та çăлăнăç çукскерĕн, мĕн пуррипех — Ваççапах — çырлахма тиврĕ. Мĕн тăвăн ĕнтĕ, хĕр чух хĕрĕх, каччă чух аллă тус, теççĕ, ваттисем калашле «турри çапла çырнă пулĕ», терĕ те — пусăрăнчĕ. «Турри» ăна, ав, урăхла та «çырса» пăхрĕ-ха...

...Телей пӳрчĕ Вĕçелиса — юлашки икĕ экзаменра тăваттă паллăсем кăна илчĕ пулин те (малтанхи икĕ предметпа пиллĕк паллăсем), конкурс ăна савăнăç сунчĕ — вăл студентка пулса тăчĕ. Мĕнешкел хĕпĕртерĕ Вĕçелис çакăншăн, мĕн тери каçăхмарĕ: акă ĕнтĕ унăн ĕмĕчĕ пурнăçланма та тытăнчĕ — шăп та лăп тата пилĕк çултан вăл, учитель дипломне илнĕскер, хаваслă сăн-питпе, хăраса та шикленсе, класа пырса кĕрĕ, хăйĕн пурнăçĕнчи пĕрремĕш урока пуçлĕ, «Эпĕ Василиса Васильевна, сирĕн вĕрентекенĕр пулатăп», тейĕ...

Института кĕнисен ячĕсене çырса çапнă-çапманах,

ун çинчен Вĕçелис Петĕре, ăшвăркатмăшне, хыпар тунăччĕ. Петĕртен те: «Саламлатăп, Вĕçелис», текен телеграмма персе çитнĕччĕ... Петĕр ун чухне кӳршĕ ялти тăванĕсем патĕнче пӳрт каскалатчĕ. Ачаранпах платник ĕçне кăмăлларĕ çав Петĕр... Вĕçсе кăна çӳретчĕ Вĕçелис...

Артиванпа вăл йышăну комиссине документсене леçме килсен паллашнăччĕ. Документсене кĕртсе хăварнăччĕ те хĕр, мĕн кĕтет ĕнтĕ малашне—кĕрейĕпши, кĕреймĕп-ши—тесе, институт вестибюлĕн сулахай енчи чӳречинчен урамалла шухăшлăн пăхса тăратчĕ. Çав вăхăтра ун хыçĕнче такам шăппăн «Здрастье» тени илтĕнсе кайнăччĕ. Вĕçелис çаврăнса пăхнăччĕ те хăй умĕнче хыткан та вăрăм пӳллĕ, япшар тумланнă каччă хĕр пек йăл-л! кулса тăнине тĕсенĕччĕ. Вĕçелис та. йĕкĕт сывлăх суннине кура, «Здравствуйте», тенĕччè. Каччă хĕр çумнех пырса тăнăччĕ, Вĕçелис питне перĕнеслех, çурма ӳпĕнсе. хĕр куçĕнчен тĕмсĕлнĕччĕ, «О-о, кун пек чиперкке те кăçал вĕренме кĕрет пулсан, эпĕ те махха памастăпах. Все, кĕретĕп!» — тенĕччĕ татăклăн; унтан, аллине тăсса: «Атя, паллашар... Сăвăç... Артиван Кĕрхи»,— тенĕччĕ. Вĕçелис та сăвăç хушаматне илтнипе сасăпах кулса ярса, ирĕксĕртереххĕн хăй ятне каланăччĕ... Виççĕмĕш çул тепеçленет иккен Артиван института кĕме, чăваш уйрăмне, анчах ниепле те конкурс урлă йăраланса каçаймасть. Тĕрĕссипе, конкурсĕ уншăн пĕлтĕр анчах пулнă-мĕн-ха, виçĕмçул вăл тӳрех «иккĕ» çаклатса тухнă, чăваш литературипех. Ăна экзамен тыттаракан пĕр преподаватель юратсах каймасть-мĕн — писателе тухма ĕмĕтленекен аллăсенчи ăнман этем, уни-куни çыраканскер—халĕ вара, хăйĕнчен пиçменнипе (алла çитсе хăрах кĕнеке те кăларайман!), «талантлă» çамрăксене вĕчĕ тытать, пусахлать. Кăçал Артиван унпа хире-хирĕç те ларса калаçнă-мĕн ресторан сĕтелли хушшинче. Лешĕ ăна, сĕнсен çуттине те тиркеменскер, «пиллĕк» лартса пама пулнă, паллах, пичетлеме пулăшсан. (Артиван журналсемпе те, издательствăпа та тачă çыхăну тытать-мĕн. Иртнĕ номерте «Ялавра», унăн пĕр вăрăм сăвви çапăнса тухнă: «Курман-и? Тĕл пулсан вула — вăйлă сăвă», тепĕр çул кĕнеке кăларать, ачасем валли, чечексем çунчен сăвăласа çырнăскерне.) Пиллĕк лартса парсан, ма пулăшас мар, пулăшас — хăйĕнчен пиç-

месен те, пĕр-пĕр сăвва ăна ун ячĕпе те хайласа пама пулать. Пурпĕрех унран, асаттерен, халь тин çыравçă пулаймасть ĕнтĕ — аппалантăр... «Талантлă» çамрăксене усси пултăр хăть... Çапла, пысăк шанчăк пур кăçал Ăртиванăн института кĕме... Чăваш литературине кăна сиксе каçасчĕ, ыттисемпе мĕнле те пулин сĕтĕрĕнкелесе тухкалĕ-ха вăл...

Темшĕн Ăртиван каппайчăкланни айваннăн курăнса кайнăччĕ те, Вĕçелис, кула-кулах, сăвăç хушамачĕ пирки те ыйтнăччĕ, «мĕншĕн — Кĕрхи»,— тенĕччĕ. Ăртиван вара ун пирки каçса кайсах каласа кăтартнăччĕ. «Мĕншĕн-и?.. Акă, мĕншĕн, итле»,—тенĕччĕ.—«Хĕвел анать, ир пулать, çумăр çăвать, юр çăвать—хĕл ларать. Хĕл хыççăн çуркунне ĕрĕхтерсе килет, çуркунне хыççăн — çулла. Çулла хыççăн вара, тинех,— кĕркунне. Кĕркунне мĕн кăна çук? Пурте пур... Тырри-пулли, çимĕçĕ, ашĕ-çăвĕ—тем те!.. Çулла е çуркунне пур-и-ха вĕсем? Çук, кĕркунне анчах кĕрекене ларать ку ырлăх... Эппин, манăн та тăван литературăра кĕр мăнтăрĕ пек тулăх пулас, тырри-пулли, çимĕçĕ, ашĕ-çăвĕ — темтепĕр пултăр унта, ытлă-çитлĕ... Урăхла каласан, манăн хушамат ыттисенчен пачах уйрăлса тăтăр, литературăна çĕнĕ талант килнине пĕлтерсе тăтăр... Пысăк талант... Атту, çыраççĕ унта: Ĕнерхи, Паянхи. Тури, Çырмари, Выртмари, Çӳлли, Лутри, Мăнни, Вăталăххи... Вĕçне-хĕрне тухса пĕтме çук... Хушамачĕ витĕр автор сăн-сăпачĕ курăнмасть. Темме тата: Катăкки, Лӳпперри, Шĕвви, тесе çырмаççĕ... Такам та пур литературăра... Пĕр Кĕрхи анчах çук. Кĕрхи вăл— литература пуласлăхĕ, шанчăкĕ»,— тенĕччĕ Ăртиван, хытă мухтанса.

Вĕçелис, халиччен чĕрĕ çыравçăпа юнашар тăрса курманскер, малтанлăха, лешĕ шутсăр вĕççе сăмахланăран, шалт тĕлĕнсе кайнăччĕ, унтан вара кăштах хăнăхкаласан, çынни ку çавнашкалли-тĕр, тăрлавсăртарахскер тесе (ара, итлеме мĕнешкел кăсăк та, çитменнине института та пĕрле кĕреççĕ), Ăртиван чĕнсен, Атăл хĕрне те кайса курнăччĕ.

Яла таврăнсан, каярахпа Ăртиван пирки вăл Петĕре каласа панăччĕ те, Петĕр те вар тытсах кулнăччĕ, анчах та Вĕçелиса института ăсатса янă чух: «асту, асăрхануллă пул!» тенĕччĕ... Темех асăрханмалли

пулнă ĕнтĕ çав Артиванран, пăнтăр-пăнтăр параппанран... Пулнах çав асăрханмалли, пулнах...

Вĕренме пуçлани иккĕмĕш куннех Артиван Вĕçелиса кинона йыхăрнăччĕ. Кайманччĕ унта Вĕçелис, паллана-палламан каччăпа ухмах сутса çӳресси, тенĕччĕ, тепĕр кунне вара, лекцисем хыççăн, каçхине, билет та туянса килсен, Артиван Вĕçелиса çавăтсах илсе тухса кайнă-кайнахчĕ. Хĕрĕн кинона тухса утасси пач кăмăлĕ çукчĕ пулин те, тухса утрĕ çав, иçмасса... (Ара, каччин хăтланкаларăшĕсем мĕнешкел çыпăçуллă та!) Кино хыççăн вĕсем каллех Атăл хĕрринче, чул карлăк патĕнче, чылайччен тăнăччĕ, Атăла, сăртран курма, тăвалла та хăпарса аннăччĕ... «Юрату сăмсахнелле» утнă чух Артиван, кунти клумбăран, иртен-çӳрен сисиччен, Вĕçелиса хризантема чечекĕ те татса панăччĕ. Хĕр чечеке илес мар-илес мар тесе турткалашрĕ пулин те — илнĕччĕ...

Çара кайма ят тухсан, вырсарникуна Петĕр те Шупашкара килсе кайнăччĕ. Вĕсем ун чухне «Юратнăран» спектакль кайса курнăччĕ. Шутсăр кулянтарнăччĕ Вĕçелиса драмăри хĕр шăпи — унăн пӳкле юратăвĕ. Кайран та ăшне чылай çунтарса çӳренĕччĕ вăл çав хĕршĕн, авторне те — пьеса çыраканне — ӳпкелесе илнĕччĕ: мĕншĕн хĕр шăпине унашкал хурлăхлă туса кăтартас, çырас пур Вĕçелиспа Петĕрĕнни евĕр телейлĕ юрату çинчен?.. Темĕн пек паллаштарас-паллаштарас мар тесессĕн те, антрактра вĕсем патне Артиван пырса тухнăччех çав. Ирĕксĕрех паллаштарма тивнĕччĕ вара Петĕре Артиванпа. Иккĕш темĕнех калаçаймарĕç пулин те, темĕн ырă марри çурса кайнăччĕ çавăн чухне Вĕçелис чĕрине. Артиван калама çук çĕкленӳллĕччĕ, савăнăçлăччĕ, пăтăр-пăтăр калаçатчĕ. Темĕнле райхаçатра унăн сăввисене «кĕнекелетсе» — хаçатăн хăрах страницине иккĕ-виççĕ хуçлатса — сăнпах кăларнă-мĕн те çавă каçăхтарса, пĕлĕте çитиех хăпартлантарса янă-мĕн ăна. Йăпăр-япăрах вăл икĕ экземплярне Вĕçелиспа Петĕре парнеленĕччĕ, сăвăласах: «Петĕре — аван ачана, пурăнар-ха сурса маччана!», «Вĕçелиса, сар хĕре, таптăр-и ялан чĕре!» тесех çырса панăччĕ... Спектакль пĕтсен икĕ сăввине вуласа пăхнăччĕ те Петĕр: «Ку «ялан чĕрине таптаракан аван ача япалисене маччана» кăна мар, тӳрех урăх çĕре ăсатмалла-мĕн. Суя, япшар туйăм», — тенĕччĕ те ça-

вӑнтах ҫӳп шӑтӑкне пенӗччӗ... Антракт вӑхӑтӗнче Артиван иккӗмӗш хутри аялалла анмалли пусма лаптӑкӗнче пӗр ҫамрӑкрах ҫӳлӗ ҫынпа калаҫса тӑракан вӑтам ҫулхи арҫын енне пуҫӗпе сӗлтсе кӑтартнӑччӗ те: «ҫавӑ ӗнтӗ вӑл авторӗ, «Юратнӑран» пьеса ҫыраканӗ», тенӗччӗ. Ҫамрӑкраххи тем каласа парать-мӗн те, лешӗ, авторӗ текенни, ҫӑвар туллин сиксех кулатчӗ. «Ҫакӑн пек хаваслӑ этем те ҫакӑн пек хурлӑхлӑ япала ҫырма пултарнӑ-ши вара», тесе шухӑшласа илнӗччӗ Вӗҫелис...

...Лӑпкӑ-лӑпкӑ та япшар текенскер, Петӗр ҫара тухса кайсан, Вӗҫелиса чуптума та тӑнӑччӗ Артиван. Кино хыҫҫӑн, Атӑл хӗрринче, «Юрату сӑмсахӗнче...» «Ӑшӑм вӗҫрӗ Вӗҫелис. Юрататӑп сана. Манӑн пул»,— тесех тилмӗрнӗччӗ сӑвӑҫ хӗре, ӑна пилӗкӗнчен ҫупӑрласа илсе, чуптумах сӗкӗннӗччӗ. Хыттӑн ҫутӑлтарса янӑччӗ йӗкӗте Вӗҫелис, тӗксех янӑччӗ... Ҫавӑн хыҫҫӑн алли те темиҫе кун ыратса ҫӳренӗччӗ хӗрӗн... Артиван енне текех мӑкӑл та ҫаврӑнса пӑхманччӗ вӑл, лешӗ сывлӑх сунсан та сунманччӗ, чӗнсен те чӗнменччӗ...

Нумай та вӑхӑт иртменччӗ «Юрату сӑмсахӗнчи» пӑтӑрмахранпа, пӗр каҫхине, хӗрачасем «читалкӑра» ларнӑ чухне, общежитине, пӳлӗме, хӗрӗнкӗ Артиван йӑтӑнса кӗнӗччӗ. Лӗр-р! йӗрсе янӑччӗ вӑл Вӗҫелиса курнӑ-курманах, ун умне чӗркуҫленсе, каҫару ыйтнӑччӗ, хӑй йӑнӑш тунӑ пирки ӳкӗннӗччӗ, хӗре урӑхран пӳрнепе те тӗкӗнмессе сӑмах панӑччӗ... Хӗрӗнкӗ йӗкӗте Вӗҫелис тӑкӑлтарсах кӑларса янӑччӗ, «пилсӗр эс», тесе хӑртнӑччӗ... Тепӗр икӗ кунтан Артиван Вӗҫелис патне чечекпех пынӑччӗ те, ҫемҫелнӗччӗ ҫав хӗр чӗри — каҫарчӗ курӑнать, вӗчӗ тытса пурӑнма пӑрахнӑччӗ... Ӳлӗм вара Артиван общежитие (Вӗҫелис унпа кинона урӑх ура та ярса пусмарӗ пулин те) чечексӗр утӑм та тумастчӗ. (Хӑй вӑл урӑх общежитире пурӑнатчӗ.) Хӗрсем вара йӗкӗте, кулса, псевдонимӗ ҫумне «чечек» сӑмах ҫатлаттарса хунӑччӗ те, «Кӗрхи — чечек» теме пуҫланӑччӗ. Питӗ те селӗм ҫыпҫӑнса ларнӑччӗ ун ҫумне ку ят. Каярахпа журналта пӗр саплӑк сӑвӑ ҫапӑнса тухсан, шӑл йӗренсем ӑна тата «Кӗрхи — чечек поэчӗ» теме те пикеннӗччӗ, пӗрехмай чечексем ҫинчен кӑна ҫырнӑран...

...Иртрӗ те иртрӗ вӑхӑт, вӑхӑт урапи хӑлтӑртатрӗ те хӑлтӑртатрӗ... Мӗн хӑлтӑртатрӗ унта — сиккипе вӗҫтерчӗ. Петӗр ҫырать те — Вӗҫелис ответлет, Вӗҫе-

лис тунсăхланипе, хыççăнах тепре çырать те — Петĕр те харăсах икĕ çыру ярать... Çур çул хыççăн, тепĕр çур çулĕ те çавăн пекех иртсе кайрĕ, унтан тепĕр çур çулĕ... Вĕçелис Петĕрĕн сăнÿкерчĕкĕ çине пăхатчĕ-пăхатчĕ те — нивушлĕ вăл кайнăранпа çулталăк çурă та иртсе кайрĕ вара, тесе тĕлĕнетчĕ.

Вăхăт, вăхăт! Ытла та час вирхĕнетĕн çав эсĕ, никама та хĕрхенместĕн!.. Мĕнлерехчĕ-ха унăн Петĕрĕ, сасси, кулли, утти?.. Кунтах, çывăхрах, Вĕçелис çумĕнчех пек Петĕр, пĕр сывлăшпах сывлаççĕ пек вĕсем, анчах та, курас, ун куçĕнчен пăхас, кăкăрĕ çумне лăпчăнса-лăпчăнса калаçас тесессĕн те, çук, ав, этемми — сăнÿкерчĕкрен çеç савниййĕ çине шанса, тĕмсĕлсе пăхать йĕкĕт. Вĕçелис вара, сăнÿкерчĕке тытать те, хĕрсем сисмен хутран, чăпăрт чуптуса илет... Сисеççĕ çав, сисеççĕ хĕрсем... Вĕçелис Петĕре куç пек кĕтсе пурăннине те пĕлеççĕ. Çав вăхăтрах Вĕçелис Артиванпа каллех кинона çÿреме пуçланинчен те тĕлĕнеççĕ. Тĕлĕнсех тĕлĕнмеççĕ-ха — тарăхаççĕ те ăмсанаççĕ. Сăвăçĕ кирек мĕнле пулсан та (институтра пĕр сăвăç-çке, пулас поэт), лешĕ вĕсене мар çав, Вĕçелиса анчах кăмăллать. Хăшпĕрисем хыççăн, ав, каччисем, иккĕн тан чупаççĕ, хăшпĕрисем хыççăн... Ăмсанаççĕ çав, хĕрсем, ăмсанаççĕ. Çакна Вĕçелис сисмест мар, сисет, шарламасть кăна. Кун пек хăтланнинче çылăхĕ те çукрах-тăр, тет вăл. Вĕçелис никама та улталамасть — хăйне те, Петĕре те, Артивана та. Ытах çÿрессы килсен, çÿретĕр ара. Çитменнине, Артиванпа вăхăта ирттерме пĕртте кичем мар ăна, Вĕçелиса та сĕкĕнмест лешĕ текех, çулăхмасть те... Пĕр те пĕр тесен, килĕштерет хĕр Артивана хăй хыççăн çÿретме...

Пĕррехинче, тăххăрмĕш класра вĕреннĕ чухнех-ха, хĕрачасем хушшинче, çавар вылятмалла, кам кама хăй хыççăн чуптарма пултарать тесе шăпăлтатса кайнăччĕ те, Вĕçелис та, чĕринчи туйăмне апла-капла виççе пăхмасăрах, çапла персе янăччĕ: «Ман хыççăн, курăр акă, Васильев Петĕр чупма пуçлать», тенĕччĕ. Сăмаххи, ав, тухасса, чăнах та, чăна тухрĕ. Петĕр те çын çинчи сăмахшăн шăмарсах çÿремерĕ (малтан ĕненсех лартнă пулин те), çапах та килĕштеретчĕ хĕр хăй хыççăн каччăсене çÿретме... Петĕрех, акă, пĕррехинче, кинона сеанс пуçланнă тĕле çитейменччĕ те, Вĕçелис çавăншăн шат та пат тарăхса кайнăччĕ. Те-

пĕр уйăх çурăсăр та çемçелменччĕ хĕр чĕри. Çавăнччен ах ача пек, айăпа кĕрсе, лĕпĕстетсе çӳренĕччĕ Петĕр Вĕçелис хыççăн...

Çапла çав, кĕтмен инкек яланах кĕтмен çĕртен, асра та çук çĕртен килсе тухать. Çыннисем, пур, пуçа та илмеççĕ-ха ăна, вăл, пур, куççуль тиесе, хаштха умнех пырса тăнă. Çапах та кирек мĕнле инкек те хăй тĕллĕн, таçтан муртан мăкăлт! сиксе тухмасть, çыннисем, начара сисменскерсем, ăна хăйсемех кĕрекене çавăтса кĕртсе лартаççĕ...

Сесси пĕтсен, студентсемшĕн тепĕр хĕрӳ тапхăр пуçланать — ĕç семестрĕ. Вĕçелиссен уйрăмĕнчи вунă ача, строительство отрячĕ шучĕпе (ыттисем инçе çĕрсене — аякри маршрутсемпе çул тытрĕç) республикăри пĕр колхоза, ĕне вити тунă çĕре лекрĕç. Уйăх çурă ытла ĕçлерĕç вĕсем унта, тăрăшса, хытă ĕçлерĕç... Çу кунĕсенче Вĕçелис çирĕм тултарчĕ. Тантăшĕсем пĕлнĕ те хĕр менельникне, ирĕксĕрех вара, пĕр каçхине, ялпа юнашар кӳлĕ хĕррине «хăна-вĕрле» пухма тиврĕ унăн. Çуралнă кунĕнчен никама та хăвармарĕ Вĕçелис, пурне те чĕнчĕ. Артивана та. Вăл та, Вĕçелис çывăхне, кунтах килнĕччĕ.

Кăвак çут сĕвемлениччен савăнчĕç кӳлĕ хĕрринче çамрăксем. Вĕçелиса, çуралнă кун ячĕпе, кам мĕнле пĕлет — çавăн пек парне пачĕç: лаша кĕлетки, шăтăклă тутăр, тĕреллĕ пиçихи, майра тури, ал тутри... Артиван ăна ыталашса ларакан Сетнерпе Нарспин тăм кĕлеткисене парнелерĕ, хĕре куçран пăхса: «Нарспийĕ паллă-ха вăл, Сетнерĕ каммине пĕлместĕп» — терĕ. Çавăн чухне йĕкĕт Вĕçелиса халаллана шӳтлерех çырнă икĕ йĕркеллĕ сăввине те вуласа пачĕ:

«Вĕçелисăм, Вĕçелис,
Эп сана саватăп, сис», —

тесе хăлаçланнăччĕ вăл.

Пухăннисем, «браво, браво», тесе шапăр-шапăр алă çупнăччĕ. Вĕçелис кăмăлĕ те шутсăр савăкчĕ, ĕнер анчах Петĕрĕнчен хĕпĕртӳллĕ çыру илнĕскер, вĕсе каяс пек телейлĕччĕ, тантăшĕсем ăна ырлăх та сывлăх сунса черкке хыççăн черкке çĕкленипе, йăл та йăл çиçетчĕ. Сыпнăччĕ çав вăл çуттине те. Халиччен ку шĕвеке тутансах пăхманскерĕн (вăтам шкул пĕтернĕ ятпа пу-

хăннă ăсату каçĕнче кăна, Петĕр хистенипе, пĕр черкке хĕрлĕ эрех ĕçнĕччĕ хĕр. Ĕнтĕ кун пекшĕн учительсем те ятламанччĕ, ĕнтĕ паянтан эсир çитĕннĕ çынсем — хăвăр мĕн тунине хăвăр пĕлме пуçлатăр, çавănпа малашнехи пурнăçа йăлт хăвăрăн чухласа пымалла пулать сирĕн, тенĕччĕ вĕрентекенсем), пуçĕ ыррăнырран çаврăна пуçланăччĕ. Ачасем мăшăрăн-мăшăрăн, кам ăçта саланса пĕтсен, Артиванпа иккĕшех тăрса юлнăччĕ вĕсем кӳлĕ хĕррине...

Савăнăçлăччĕ Артиван та, тата пăшăрханчăк сăнлăччĕ те пăртак... Артиван ăшĕнче те вут çунчĕ: юратать-çке вăл Вĕçелиса, юратать, юратáть те — нимĕн те тума пĕлмест... Вĕçелис икĕ çул каялла çупкă çитернĕ хыççăн тем пулчĕ йĕкĕте, йĕкĕт Вĕçелиса ытти хĕрсем çине пăхнă пек мар, урăх куçпа пăха пуçларĕ. Вĕçелисра ытти хĕрсенче çукки, Артивана пахалатса, ăна вĕçĕм тaçта çӳлелле, хăй те ăнлансах çитереймен ырă-ырă çĕрелле кăчăк туртса, йыхăрса тăраканни пур-мĕн. Ку туйăм Артиванра савăк-савăк хĕлĕхсем вăратрĕ, хăйĕн пултарулăхне те вăл, сăвă çырассине, тек-текех хурлавлă кăмăлĕпе тимлеме тытăнчĕ... Пĕлетха Артиван: Вĕçелисăн савнийĕ те пур — Петĕре кĕтсе пурăнать, Артиванпа та хĕр ахальшĕн, вăхăт ирттермелле кăна çӳрет, анчах та мĕнех тăвăн, чун-чунах-çке, акă, Артиван, çавна пĕлетăркачах, Вĕçелис патне туртăнать... Вĕçелисра каччă хăйне вĕçĕм чаплăлатса тăракан темĕнле çутă-çутă хĕлхем тупрĕ, çавăнпа нихăçан-нихăçан та унăн хĕре çухатасси килмерĕ...

Мĕнешкел улталаннăччĕ Артиван пилĕк çул каялла. Хăйпе пĕр класри Вероникăна питĕ-питĕ килĕштеретчĕ вĕт-ха вăл, юрататчĕ. Сăвăсем те халалласа çыратчĕ чиперкке ятне, шкул пĕтерсен, качча илме те ĕмĕтленетчĕ... Вероника та кăмăллатчĕ пулмалла çав Артивана — чăмăр-чăмăр пилĕкĕнчен ыталаттаратчĕ те чăпăрт-чăпăрт тутинчен чуптутаратчĕ... Пăх та кур ĕнтĕ, акă, яла Çитăр Кĕркурийĕ, офицера вĕренсе тухнăксер, курма килнĕччĕ те, Вероника ăна йăпăр-япăрах качча тухса вĕçнĕччĕ. Иçмасса, пăртак тăхтамарĕç те вĕт-ха, туйĕ пеккине те вĕсем Вероника диплом илнĕ каçах туса ирттернĕччĕ, тус-тантăшĕсенчен те никама чĕнменччĕ; Артиван вара хĕрпе курса та каласайманччĕ... Ах, хӳхленĕччĕ те вара Артиван çав каç аслăк тăрринче, тутине çырта-çырта, чиперкке ултав-

не тарăха-тарăха, хÿхленĕччĕ... (Хăй Вероникăна хытă-хытă килĕштернĕ-мĕн те, Вероника пуçĕнче çил вылянине те тавçăрайман ĕнтĕ вăл ун чухне — симĕс пулнă...). Урмăшса-супăшса кайнăскер, Артиван çав каç аслăк çинчен аннăччĕ те «сурам, эппин, пĕреххут Веронikку çине, тавăрам», тесе, килен-каян арçынсене хапăл йышăнакан Аялкасри Алтатти чÿречинчен пырса шакканăччĕ. Алăк уçса кĕртнĕччĕ ăна Алтатти, хăвалаcа яманччĕ... Ире хирĕç, Алтатти патĕнчен тухса шăвăнсан, тăна пырса кĕрсен, хăстарас-хăстарас туйăм ăна кÿ те кÿ йĕклентернĕччĕ, куçĕ хурала-хурала килнĕччĕ...Кайран-кайран та, райçахатра ĕçлеме тытăнсан, Алтаттие аса илсен, тем йÿçекки, нĕрсĕрри, каплана-каплана хăпаратчĕ унра, анчах та ку тĕлелле Артиван чипертерех хĕрарăмсем çумне те çыпăçăна пуçланăччĕ ĕнтĕ... Вĕçелиса куриччenех çапла хантăртатса пыратчĕ ун пурнăçĕ. Вĕçелиса курчĕ те, Вĕçелисран çупкă çирĕ те, тĕтре карса илнĕ ăнĕ-пуçĕ унăн янкăрланма тытăнчĕ... Артиван, пĕр те пĕр тесен, Вĕçелиса качча илме те пултарать, анчах та... Анчах та çав... Тухĕ-и-ха Вĕçелис Артивана качча?.. Пĕлет: тухмасть, юратмасть хĕр Артивана, Петĕре кăна юратать... Артиван вара мĕнле-ха?.. Вăл та çынах-çке... Кĕçĕр, уйăхлă та чăлтăр-чăлтăр çăлтăрлă каç, Вĕçелиспа иккĕшĕ кăна чухне, тепре «ыррăн» сăмахласа пăхмасан, пулмĕ те урăх сăлтавĕ...

...Хĕрсем пaçăр чĕртсе янă кăвайт кăварĕ те, аран-аран сĕвемленекен тул çутипе суккăрланнăçемĕн суккăрланать, хутран-ситрен кăна, лĕп çил вăшăл-вăшăл йăпшăннипе, чăл-чăл хĕлхем сирпĕте-сирпĕте илет. Сĕвек çыран хĕрринчех, хăвалăхра пысăк пулă хÿрипе шыва шампăр! тутарчĕ те кÿлĕ çийĕ, вĕттĕн-вĕттĕн калакан çемĕ пек, кăтрашкалана-кăтрашкалана кайрĕ, ыйăхран писсе-писсе пыракан шăплăха чун кĕртрĕ. Çывăхрах, вĕтлĕхре, шăпчăк шăхăрса ячĕ, унтан тепри, татах тепри... Ĕнтĕ пĕтĕм тавралăх, хĕвеле кĕтсе илме хатĕрленсе, хăйĕн нихăçан та ÿркевсĕр сĕрме купăсне — чĕрĕ тĕнчине — ĕнĕрчĕ...

...Ах,— ахлатрĕ хĕр, каччă ытамĕнчен вĕçерĕнсе тухма тăрăшса, ăна кăкăрĕнчен, питĕнчен тĕртрĕ, сурчĕ — анчах та вăй çитереймерĕ, Артиван Вĕçелиса пăчăртанăçемĕн пăчăртарĕ, чарăна пĕлми чуптурĕ, — лăпланчĕ, сассăр макăрса ячĕ хĕр... Çитменнине, çут-

типе минренĕ ăшчикĕ те унăн, çĕрĕк япала çăтса янă пек, пăтранчĕ те пăтранчĕ, халĕ пĕтсе-пĕтсе килчĕ...

Каялла, ялалла утнă чух, Вĕçелис Артивана чăн та чан! çутăлтара-çутăлтара янăччĕ, «ирсĕр» тесе вăрçнăччĕ. Артиван хăй Вĕçелиса паян тесен паян хăть качча илесси пирки лапăртатнăччĕ, хут уйăртарасси пирки супĕлтетсе пĕтнĕччĕ, Вĕçелис ăна тĕртсе янăччĕ те, «санпа мăшăрлă пуличчен, карта юпипе мăшăрлă пулаппи, курайманстăп сана», тенĕччĕ.

Çапла, вĕçсе кăна çӳретчĕ Вĕçелис. Акă, ун пуçĕ çине халь хура хурлăх йăтăнса анчĕ.

Тепĕр кунне вĕсем, колхозра ĕç вĕçленĕскерсем, килĕсене саланса пĕтнĕччĕ. Вĕçелис вара, тăван ялне каймарĕ, хулана таврăнса, вĕренӳ çулĕ пуçланиччен юлнă пек кунĕсене общежитирех пурăнса ирттерчĕ. Пӳлĕмре, пĕччен хупăнса ларса, йĕчĕ те йĕчĕ вăл... Хăй çине алă хурасси патнех çитнĕччĕ хĕр, анчах та çак хитре тĕнчерен тем пек — тем пек уйăрălса каяс килменни кăна хăтарса хăварчĕ ăна. Кӳлĕ хĕрринче пулса иртнĕренпе тăваттăмĕш уйăх çине кайсан, Вĕçелис хăй йывăр çын иккеннине пĕлчĕ, пĕр вăхăтра вăл апат тиркенипе аптăрарĕ, каярахпа апачĕ те анми пулчĕ — пурпĕрех ăшĕ вăркани иртсе каймарĕ, унччен хи пек мар пилĕкĕ хулăмланчĕ. Ĕненменрен, Вĕçелис хĕрарăм консультацине те çитсе пăхрĕ, варти ачи виçĕ уйăх çурăра иккеннине, пăрахас тесен те халь тин йывăр пуласси, хăй те вилсе выртма пултарассине пĕлсе килчĕ... Тикĕс-тикĕс урапа кĕпер айне лачăр! анса кайнă пекех пулчĕ ку Вĕçелисшăн... Ачине вара, тăвата уйăх çине кайнă ачине, хăйĕнчен ӳт илнĕскерне (юратман çынран пулсан та!) пăрахас темерĕ, хĕрхенчĕ... Хĕрхенессе хĕрхенчĕ те, анчах та малашне вăл хăй мĕн тăвĕ-ха? Хĕрлех ача çуратса ларĕ-и, çакăнтах, институтрах?.. Мĕнешкел намăс!.. Учитель пулма хатĕрленет вĕт-ха Вĕçелис, шкул ачисене, çамрăк ăрăва ăс парса, тĕрĕс-тĕкел, тӳрĕ те сăпайлă, таса чунлă, мораль тĕлĕшĕпе типтерлĕ пăхса ӳстернĕ çĕрте вăй хума хатĕрленет... Хăй вара епле-ха?.. Тивĕçлĕ-и вăл, çакăн пек пулса иртнĕ хыççăн, çамрăк ăрăва ăс пама, пулас учитель ячĕпе çӳреме?.. Артиван — çилхăван... Ăна ĕненмест-ха хĕр... Ĕненме кăна мар, пĕтĕм чун-чĕрипе курайманстъ. Эх, хĕр ĕмĕрĕ... Чавса çывăх та, çыртма çук, тесе ахальтен каламаççĕ-

мĕн çав... Мĕн ансухĕшĕн çыхланса кайрĕ-ха Вĕçелис Артиванпа, мĕншĕн?.. Тен, унăн Артиванпах пурнăçне сыпмаллаччĕ, этемми этемех вĕт-ха... Этем?.. Этем-и вăл?.. Хĕр чыслăхне çапла тахтарĕ те... Халь тата, ача пуласси çинчен пĕлсенех, чее тилĕ пек, заочнăйне тухса вĕçтерчĕ. Килсен те курăнмасть... Килсен те кĕртессĕм çук та-ха ăна... Куçăмпа курассăм килмест... Сăвăç тет-ха тата хăйне... Кĕрхи... Кĕрхи мар, Нĕрсĕрри темеллеччĕ унăн хăйне пĕрех хут, шутсăр вырăнлă пулатчĕ... Тен, Артиванпах каласса пăхмаллаччĕ Вĕçелисăн, пулас ача ашшĕ вăл вĕт-ха... Нивушлĕ Артиван чĕри чуллансах ларнă-ши?.. Çук, çук, шухăшлаćшăн мар ун пирки Вĕçелис, лешĕ заочнăйне куçнă-куçманах, пĕр ача туман тăлăх матка патне киле кĕнĕ-мĕн те на кăна шарлантарса пурăнать иккен. Ĕлкĕрнĕ, кĕрт йытти... Вĕçелис çыпăçасран хăранă ĕнтĕ... Халĕ ĕнтĕ Артиван: «курман та илтмен, эпĕ нимĕн те пĕлместĕп», тейĕ... Юрĕ, йўç кăшманăн сайри паха... Çаплине çапла та, Петĕр куçне епле курăнĕ-ха вăл капла?... Хăйпе пулса иртнине йăлт, тĕпĕ-йĕрĕпе, каласа парсан, тен, ăнланĕ?.. Петĕр?.. Петĕр... Çук, çук, мĕн сўпĕлтетет-ха Вĕçелис... Ытла та манăçа час кăлармарĕ-ши вăл иккĕшĕ лаштра юман айĕнче тăнине, пĕр-пĕрне ĕмĕр манмасла юрату тупи тунине... Эппин, мĕнле питпе каçару ыйтĕ-ха Вĕçелис? Каçарас çук Петĕр... Йĕкĕт туйăмне, хăйĕн туйăмне, ăссăрла, ачапчалла, печĕ вĕт-ха вăл пылчăк ăшне, мăшкăлтăк шывĕпе чўшкĕнтерчĕ... Мĕн тумалла-ха, эппин, Вĕçелисăн, мĕн?..

Ку инкекрен ăна Октябрь уявне тăван ялне кайса килни хăтарса хăварчĕ. Асфальтран çуран утакан Вĕçелиса районтан лавпа таврăнакан Саттул Ваççи хăвалаçа çитнĕччĕ те пĕрле лартса килнĕччĕ. Каçхине вара, хĕр хирĕçлеменрен, Ваççа Вĕçелиссем патне те пырса ларнăччĕ. Йĕкĕте ăсатмалла тухсан, лаштра юман айне те çитсе пăхнăччĕ вĕсем, туратсем хушшинче хуйханакан çил сассине те итлесе тăнăччĕ. «Мĕн ку?» — тесе шикленерех ыйтнăччĕ те Ваççа, Вĕçелис ăна хирĕç «Тракка чунĕ», тесе евитленĕччĕ, Саттула, халиччен илтменскере, Купи юратăвĕ çинчен те каласа панăччĕ... Пўрте кĕрес умĕн, Вĕçелис Ваççа хăçан авланассисем-мĕнсем пирки: «вăхăт ĕнтĕ, кама кĕтен», тесе тапраткаланăччĕ те Саттул вара: «эсĕ качча

тухма килĕшмесен, эпĕ ĕмĕрне те авланмастăп»,—тесе лаплаттарса хунăччĕ. Хăй вара Вĕçелиса мĕн ачаранпах юратса пурăнни пирки хăпартланса кала-кала кăтартнăччĕ, «ара, мĕн, пĕлетĕн вĕт-ха эсĕ ху та, Вĕçелис, çиччĕмĕш класра чухнех, авă, çыру та çырсаттăмччĕ, тата мĕнсем те унта... мĕн аса илмелли халь...» тенĕччĕ. Ваççа Петĕр пирки те ыйтнăччĕ, Вĕçелис ăна: «Çыру та çырмасть, пĕлместĕп, лере урăх хĕр, чипертерехххи, тупса ячĕ пуль, мана манчĕ», тенĕччĕ... Шутсăр хĕпĕртесе ӳкнĕччĕ çавăншăн Саттул, уйăрăласпа вăл, малалла туртăннăччĕ те, Вĕçелиса пит çăмартинчен чап! чуптуса илнĕччĕ... Вĕçелис, Саттул сĕртĕннипе шарт! сиксе илнĕччĕ пулин те, мăк та мак та теменччĕ... Тепĕр икĕ кунтан вара вĕсем, сăмах татса хунăскерсем (Ваççа телейĕ çитнишĕн пĕлĕт тăрринчен сикменни кăна!), ку хыпарпа пурне те шалт! тĕлĕнтерсе ярса, Вĕçелиса çул çине çитерсе хăварма кайнă чух, ял советне кĕрсе, хăйсем хут уйăрттарасси пирки çырса парса хăварнăччĕ. Йăлипе, хут уйăрттарма, уйăх кĕтмелле мĕн иккен те (пулас мăшăрăн юратăвне тĕрĕслесе пăхмалла тет-няк — тен, каялла-маялла та шухăшласа пăхĕ хăшĕ-хăшĕ) — Саттул çине тăчĕ, лешсем вара пулас çамрăк мăшăра тепĕр шăматкунах хапăлласа кĕтсе тăрасса евит туса ячĕç... Ял советне хут кĕртсе хăварнă хыççăн та урлă та пирлĕ шухăшласа пăхрĕ Вĕçелис, Петĕре манас-манас тесе темĕн чухлĕ тăрмашрĕ — Петĕрĕ пурпĕрех куçĕ умĕнчен каймарĕ. Тунсăхлăн, ӳпкевлĕн тинкерет пек вăл Вĕçелиса, ăш вĕçнĕ текерлĕк пек хĕре ăна кĕме тилмĕрет пек... Аптраса çитнĕ тĕлсенче, Вĕçелис Петĕр патне çыру çырса ярасси патнех çитрĕ, виçĕ уйăх ĕнтĕ вăл йĕкĕте пĕр хыпар та тумасть, Петĕрĕ хăй çырать те çырать, ав... Хĕр анчах вĕсене пĕрне те тытса вуламасть, выртаççĕ вĕсем, уçманскерсем, читлĕхри кайăксем пек... Çук, хал çитерейменрĕ, каçару ыйтасси темрен те мăшкăл япала пек туйăнчĕ ăна...

...Çак куна Вĕçелисăн тем пек çитересси килмерĕ пулин те — шăматкунĕ, ав, персе çитрĕ-çитрех. Пĕрле вĕренекенсенчен никама та чĕнмерĕ вăл туя, ун пирки хăйĕн çывăх тусне Гальăна анчах каларĕ. Вара вĕсем, кăнтăрласем тĕлнелле, уни-куни илкелесе, яла ларса тухса кайрĕç... Саттул Вĕçелиссене, асфальт çул хĕрринче кĕтнĕ-кĕтнĕ те, тĕттĕмленеспе, (Вĕçелис ирхи-

нех çитме пулнă), тарăхса та çилленсе, лашине каялла çавăрма тăнă. Шăп çак вăхăтра автобусран Вĕçелиспа Галя аннă. Хут уйăрттарма ĕлкĕреймерĕç çав кун вара вĕсем — каçа юлчĕç. Çил пек вĕçтерчĕ вара парласа кўлнĕ урапа яла. Саттул, часрах çитме хавхаланса, урхамахсене тек-текех чĕн чăпăрккапа ăшаласа пычĕ...

...Саттулсен икĕ пўртĕнче те лăк тулли халăх. Малти пўртĕнче, лупасай пекех пысăкскерĕнче, стена хĕррипе тĕкĕлентернĕ кашмаллă вăрăм саксем çине икĕ айккинчи тăванĕсем те — каччă енчисем те, хĕр енчисем те — танлăн та эреветлĕн лара-лара тухнă. Сума суса пухăннă халăха Саттулсем — ашшĕпе амăшĕ, аппăшĕпе икĕ йăмăкĕ—кам четвĕртпе те, кам чейникпе, сăйла-сăйла ĕçтерсе çўреççĕ. Стаканĕсене сăра е эрех тултара-тултара параççĕ те, тав туса, хăнана шалттин! ĕçме сĕнеççĕ, сĕннĕ куркана шалттин пушатмасан, çилленнĕ пек пулаççĕ... Ларса тухнисем хушшинче Вĕçелис хăйĕн амăшне те, ытти тăванĕсемпе хурăнташĕсене те тĕсерĕ. Вĕсене курсан, унăн сўрĕк кăмăлĕ те кăшт ăшăннă пек пулчĕ, тути те кулăпа йăл! пăларса илчĕ... Тепĕр пўртĕнче те, пысăкки çумне тĕртсе тунинче, унтан тăвăртарахскерĕнче, халăх леринчен пĕртте сахал мар. Пухăннисем, кунта ытларах арçынсемпе вĕтĕр-шакăрсем, кăмакана хирĕç, алăк çывăхнерех, кам епле пĕлнĕ çапла лара-лара тухнă та (вĕтĕр-шакăрĕсем тĕпелерех, апат-çимĕç сĕтелли патнерех, чăмăртаннă) — тĕплĕн теваскамасăр шўтле-шўтле, пана пек куркана, ытлашши ўкĕтлеттермесĕр, пушатсах пырса, тĕтĕм тĕтĕреççĕ, курнилтнисем çинчен халап çапаççĕ... Кунтах, кăмака кутĕнче, иккĕн-виççĕн, хĕрарăмсем, ал тĕлне пулнă вĕтĕр-шакăра сĕтел хушшинчен пистерсе-хўтерсе, ларатăра пĕлмесĕр кускала çўреççĕ-мĕн ĕлкĕрейменнине ĕлкĕртме хыпăнса — аш-пăш, çăмарта, хуплу, яшка, пăтă шăрши кăлараççĕ...

Пырса кĕнĕ-кĕмен çамрăксене туй халăхĕ хупăрласа илчĕ, «ма час çитейменнисем, вĕсене кĕте-кĕте хăшкăлнисем» пирки çуйкăнланчĕ, хăвăртрах кĕрекене ларма хистерĕ... Ваççапа Вĕçелис, кĕреке хушшине лариччен, ваттисенчен пил илчĕç. «Арсăр арăм — йĕвенсĕр кĕсре. Ар хыççăн арлан шăтăкне те кĕме хушнă, çавна астуса пурăнăр, ывăлăмпа кинĕм. Ялан

пĕр çĕре сурăр. Тирĕк-кашăк шăкăртатсан та килти çӳп-çапа килтех хăварăр, тула ан кăларăр. Ваçça, кинĕме итле. Кинĕм, эсĕ те Ваçça сăмахĕнчен ан ирт. Иккĕн выртса виççĕн тăрăр. Пиллетĕп»,— терĕ те ватă Саттул ывăлĕ костюмĕн шалти кĕсйине çĕр тенкĕлĕх пĕр укçа шăкăрт чиксе хучĕ: «Ку сире — сывлăш çававрса ямалăх пултăр, мĕнкилчӳ илме, малтанлăха...» Вĕçелис амăшĕ, кăмăлĕ наччас хуçăлакан хĕрарăм: «Чĕрӳпех суйласа илтĕн пулсан, хĕрĕм, пӳрнипех ĕмĕр ирттермелле пултăр»,— терĕ те тутăрĕ вĕçне шывланнă куçĕ тĕлне тытрĕ...

Ваççапа Вĕçелиса, пил ячĕпе, пĕрер черкке каçункка пырса тыттарчĕç. Çамрăк Саттул эрехе наччас ӳпĕнтерсе хучĕ, Вĕçелиса та, тем пек кутăнлашрĕ пулин те, пĕр черккене тĕппипе пушаттарчĕç-пушаттарчĕçех — хисте-хистех, çăвартан тытсах, ĕçтерттерсе ячĕç... Çамрăк мăшăра вара кĕтессе, чыслă вырăна, кĕртсе лартрĕç...

Туй-çуй тапранса кайрĕ. Вăйăç Энтри, киккирик-кине паçăрах славнăй хĕретнĕскер, чăм шыва ӳксе, купăс миххине лаш та лаш анчах нăрăлтаттарчĕ. Ӳсĕрри — ӳсĕр марри, пĕлни-пĕлменни кĕвве май тăпăр-тăпăр сикрĕ те сикрĕ... Малтан, пуçласа пама, «кинпе кĕрĕве» ташлаттарчĕç... Вĕçелис амăшĕ хĕрне тахçанах илме картса хунă çăм тутăр парнелерĕ, туй тĕлне юри пасара кайса туянса килнĕскерне. Вĕçелис, хулпуççи çине уртса янă ăшă-ăшă тутăра икĕ вĕçĕнчен тытса, çунатти хуçăк кайăк пек, купăс çемми майăн пĕрре-иккĕ çаврăнса илчĕ те каялла кĕрсе ларчĕ. Ваçça, кăмăлĕ çитнипе каçăхнăскер, хуçăк ураллă çерçи тунари кантăр вăррине пăр та пăр сиксе хыпма хăтланнă евĕр, лăкăшт та лакăшт силленччĕ...

Апат лартрĕç — сурăх какайĕ ярса пĕçернĕ купăста яшки. Апат умĕн Ваçça амăшĕ, çатăлти Акăнь, Вĕçелиса хисте-хистех, тепĕр черкке пекне те пушаттарчĕ: «Кинĕм, кинĕм, Вĕçелис, хăвна юратса илетпĕр пулать те вара, манăн кăмăла та килĕштер-ха эс?..» Ку черккене тытса панă хыççăн, яшкине те пĕр-ик кашăкран ытла сыпаймарĕ Вĕçелис, унăн ăшĕ пăтрана-пăтрана килчĕ, пăчă-пăчă пулса кайрĕ... Вара вăл Ваççана: «Эпир йăпăртлăха уçă сывлăшпа сывласа кĕрерха, пăчă»,— тесе каласа хăварчĕ те, Гальăпа иккĕшĕ вĕсем тула, пӳртпе юнашар пахчана тухрĕç...

Вĕçелис кăмăлĕ хуçăлса-хуçăлса килчĕ. Хăйĕн пурнăçĕ ăна çĕр çинче никама та кирлĕ маррăн, тĕлли-паллисĕррĕн туйăнса кайрĕ. Кам авланать, кама качча параççĕ халь?.. Вĕçелис Саттул Ваççине качча тухать-и?.. Кăмăн туйĕ çапла тăрăс-тăрăс сикет?.. Вĕçелис, хĕртусне, Гальăна, ыталаса илчĕ те, ун çумне пăчăртанса, шăппăн-шăппăн йĕрсе ячĕ... Галя, хĕр-тусĕн вăрттăнлăхне пĕлекенскер, Вĕçелиса, ăшă-ăшă сăмахсем калаcа, çурăмĕнчен лăпкарĕ, лăпланма пулăшрĕ... Шалта вăйăç Ваççа, туй илемне кĕртме, купăсне пĕтĕм вăйпран хашлаттарчĕ те хашлаттарчĕ. Кунта, тĕттĕм пахчара, Вĕçелис хăйĕн çутă питне хурлă куççульпе йĕпетрĕ... Каялла кĕме тăнă чух, хапха умĕнче, Вĕçелиса пĕр вуникке-вунвиççĕсенчи ача (Петĕр шăллĕ) тытса чарчĕ те хут татăкĕ парса хăварчĕ. Вĕçелис ăна тĕлĕнсе, хăпăл-хапăлах уçса вуларĕ. «Вĕçелис, эпĕ таврăнтăм. Лаштра юман айĕнче кĕтетĕп. Петĕр»,— тенĕ унта кĕскен.

Шар! çурăлчĕ Вĕçелис чĕри. Сў! туса чĕтренчĕ ун ўт-пĕвĕ. Пĕр саманта вăл нимĕн тума пĕлмерĕ, хут татăкне епле тытнă çаплах хытса тăчĕ, унтан, татăкăн-татăкăн çуркаласа, çĕре пăрахрĕ. Галя та Вĕçелис çине тĕлĕнсе пăхса тăчĕ-тăчĕ те, ăнланнă пек пулсан (Галя та кунта темиçе те килсе çўренĕ — Петĕр шăллĕне паллать), нимĕн те шарламарĕ...

Пўртрен, Вĕçелиспа Гальăна шыраса, Ваççа кăтăрса тухрĕ. «Кĕтсе ывăнтăмăр. Кин ăçта та, ăçта теççĕ. Капла пирвайхи каçах намăс кăтартсан (хăйне Вĕçелис савманнине пĕлет çав Саттул, хăй çеç, хĕре савнипе, вутра çунать), пулмасть чăтса, паянтан эсĕ ман арăм, асту»,— терĕ вăл çилĕллĕн, лăкăшт-лăкăшт уткаласа, унтан çемçеpеххĕн: «Туй сыннисем, аттепе анне пире кĕрекере ларнине курасшăн. Атя»,— тесе йыхăрчĕ.

...Туй-çуй сăн-сăпачĕ те улшăннă халь. Пухăннисенчен ура çинче кускаласа çўрекен нумай, паçăрхи пек тайланса-чиперленсе лармаççĕ вĕсем, икшерĕнвиçшерĕн пĕр тĕлерех пухăннă та, сăра стаканĕ çитиччен, тем-темсем çинчен те сўте-сўте яваççĕ, политика ыйтăвĕсем тавра хывăх вĕçтернипе Мĕтри Иванччă арăмĕ йĕкĕреш çуратса пани таранах... Ваççапа Вĕçелис сĕтел хушшине кĕрсе ларсан, тахăшĕ, вырăс йăлисене чухлаканни, «йўçĕ» тесе çинçе сассипе çухăрт-

тарса ячĕ те туй халăхĕ пурте ун хыççăн «йӳçĕ» те «йӳçĕ» тесе кăшкăрашма тытăнчĕ... Ваççа вара, çакна илтнипе хĕпĕртесе кайнăскер, Вĕçелисăн кăлт та кăлт сикекен тутине хăйĕн сип-сивĕ тутипе чăпăрт-чăпăрт тутарса илчĕ... Ваççа, Вĕçелиса пурнăçĕнче пĕрремĕш хут тутинчен чуптума пӳрнишĕн ирĕлсе ларчĕ пулсан, Вĕçелиса, Саттул тутипе перĕннĕ-перĕнменех, йĕклентере-йĕклентере килчĕ... Умĕнче ларакан сăрана пĕрикĕ сыпкăм турĕ те йĕкленни тин иртсе кайнă пек пулчĕ унăн...

...Ташша сӳтсе ывăнсан, яш-кĕрĕм, туй каччисемпе хĕрĕсем, урай варрине пухăнарах тăчĕç те, пăчăкăпа вут татнă пек, юрра хаш та хаш кăна чăвăнлаттарчĕç.

Такмак хыççăн такмак шăрантарчĕç çамрăксем. Хĕрпе каччă кӳренме пултармаллисене те çупкăмăн-çупкăмăн ислетрĕç — ӳпкелеме сăлтавĕ çук—пĕркенчĕк айне тăнăскерсенчен мăшкăлласа юрласси ĕлĕкрен пыракан йăла...

Çынсем ташлана-юрлана хушăра кĕлете тухса кăштах канса илнĕ ватă Саттул, мухмăрĕ пусса килнĕскер, ывăлĕпе кинĕ çумне пырса ларчĕ те çур стаккан пек касункканa ланк анчах ĕçсе ячĕ, унтан, ĕçнĕ хыççăн нимĕнпе те çыртмасăрах, сылтăм аллипе хăй мĕн калас тенине çирĕплетме сула-сула ярса, лăнкăрлăнкăр тăрантас пек, çĕмил кăлтăртатса кайрĕ. «Эх!— терĕ вăл ывăлне те, кинне те пĕр пекех пăха-пăха илсе, эрех хĕмĕпе тапса тухнă куççульне çанă вĕçĕпе шăлнă май.— Эх! Пĕр çирĕм çул каярах пулсан-и, кăтартăттăмччĕ эп, Ухатник Қавĕрли кам иккенне, кăтартăттăмччĕ, урлăях та уртăш патакки! Қам çитекенни пулнă мана ялта? Никам та? Вăрçă хыççăнхи çулсенче ку тăрăхри кашкăрсене кам тытатыта пĕтерчĕ? Эп — Ухатник Қавĕрли!.. Қашкăр амин сакăр çурине патшалăха леçсе парса кам преми илчĕ— эпĕ, Ухатник Қавĕрли!.. Хам çемьене мулкач какайĕнчен кам татăк тăратман? Қаллех эпĕ — Ухатник Қавĕрли!.. Э-э, çук-çук, сайра-пĕрре кăна тытатăп эпĕ мулкачне, ак, пахчари улмуççисене илене пуçласан. Хĕрхенетĕп, кĕске хӳресене. Чисти хĕрхенетĕп. Мăкăлт-мăкăлт сиксе пыраççĕ те сан умунта — эсĕ ăна тыт та пер, пăшалунти вилĕм пăрçипе хăнала... Шалккă пулса каять вара мĕскĕнсене... Чĕрчуна хĕрхене-

кен усал пулмасть вăл, ачамсем, усал пулмасть, çынна хĕрхенмен çын анчах усал пулать. Мана усал-усал теççĕ те, эп усал-и вара? Мĕн енчен усал, э?.. Калăрха, мана, мĕн енчен усал эп?.. Ывăла ача чухне патак çитернĕрен-и? Эп мар, ывăл усал ман... Амăшĕ çине алă çĕклет... э?»

Ваçça, ашшĕне машлатса итлесе ларакансҫер, вăл капла каланине илтсенех — чĕвен тăчĕ: «Атте!!!»

Вĕсем патне Акăнь йăкăртатса çитрĕ; «Мĕскер эсир, ашшĕпе ывăлĕ, çынсем умĕнче чипер пулăр-ха. Ĕçсе тултарнă, мурсем, иккĕшĕ те! Атьăр, атьăр, кайса çывăрăр».

«Ан чар мана, амăшĕ, ан чар. Веçех калап каламаллине,— тепĕр черкке тултарса ĕçсе ячĕ те ватă Саттул каллех чĕрĕлчĕ.— Эпĕ сана, Ваçça, аннӳ çине алă ан çĕкле, тесе миçе каларăм, сначăт, ан çĕкле, урлăях та уртăш патакки... Вĕçелис çине те ан çĕкле... Чаплă хĕр вăл Вĕçелис, чаплă... Хамăр инкеке, хĕрĕхрен иртсен тин çуратса пачĕ вĕт Акăнь... Хам пек ухатник тăвасшăнччĕ те эпĕ унтан, юратмасть сунара çӳреме... Мĕн, лаша пăхать те лашасене юратать тетĕн-и ăна? Кĕтсех тăр... Юратмасть вăл лашасене... Акă халĕ хама хăмсара пуçларĕ... Ватăлтăм та, вăй пĕтрĕ... Эп сана, эп сана хăмсарттарап!..»

Ватă Саттул чышкине çĕклесе, ывăлĕ енне ӳпĕнчĕ, Ваççи ăна çавăнтах кăкăрĕнчен çатăрласа тытрĕ: «Атте!!! Чарăн!!!» «Эй, ĕçсе çитнĕ ĕнтĕ, ĕçсе çитнĕ. Савăннипе пулĕ-ха вăл, савăннипе»,— чĕвĕлтетрĕ Акăнь, ывăлне ашшĕне чăлана кĕртсе пăрахма хушса.

Ваçça ватă Саттула хăрах хулĕнчен хĕстерчĕ те туլалла танкăлтаттарса илсе тухса кайрĕ. Ватă Саттул, ывăлĕ аллинчен вĕçерĕнес тесе, текех ĕнĕрешрĕ: «Эп сана хăмсарттарап! Эп сана-и!.. Эсир мана пĕлместĕр-ха, Ухатник Кавĕрлине... Эп сана-и, урлăях та уртăш патакки!»

Хăнасем сайралнăçемĕн сайралансах пычĕç, килĕсене саланса пĕте пуçларĕç. Арăмĕсене паçăрах ачисем патне ăсатнă арçынсем кăна, хăшĕ-пĕрисем, тӳпелесе çитерейменнисем, стакан кĕткелесе ларчĕç-ха.

«Э-э, хĕрĕм, эсĕ те ĕшентĕн пулĕ, туй ĕшентерет вăл, атя-ха сан валли те вырăн сарса хунăччĕ, кăтартам»,— тесе Акăнь Гальăна та хăйпе илсе тухса кайрĕ.

Вĕçленчĕ... Ку таранччен, паянччен, кĕçĕрччен, çак

самантчен тăсса-тăсса пынă ăш хыппи вĕçленчĕ. Пĕтрĕ... Вĕçелисăн чăтса-чăтса пынă халĕ, ту тăрринчен вăркăнакан юр капламĕ пек, ишĕлсе-вăйăнса анчĕ. Хăйне нимĕн чухлĕ те хĕпĕртететтермен туй шавĕ те ăна сасартăках ют пулса тăчĕ. Ваççапа, «упăшкипе», «хĕвве хупăнас» вăхăт ним шелсĕр çывхарса-çывхарса килнине чĕрипе, ӳт-пĕвĕпе туйса илсен, вăл тарăхса, кĕвелĕкленсе, хаярланса кайрĕ. Хăй мĕн тунине тĕплĕн ăнланса илеймесĕрех, Вĕçелис, кĕпе вĕççĕнех, çарамас, картишне чупса тухрĕ, лупас хыçнелле иртсе, хир еннелле пĕр-ик утăм турĕ, каялла çаврăнса пăхрĕ, унтан, вĕçнĕ пек, карта урлă каçса, масар тĕлĕпе, тăвалла, пахча хыçĕсемпе, лаштра юман патнелле ыткăнчĕ. Пуçĕ унăн нимĕн çинчен те шухăшламарĕ, шалти темĕнле курăнман, сиси-сисми вăйĕ кăна Вĕçелиса унталла, Петĕр кĕтме пулнă çĕрелле, васкатрĕ те васкатрĕ. Касса-касса вĕрекен çиле те, хăрăм пекех хура каçа та асăрхамарĕ вăл, кушăрхама, хытма ĕлкĕрнĕ шăн тĕмескесенчен такăна-такăна, ăнтăлчĕ те ăнтăлчĕ. Тура, Купи карчăк тĕлĕнче, лаштра юман хӳттинче пек туйăнчĕ ăна халь хăй кĕтсе-кĕтсе ывăннă, сасартăк йăл çиçсе илнĕ çăлăнăç... Ĕмĕт туллин вирхĕнмесен, йăл çиçсе илнĕ çăлăнăçĕ кăвар кайăкла, алăран вĕçсе тарас пек, Вĕçелис пӳлĕне-пӳлĕне, халтан кайса чупса çитрĕ лаштра юман кутне... Çитрĕ те — Петĕре курчĕ... Юман кутне çитме ик-виç утăм пек юлсан, тăп чарăнса тăчĕ... Петĕр, йывăç çумне сĕвеннĕ те, Вĕçелис чупса килнĕ енне, купăс сасси кассăн-кассăн илтĕнекен енне, килĕсене саланакан ӳсĕр çынсем урмăшса юрлакан енне чĕмсĕррĕн, сӳрĕккĕн пăхса тăрать. Вĕçелис ыткăнса çитсен, Петĕр, çумăрпа чылай исленсе выртнă кăвайт чăл-чал тивнĕ пек, тĕксĕммĕн чĕрĕлчĕ.

— Эпĕ таврăнтăм... Вĕçелис,— терĕ вăл пăртакран, ун енне паçăрхи пекех пĕр утăм та тумасăр. — ...Эсĕ мĕнле пурăнатăн?..

— ...Пĕтрĕм эпĕ, Петĕр,— чĕтрене-чĕтрене тухрĕ Вĕçелис сасси.— Пĕтрĕм... Петĕр!..

Вĕçелис, чун тĕпĕпе хуллен йынăшса ярса, савниййĕ патне ыткăнчĕ, ăна ыталаса илчĕ, кăкăрĕ çумне лăпчăнчĕ, пичĕпе унăн çамкине, куçне, пит çăмартине, тутине сĕртĕнчĕ. Вĕçелис куçĕнчен куççулĕ шăпăршăпăр юхрĕ.

— Мӗнле-ха капла, Вӗçелис?! — савниӗ куççульне асăрхамарӗ те пулас каччă.— Мӗнле-ха?.. А эпӗ сана килместех пуль, тенӗччӗ...

— Килтӗм эпӗ, Петӗр, килтӗм... Пултараймастăп урăх... Чăтăм çук...

— Шаннăччӗ эпӗ сана, Вӗçелис, шаннăччӗ, хамран та ытларах шаннăччӗ... Таврăнатăп та, савнийӗм, Вӗçелисӗм, кӗтсе илме тухӗ. тенӗччӗ... Телее ӗмӗтленнӗччӗ...

— Çăл мана, Петӗр... çăл... пӗтетӗп эпӗ, пӗтетӗп сансăр...,— пушшех те эрленчӗ Вӗçелис.

— Эсӗ мана Саттулпа улăштартăн эппин... Мӗн пулнă, кала, ан пытар... Тен, ăнланăп...

Вӗçелис, капла ыйтасса пӗлнӗ çӗртенех, шарт! сиксе, каялла чакса тăчӗ:

— Нимӗн те пулман.. Нимӗн те... Пулма та пултарайман... Ан ыйт...

— Çапах та... Улталамасăр... Чăннипе... Сан кăмăлна пӗлетӗп эпӗ, Вӗçелис... Тӗрӗссине каламастăн эсӗ... Эпир вӗт юрату тупи тунăччӗ, Вӗçелис?.. Мантăн-им, икӗ çул каялла кăна... Çак вырăнта...

— Юрату?.. Тупа?.. Йывăр çын эпӗ, Петӗр!..

Çил те самантлăха тăн-н! хытса тăнă пек пулчӗ.

— Юратмастăп эпӗ Саттула, юратмастăп... Ăнланатăн-и, юратмастăп!.. Саттулпа мар, урăххипе, урăххипе улталантăм эпӗ... Ăртиванпа... Çухалса кайрăм... Сан юратăвунтан, тупаран хăраса ӳкрӗм пулмалла, Петӗр...

Каш! кашласа илчӗ йăмра тăрри. Ӳксе пӗтеймен çулçăсем, пӗвене татса кайнă хыççăн тӗпне юлнă уланкăсем пек, çăтăл-çатăл турӗç.

Петӗр, шалкăм çапнă чухнехилле, сасартăк çемçелсе те йăмшакланса, Вӗçелиса ыталаса илчӗ, хыттăн-хыттăн чăмăртарӗ, ăна, ăсран тайăлнăн, мăйӗнчен, янахӗнчен, тутинчен, сăмси тăрринчен, куç хăрпăкӗсенчен чарăна пӗлми чуптурӗ те чуптурӗ:

— Ах эсӗ, ăссăрскер... Апла хăтланма юрать-и вара... Каламаллаччӗ, çырса пӗлтермеллеччӗ... Ăнланман пулăттăм-и вара эп?.. Ăнланнă пулăттăм... Ăнлантăм-çке ак... Ах, мӗн туса хутăн-ха эсӗ, мӗн туса хутăн!.. Кирек мӗн сиксе тухас пулсан та, ялан пӗрле, иксӗмӗр сӳтсе явăпăр, тенӗччӗ-çке эпир, Вӗçелис... Кирек те мӗн сиксе тухас пулсан та... Эсӗ ан йӗр, ан

йĕр... Лăплан, лăплан... Куççульпе мĕн тăвайăн ĕнтĕ халь... Мĕн кулянмалли пур, чĕрĕ-çке иксĕмĕр те... Лăплан-ха эсĕ, лăплан... Ан макăр... Улталаннă пултăр... Вара мĕнех, унпа тĕнче çути пĕтсе лармасть вĕт-ха... Ачине те пăхса ÿстерĕпĕр... Пирĕн хамăрăн та ачасем пулĕç, Вĕçелис... Ах, ăссăрскерĕм, ăссăрскерĕм... Саттула та каласа ăнлантарăпăр... Акă ыранах, паянах, кĕçĕрех, халех... Эпир телейлĕ пулатпăр, Вĕçе...ли-ис...

Тÿрккессĕн те ыраттарса, çÿçентерсе те сывлăша пÿлĕнтерсе, темĕн вĕçлеки шăтарса кĕчĕ Петĕр çурăмне. Каччă сулăна-сулăна кайрĕ, куçĕ унăн хурала-курала, тĕтрелене-тĕтрелене, вăйĕ чакнăçемĕн чакса килчĕ, ÿкиччен вăл, шăлне çыртса, пуçне хуллен-хуллен каялла пăрчĕ те хăй пичĕ тĕлĕнчех Саттул Ваççин чарăлса тискерленнĕ куçĕсене курчĕ...

— Ы-ых, сĕтĕрĕнчĕксем, йытăсем, кĕççе питсем!.. Мана хур тума-и! — ян-ян янăрарĕ çĕрлехи урамра Саттул Ваççин сасси.— Манран мăшкăллама-и?!.

Ваçça халĕ шăрчĕсене тăратнă кушак аçилле хаяр та киревсĕррĕн курăнчĕ. Куçĕсем унăн çутăллăн-симĕссĕн ялкăшрĕç. Чĕрипе сиснĕскер, вăл, Вĕçелис çухалнă-çухалманах, Петĕр яла таврăннине пĕлекенскер (Галя ăнсăртран персе янă сăмах тăрăх), унталла-кунталла пăхкаларĕ те, хăй мĕн тунине хăй те ăнлансах çитерейменсĕр, кĕлетри аш касакан çĕççе илсе чиксе, лаштра юман еннелле урăм-сурăм тапса сикрĕ. Эрех кÿпсе тултарнă Саттул, юман айĕнче Вĕçелиспа Петĕр ыталашса тăнине курсан, Петĕре ĕмĕр вĕчĕхсе пурăнаканскер, хăй авланас каç та лешĕ ун телейне вăрлама тапăннипе талăрса кайнăскер, путара-путара пурăннă хаярлăхĕ туххăмрах йÿççе-пĕрхĕнсе тухнипе, салтака çурăмран, сулахай енчен, чĕре тĕлĕнчен нимĕн шутласа тăмасăр пĕтĕм сулăмпа яшлаттарчĕ...

Вĕçелис, Петĕр хуллен-хуллен шăн çĕре тÿннине, тата Ваçça аллинчи çĕççе асăрхасан, мĕн пулса иртнин хăрушлăхне ăнланса, шари çухăрса ячĕ.

Саттул та, пĕр саманта супăшнăскер, пĕрре тÿнекен Петĕре, тепре тĕлĕннипе шанк хытнă Вĕçелиса тĕсесе тăчĕ-тăчĕ те тăрук урăлса кайрĕ. Çĕççи, юнланнă пÿрнисем хушшинчен вĕçерĕнсе, кĕмсĕркке тăпра çине нăч тăрăнса ларчĕ...

Хăштик-хăштик сывласа, Галя чупса çитрĕ...

Купи карчăк, качакине çавăтса, урама кăштăртатса тухрĕ...

Йывăрпа, хĕнпе кĕрхи кун сĕвемленет.

## Юлашки çавра

### Туй хыççăн

Шăнтса лартрĕ.

Темиçе эрне юрлă-çумăрлă çанталăкпа аптранă çĕр тăн-тăн хытрĕ. Кăнтăрлапа лапка-лапка юр тăкăнма тытăнчĕ. Чавка пуçĕ пек çăмламас юр пĕрчисем, шăн çĕре амантасран шикленнĕ евĕр, куç аничи лаптăкра, вĕл те вĕл вĕлкĕшрĕç. Тавралăх, чике тăршшĕ старикĕн шурă сухалĕ пек, шуррăн-шуррăн шуралчĕ...

Çĕнĕ вилтăпри те лапка-лапка юрпа хăвăрт витĕнсе пычĕ.

Пĕр кана шурă юмах, тӳпене те, çĕре те мантарса, тăкăнчĕ те тăкăнчĕ... Каçалапа юр сайралчĕ. Çил тухрĕ. Çил вăйланнăçемĕн вăйланса пычĕ. Кусăркка тапранчĕ. Çĕр çуммипе, шăмшака витерсе, вăйăн та вăйăн вĕрчĕ вăл, лаçăр çунă лапка-лапка юра çырма-çатрасене хăваларĕ...

Çĕнĕ вилтăпри умĕнче хура тумпа хăр-тăлăххăн тăракан Вĕçелис, лапка-лапка юрпа лапкамах витĕннĕскер, халĕ ни касса-касса вĕрекен çиле, ни масар çинчи ăшĕсене вĕçтерсе каш та каш кашлакан йывăçсене те асăрхамарĕ, туймарĕ. Унăн чĕри, ăстăнĕ, пĕтĕм ӳт-пĕвĕ, кĕтмен хуйăхпа пăрланса та чăлханса ларнăскер, кĕтмен инкеке чăнлăхран темĕн чухлĕ кăларса пăрахас-пăрахас тесе тăрăшрĕ пулин те — пултараймарĕ. Ку чăнлăх та — кĕтмен инкек — хĕвел пек, уйăх пек, çумăр пек, çил пек, кайăк сасси пек, çын калаçни пек — пĕтĕм чĕрĕ çутçанталăк пек — çапах та чăннăн пырса çапаймарĕ-ха ăна. Лаштра юман айĕнче сасартăк шелсĕр те чĕрене çурса тăрăслаттарнăскер, ку синкерлĕх, чăн пулман пек, таçта, чун тĕпĕнче, чĕрĕлес-чĕрĕлес кăвайт пек, шанчăк парса, хура хурлăха мантарса, йăсăл та йăсăл тĕлкĕшрĕ... Çук, çук, Петĕр ниçта та кайман, вилмен Петĕр, вăл вилме те, ниçта та кайма пултараймасть. Акă вăл Вĕçелис умне килсе тăрать те, вĕсем вара иккĕшĕ,

алла-аллăн тытăнса, кулса-савăнса, туй кĕрекине чупĕç, хăйсен туйне ларĕç... Леш туйĕ тĕрĕс пулман вăл, йăнăш пулнă, илтетĕн-и, Петĕр?!. Йăнăш пулнă!.. Эсĕ ял çыннисене тĕлĕнтермелле капăр-капăр, эрешлĕ-эрешлĕ çуртсем тăвасшăнччĕ, çав çуртсенче телейлĕ-телейлĕ çемьесене пурăнтарасшăнччĕ... Кил, Петĕр, тăр!... Мана никам та, никам та кирлĕ мар, эсĕ анчах кирлĕ, Петĕр!..

Вĕçелис тăнлать, тĕнчере çук япалана тăнлать. Мĕн вăл çав япала, Петĕр-и, хăй-и, е çутă тĕнче?.. Аталанать, аталанать Вĕçелисра темĕскер, шанчăк, ĕненӳ хĕлхемĕ чĕртсе, чăл та чăл хыпа-хыпа илет. Мĕн вăл çав темĕскер — Петĕр-и, хăй-и, е çутă тĕнче? Е куççуль витĕр сĕвемлене-сĕвемлене выртакан пурнăç сĕвемĕ кăна?.. Тăнлать Вĕçелис, тăнлать, хăй те сисмесĕр çав темĕскере тăнлать... Тен, ку тăнлу — Вĕçелисра кайăк пек халь-халь турат çинчен пăр! вĕçерĕнсе каясла чăмăртанса çитнĕ вĕр-çĕнĕ чĕре кăртлатăвĕ?..

Шăлать кусăркка, çĕр çуммипе вăйăн та вăйăн чӳхенет...

Купишĕн анчах тĕнче тикĕс — хĕвел тухать те анать, ир пулать, çын çуралать те çĕре кĕрет...

Хуйăхлă масара каллех тепĕр виле кĕрсе выртрĕ... Пурăнса курнисем — утмăлтан, çитмĕлтен, сакăрвуннăран иртнисем, пурнăç тути-масине çителĕклех астивнисем, ватăлăх çитнисем — вăхăт еккинчен калт-калт катăла-катăла ӳкнине ăнланать-ха Купи, анчах та пурнăç сулĕпе тин кăна утма хăнăхса пыракан яш-кĕрĕм кĕре-кĕре выртнинениепле те ăнланаймасть. Çук, ăнланаймасть. Пурнăçăн йĕрки пулмалла-çке-ха унăн, тет кинемей — çыннăн çуралмалла, çитĕнмелле, çитĕнсе çитсен çемьеллĕ, ача-пăчаллă пулмалла, мĕн ватăлăхчен, сывлăх чанĕ çапичченех ыр курса пурăнмалла. Çук-вĕт, ăнманĕ, хăйĕннех тăвать — чупма-чупма, вирхĕнме-вирхĕнме хатĕрленнĕ çилçунатах, ура хурса, тăрăнтарса антарать, Тракка пек çăлтăр куçлă яш-кĕрĕмсенех... Тракка хыççăн та çакăнта мĕн чухлĕн лăпланса выртрĕç ĕнтĕ. Пурне те астуса та çитереймест Купи... Вăхăчĕ иртет те иртет, çĕр чăмăрĕ кунçул çиппине хутăрать те хутăрать... Çакă анчах ăшăтса тăрать-ха Купие: çĕре кĕнисем те, çуралса кун курнисем, хĕвелпе пĕрле чĕррисемпе çаврăнаççĕ те çаврăнаççĕ... Ку çаврăнун пуçламăшĕ те, вĕçĕ-хĕрри те

курăнмасть. Кĕрхи кусăркка пекех вăл таçтан лерен, Купи пĕлмен енчен, вăйăн та вăйăн çĕмĕрттерсе килет те таçта лерелле, каллех Купи пĕлмен çĕрелле, ĕрĕхтерсе çухалать...

Çил вăйланнăçемĕн вăйланчĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл, пур япалана та хăйпе тăпăлтарса каяс пек, туртса-туртса вĕрчĕ. Тĕттĕмленнĕçемĕн тĕттĕмленсе пычĕ. Купи, хăй хӳттинче чĕтресе тăракан качакине çавăтрĕ те, шăн çĕре хăнтăртаттарса, ял еннелле танккарĕ. Текех, хуралтă кĕтессисенчен тумла шăпăртатса юхма пуçличченех, килмĕ кунта Купи, хĕлĕпех, ăшша хăвалакан çил мăръере епле ӳленине итлесе, пӳртре шăппăн-шăппăн ларĕ.

Ыран акă, ире хирĕç, çакнашкал кусăркка хыççăн, юр лаплаттарса çумалла, каймасла. Тăн-тăн хĕл лармалла, тавралăх чăлт шурă витĕнкĕçпе витĕнмелле.

Çак чăлт шурă витĕнкĕç йăшма, тумлам вăйĕпе хухма пуçласан тин карчăк, качакине çавăтса, курăк персе тухиччен янаварĕ валли лере кавлеме хул хушшине утă хĕстерсе, каллех масар çине утĕ. Унччен вăл масар еннелле утăм та тумĕ. Мĕншĕн тесен Купи, çĕр çинчи кашни чĕрĕ чун пекех, çуркуннене кăна юратать.

*1974*





# пăвапа элшел хутлăхĕ

## Çула пуçтарăнни

Малтан «хутлăх» сăмах пирки калам. Пирĕн вăхăтри чăвашсем ку сăмаха калаçура çине-çинех усă курмаççĕ те çавăнпа ун пĕлтерĕшне ăнлантарса хăварни вырăнлă пулĕ, тетĕп.

Г. Т. Тимофеев хăйĕн «Тăхăръял» кĕнекинче «хутлăх» сăмаха час-часах кĕрте-кĕрте ярать: «Эпĕ Атăлпа, Хусантан çӳлелле Чулхуласенчен (Нижнийрен) иртсе, Ярославле çитиччен кайнă та Чĕмпĕртен аялал-

ла Самара çитнĕ. Вăл хутлăхра...», «Элшелпе Кивĕ Мертлĕ хутлăхĕнче...», «Ялта тата хĕрпе каччă хутлăхĕнче... пĕр-пĕрин çинчен сăмах сараççĕ» тата ытти те, тата ытти те. Кĕнеке хыçĕнчи сайра тĕл пулакан сăмахсен çыххи-ушкăнĕнче «Тăхăръяла» пухса хатĕрлекенĕсем ăна çапла ăнлантарса панă: «хутлăх — хушă, тавралăх», тенĕ. Н. И. Ашмарин профессорăн вун çичĕ томлă словарĕнче тата çапла куçарса тĕслĕхсемпе çирĕплетсе панине вулатпăр: «Хутлăх — протяжение, расстояние, промежуток». («Пĕр вунă-вуннилĕк çухрăм хутлăхĕ çӳлĕ ту килет ялан та», «Хутлăхăмăр инçе, çӳрейместпĕр, килекентен салам ярсамăр», «Каям теттĕм савнине, тăшман кĕчĕ хутлăха», тата ытти те, тата ытти те. Пĕр сăмахпа каласан хутлăх «хушша, тавралăха, тăрăха» («Пăвапа Элшел тăрăхĕ») пĕлтерет. Кăçалхи июнĕн иккĕмĕш çурринче тытăс çулăмăр пирĕн шăп та лăп çавăнталла выртрĕ те ĕнтĕ — Сĕве тăрăхне, Пăвапа Элшел таврашне, Тăхăръял хутлăхне.

«Тăхăръял» тенине эпĕ пуçласа институтра вĕреннĕ чухнех илтнĕччĕ. Каярахпа, ун шăпи пирки пăшăрханса калаçкаланисем хăлхана кĕркеле пуçласан тата журналсенче çапăннă статьясене вуласан, çав «хамăр халăха тимлеме шухăш паракан» кĕнекене чун пек кун çути курасса кĕтеттĕмĕр. «Тăхăръял» хамăрăн тĕпчев институтĕнче алçыру халлĕн упранать-мĕн, унта «чăваш пурнăçне кăкăр ачинчен пуçласа ватăлса халсăрланнă çынсем таранах» тĕпченĕ имĕш. Авторĕ хăй — Г. Т. Тимофеев — Тĕрлемессем иккен, пурăнасса анатрисем хушшинче пурăннă та, вăл мĕн çырса хăварнисем вĕсем çинчен иккен. Халăхăн йăли-йĕркипе ĕçне-хĕлне, чун хавалĕпе сăмах вĕççĕн çӳрекен пултарулăхне кăмăл имĕпе тĕпчесе çырнă «Тăхăръял» кĕнеке 1972 çулта кун курчĕ. Халăх мулĕ, пуянлăхĕ халăха тавăрăнчĕ.

«Тăхăръял» кĕнеке сутлăхра курăнса кайнă-кайманах пирĕнтен кашниех ăна туянса, туххăмра, пĕрре ларса вуласа тухнă ĕнтĕ. Эпĕ те «Тăхăръяла» каçса кайсах вуласа тухрăм. Мĕн кăна пĕлместĕн пулĕ çав кĕнекерен. «Тăхăръял» — ĕлĕкхи чăваш пурнăçĕн энциклопедийĕ, темтепĕрĕ, тĕшши. «Чăваш çынни пĕрпĕринпе килте-йышра епле пурăнать?». Ăна пĕлме асăннă пайри ак çак сыпăка вулатпăр: «Кил тенĕ

çĕрте ватти пулать, çамрăкки пулать, ытти пулать, — тет Г. Т. Тимофеев.— Ваттисем хăйсен ĕмĕрĕсене ку таранччен пурăнса ирттернĕ. Вĕсем калаççĕ: «кирек епле пулсан та, эпир ку таранччен пурăннă», теççĕ: «пурăннă çĕрте ыррине те, усаллине те курнă, хамăра пурăнмалăх çавăн чухлĕ пурлăхăмăр пур, шĕкĕр турра», теççĕ: «малашне ĕнтĕ эсир ĕçлĕр, эсир тупăр, пирĕн пурлăхăмăра тĕп тумасан, хăвăр тата ун çумне мĕн чухлĕ те пулин хушсассăн, сире ачăрсемпе пурăнма çитĕ вара», теççĕ: «пиртен ырă курма пехил сире», теççĕ. Леш çемйисем ăна итлеççĕ, шухăшлаççĕ: «чăн та çав, пăятампа пăянам чухлĕ пулсан, пире те шĕкĕр турраччĕ», тет кинĕ; «атте-анне чухлĕ пуçтарсан, пире те çитĕччĕ», тет тата ывăлĕ. Çапла вара пурнăç пулать: çамрăкки ваттисене курса, ыттисем ăна курса пурăнаççĕ...»

Чăваш çыннийĕн тумĕ мĕнле? Каллех вулатпăр: «Чăваш килте ахаль çӳренĕ вăхăтра килте тĕртнĕ кĕпе тăхăнать, килте тĕртнĕ йĕм тăхăнать. Урана тăла чăлха тăхăнать, çăпата сырать. Унтан кĕркунне, çуркунне, ĕçе кайнă чухне, сăхман тăхăнать, хĕлле кĕрĕк тăхăнать. Тумланас тенĕ чух унтан аванрах тăхăнать. Пирĕн чăвашăн та кăçатăсем, сăран атăсем, сукна çипиркесем, путек тирĕ çĕлĕксем пур. Хĕлле сарă кĕрĕк тăхăнать, кĕрĕк çинчен симĕс пиçиххи çыхать, мăя шарăх çыхать: ытла илемлĕ чип-чипер çын пулса çӳрет...»

Ĕнтĕ чăваш çынни пĕр-пĕринпе килте-йышра епле пурăннине те, чăваш çынни мĕн тăхăнса çӳренине те пĕлтĕмĕр. Чăваш çыннин апачĕ мĕнлерех-ши тата, мĕн çиет, мĕнпе тăранса пурăнать вăл? «Чăваш апата тиркемест: çăкăр пулсан, ун çумĕнче мĕн те пулин çыртса е сыпса çимелли пулсан, нимĕн те кирлĕ мар. вара пире, тăранатпăр», теççĕ чăвашсем: «пыр хыççăн каяс мар», пырна пула выçă юлăн, тесе каланă авалхисем», теççĕ...»,— тет чăваш апачĕ çинчен «Тăхăръял» кĕнеке.

«Чăваш çынни ĕçре епле çӳрет» ятлă пайран тата тепĕр сыпăк илсе кăтартам: «Этем тенĕскер мĕн кĕçĕнтен ватăличчен ĕçлет. Кĕçĕнтерех чухне шăллусенейăмăкусене асту; ӳсерехпе ĕçе çыпçăн, çын çине кĕрсен, çынтан ан юл; ӳссе çитсе авлансан, каччă кайсан, ача-пăча ӳстер, пурнăç тăвассишĕн тертлен; ва-

тăлсан каллех «хам ӳстернĕ ачам-пăчамран усал сăмах ан илтем» те, ун чухне те ахаль ан лар, вăйă çитнĕ таран ĕçле». Чăваш çынни тертлĕ çĕр çинче ĕçпе пиçĕхсе, ĕçпе йăпанса ĕмĕрне иртте рни çинчен калакан çак сыпăк малалла авалхи чăваш хресченĕн ятне хывнă реквием пекех чуна хурлантарса тăрать. «Ĕмĕр çапла тертлене-тертленех иртсе каять,— тенĕ унта малалла.— Тертленнĕ хурушне ун çумĕнчен тĕнчере аранçĕ савăнăçĕ пулать. Çавсене курса, çавсене тӳссе-чăтса, савăнса-туса пурăнатăн вара. «Кунта тертленнĕ хурушне тата лере лайăх пулинччĕ», теççĕ чăвашсем: «пиртен лайăх çĕре кĕресси унта кайсан та пулмас-тăр», теççĕ тата: «ĕççынни, çылăха нумай кĕрсе пĕтетпĕр эпир», теççĕ...».

Кунта эпĕ кĕнекери ик-виçĕ сыпăка анчах илсе кăтартрăм. Кусемсĕр пуçне унта тата мĕн чухлĕ паха ӳкерчĕк, сăнлăх, чăваш пурнăçне витĕр курса тĕрĕс хаклама пĕлнĕ тĕслĕхсем, тăван чĕлхен шăнкăр-шăнкăр илемĕ. Шур сухаллă мучипе иртнисем çинчен шăкăл-шăкăл калаçса ларнă пекех вăл «Тăхăръял» кĕнеке. Пурнăçĕ хĕсĕк, йӳçĕллĕ-тутăллă пулнă пулин те, тиркешмен чăваш, пӳрнĕ кунçулĕпе савăнма, çырлахма пĕлнĕ, халăхпа пĕрле савăннă, чĕре патне пыракан юррисене юрланă, юмах-халап хайланă. «Тăхăръял» чăвашĕ тĕрлĕ-тĕрлĕ уяв-праçник иртте рнĕ: Пукравĕ, Қасанскийĕ, Михайла праçникĕ, Хĕллехи Микула, Кĕшернийĕ, Çăварнийĕ, Чăваш калăмĕ, Çимĕкĕ, Питравĕ те тата ытти те, тата ытти те; тĕрлĕ-тĕрлĕ юрă çавăрнă: ĕçкĕ-çикĕ юррисем, туй юррисем, салтак юррисем тата ытти те, тата ытти те; тĕрлĕ-тĕрлĕ халап юптарнă: Эпир ĕлĕк асаттепе вăрмана вутта кайни, Лăпăр, Чăваш хĕрĕпе вуникĕ распульник, Тăм хырăм, Çĕр çине шыв тулни тата ытти те, тата ытти те.

Кĕнекипе паллашнă хыççăн Тăхăръял хутлăхĕ мана Сарă кун çĕршывĕ пек туйăнса тăра пуçларĕ. Ячĕ тата хăлхара йĕс пек чĕнкĕлтетсе ирĕлчĕ: Тăхăръял, Тăхăръял, Тăхăръял... Акă çав çĕршыва кайса курма мана та телей пӳрчĕ. Чăваш писателĕсем — Н. Дедушкин, А. Галкин, А. Қăлкан, А. Воробьев тата В. Ухли — Тутар республикинчи Пăва районне «Туслăх каçĕсем» иртте рме каяççĕ. Эпир те, М. Гаврилов кинооператорпа иккĕн, телевиденире ĕçлекенсем, вĕ-

сен ушкăнне хутшăнтăмăр. Писательсен ĕçĕ — вулакансемпе тĕл пулса калаçасси. Пирĕн ĕç — çав тĕлпулусене кино çине ӳкересси. Çул — Пăва хулине.

## Пăва

Пăвана эпир тухнă кунне каçкӳлĕм çитрĕмĕр. Çулĕ Шупашкартан тăршшĕпе тенĕ пекех асфальт пычĕ. Çавăнпа Пăвана пырса кĕнине те сисмерĕмĕр. Елчĕкпе Пăва хушши кăна тумхахлăрах пулчĕ. Унта — шоссе çул.

Шăрăх. Пăчă. Кунти çĕр çине çуркуннерен пе те тумлам çумăр ӳкмен иккен. Машина хыççăн тусан пĕлĕт пек парăлтатса юлать. Çул хĕрринчи хура тăпра çине пуссан — ура пакăлчак таран пашт! анса каять. Тусан — кĕл пек. Вĕри.

Хули ку, Пăва, мана хамăрăн Çĕрпӳ евĕрлĕрех туйăнчĕ. Сарлака урам пăт-пат кăна курăнкалать, йывăç пӳрт нумай вара. Ик-виçĕ хутли те пур. Ку ĕнтĕ хулан çĕнĕлĕх палли. Калăпăшĕпе анчах пирĕн Çĕрпӳрен икĕ хута яхăн та ирттерет пулĕ Пăва (ытларах пулмасан!). Хула хĕррипе чукун çул иртет, ун тăрăх таçтан-таçтан та пуйăс иртет.

Пăва хулине В. Краснов-Асли писатель «Шуррисемпе çапăçни» асаилӳсен кĕнекинче çапла сăнласа парать: «Пăва — мещен хули. Лăпкă, тӳлек юхакан Хырла ятлă çырма хĕррипе сарăлса кăмпаланса ларнă вăл. Унта икĕ чиркӳ, виçĕ мечĕт пур. Вĕсем, лăпкă пурăнакан мещенсемпе суту-илӳçĕсен чĕрисене лăплантарма, лăпчăнса ларнă пӳртсенчен çӳлелле хăпарса, çӳлтен çĕрелле пăхса лараççĕ.

Эрнере пĕрре, эрнекун, кăвак çутăпах Пăва шавлама тытăнать. Пур урамсене те пасар халăхĕ тулать те, хĕвел анас вăхăтра тин саланать. Кайран вара чухăнсен ачи-пăчисем, чăх-чĕп, сысна, качакасем пасар тăккаланчăкĕсене пухаççĕ. Уяр кун вăрахчен çапла тусан йăтăнса тăрать, анчах вĕсем ăна пăхмаççĕ, шыври пулăсем пек, тусан çинче ишеççĕ.

Çак хула нумай ялсем çине хуçа пулса шăмарса пăхать. Пăхăнтарать».

Ку — Пăван унччченхи, революциччченхи сăнĕ. Унăн хальхи пит-куçĕ пирки маларах пăртак каларăм ĕнтĕ. Тепĕртак калам.

Пăва — район центрĕ. Ĕлĕк кунта, уезд хули пулнă чухне, промышленность тенĕ япала хăйи-хăйми анчах сăмсаланам пекки тунă. Хулипе те икĕ хăма çуракан завод (çирĕм ултă çын ĕçленĕ унта), пĕр кирпĕч завочĕ, пусма пĕветмелли çирĕм пилĕк кил, кăшман пылĕ юхтармалли икĕ çурт (заведени) кăна пулнă. Эрех завочĕсем вара харăсах виççĕ таран саркаланса ларнă. Тăватçĕр çитмĕл тăвата арман аварнă. Пирĕн вăхăтра Пăва — ку чухнехи тăн-тăн пурнăçпа пуранакан вăйпитти хула. Ӳсет, сулмакланать вăл. Халĕ кунта хула ĕççыннийĕ валли темиçе мунча, прачечнăйсем, столовăйсем, ача сачĕсемпе яслисем, Культура керменĕ, библиотекăсем пур. Пăвасен чапĕ — сахăр завочĕ. Вăл талăкне 15 пин центнер кăшман йӳçĕтсе сахăр туса кăларма пултарать. Пĕр-икĕ çул каялла кăна-ха çĕпре заводне хута янă. Ăна сахăр завочĕ валли çĕпре йӳçĕтме ятарласа туса лартнă. Тата ытти заводсемпе фабрикăсем те темиçе хулара: апат-çимĕç комбиначĕ, промышленность комбиначĕ, сĕт-çу комбиначĕ (вăл хăй виçĕ заводран тăрать — çу, чăкăт тата сĕт-турăх завочĕсенчен). Вак-тĕвек предприятисем мĕн чухлĕ тата. Вĕсене шутласа чăрманма та кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен, вĕсем пурте çынсем валли, ĕçлекен халăх валли тунăскерсем.

Халĕ Пăва пирки пуçланă сăмаха Пăва пиркиех чуптарам. Ман алла Пăва районĕн историйĕ çинчен калакан материалсен пуххи лекрĕ. Çавăнтан вуласа пĕлнине сире те, тусăмсем, кăштах каласа парам.

Пăва — ватă хула иккен. Часах вăл икçĕр çул тултармалла. 1780 çулхи сентябрĕн 15-мĕш кунĕнче Иккĕмĕш Кĕтерне патша Афанасово ялĕнчен хула туса хурасси çинчен указ кăларттарать. Гербĕ çине емешĕл уй питтинче тăракан кĕмĕл сурăх ӳкерсе хуртарттарать. Çакă вăл ку таврара выльăх-чĕрлĕх ĕрчевлĕ иккенне пĕлтернĕ.

Çапла тума Иккĕмĕш Кĕтерне патшана мĕн хĕтĕртнĕ-ха? Емельян Пугачев ертсе пыракан хресчен вăрçи патшапа ун хӳрешкисене вилеслех хăратса пăрахнă. Майра патша, хăрана ернĕскер, халăха тата пусмăрлама, унăн аллине сенĕк-хĕç йăтмалла мар сăнчăрласах лартма, тĕрлĕ вырăнта çĕнĕ кĕпĕрнесемпе уессем тутарттарать. Çĕтĕк сăхманлă хресчен тек çăварне те ан уçайтăр, тенĕ ĕнтĕ вăл хăй ăсĕпе. Чĕм-

пĕр кĕпĕрнипе Пăва уесĕ те çавăн чухне пуçтахланса-каппайланса лараççĕ. Хура халăха хĕсĕрлеме темĕн-темĕн тĕрлĕ кантурпа çурт-йĕр туса тултараççĕ Пăвара: чиркĕвĕ, мечĕчĕ, сучĕ, магистрачĕ, благочинни управи, уес хысни, дворянсен опеки... тата ытти те, тата ытти те.

Тепĕр аллă çултан Пăвари хуçасем кунта Пукрав ярмăркки уçтараççĕ. Пукрав ярмăркки, çуллен сентябрĕн 25-мĕш кунĕнчен пуçласа октябрĕн 5-мĕш кунĕччен пыраканскер, пасар халăхĕнчен хысна валли нумайрах укçа сăптăрма кирлĕ пулнă. Пуянсем çавăнпа ăна çулсеренех ратланса ирттернĕ.

Ярмăркка кунĕсенче пĕчĕк хула çурхи шыв пек явăнса-кĕрлесе тăнă. Кунта Хусантан, Чĕмпĕртен, Улатăртан, Çĕрпӳрен, Шупашкартан, Теччĕрен тĕрлĕ тĕслĕ купса услам тума киле-киле тулнă. Тем те тухнă сутлăха: сурăхĕ, качаки, сысни, чăххи-чĕппи, хурĕ-кăвакалĕ, кăркки, ашĕ-пăшĕ, пĕçернĕ какайĕ, пылĕ, сĕчĕ-çăвĕ, эрехĕ-сăри, çăнăхĕ-кĕрпи, çăкăрĕ-кулачĕ, тăварĕ, пĕремĕкĕ-шушки, кĕлентĕрĕ, канахвичĕ, пуртти-пăчки, наструкĕ, сави, ыри, кĕрепли, сенĕкĕ, кĕреçи, урапи-çуни, тукунĕ-çави, çурли, çĕççи, пăявĕ-хăмăчĕ, йĕнерчĕкĕ, тилхепи, тикĕчĕ, пусми-таварĕ, пиншакĕ-кĕрĕкĕ, кĕпи, тӳми, шăрçи, шĕшли, çăпати...

XIX ĕмĕр вĕçне Пăвана хула тĕсех кĕме тытăнать. Сарăлать вăл. Çĕнĕ урамсем ӳсе-ӳсе лараççĕ. Ку вăхăт тĕлнелле унта 651 кил шучĕ пулать. Пурăнакансен йышĕ — 5 пин те 759 çынна çитет. Вĕсенчен 130-шĕ — вырăнти гарнизон салтакĕсем, тем-тем иксе тухасран мещен-сутăça хӳтĕлекенсем. Урамсенче утлă полици сиктерсе çӳрет, кăртавуйĕ каçăрălса тăрать. Хула варринче чул чиркӳпе йывăç мечĕт, тăррисене пĕлĕтелле кăнтарса, иртен-çӳрене сехĕрлентерсе лараççĕ. Чиркĕвĕнче пупĕ, хура халăха турра ĕмĕр тӳрĕ пурăнма хистесе, тăрăша-тăрăша кĕлтунă, мечĕтĕнче — çав сулăмпах меçин аллаха пуççапнă...

Пăва — революци тивлетне тăшманран çăлса хăварма пăшал тытса хӳтлĕхе çĕкленнĕ хула. Пăва таврашĕнче шуррисемпе пулса иртнĕ хаяр çапăçусенче революцин нумай шанчăклă салтакĕ пуçĕсене хунă. Хура тăпра хĕрлĕ юнпа пĕвеннĕ. Танмар тытăçусенче пирĕн чăваш халăхĕ лайăх пĕлекен, коммунистсен партин Пăва уесĕн организацине йĕркеленĕ Иван

Сергеевич Космовскипе Петр Егорович Крепков комиссар паттăрран çапăçса вилнĕ..

Хĕвел хĕртсе пăхать. КПСС Пăва райкомĕн çурчĕ тăрринчи хăмач ялав, революци ĕçĕшĕн пуç хунă паттăрсен хĕрӳ юнĕ ахаль тăкăнманнине, вĕсен ĕмĕтне паянхи хастар халăх пурнăçа кĕртсе пынине пĕлтерсе, мăнаçлăн вĕлкĕшет...

Пумаях пулмасть кунта кирпĕчрен çĕнĕ хăна çуpчĕ туса пĕтернĕ. Виçĕ хутлăскер вăл. Çĕр çĕрлеме çавăнта чарăнтăмăр эпир. Вырнаçнă чух кулăшла пĕр «пăтăрмах» та пулса иртрĕ. Кăтартнă пӳлĕмсене пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн саланса пĕтнĕччĕ ĕнтĕ пурте. Эпир кăна, Константин Петровпа иксĕмĕр (вăл Хусанта ĕçлесе-çырса пурăнать, Пăвана Шупашкартан килнĕ тусĕсемпе туслăх каçĕсене хутшăнма çитнĕ), черет хӳрине юлнăскерсем, тăратпăр çапла, ураран урана пускаласа, хамăра черет ĕлкĕрессе кĕтсе. Пирĕн умра В. Ухличчĕ. Ăçта каймалли пӳлĕмĕ те паллăччĕ ĕнтĕ унăн. Унччен те пулмарĕ çӳлтен А. Воробьев вашкăртса анчĕ.

— Мана сирĕнпе ячĕç-ха. Атя, ертсе кай, Элекçей,— тет Ухли Воробьева, чăматанне çĕклесе, хăйĕн хăш пӳлĕме каймалли уççи-хуппи палăрсан.

— Туртмастăнччĕ-и-ха эс? — пат ыйтрĕ Алексей Александрович манран, Ухлие асăрхаманçи пулса.

— Çук-ха,— тетĕп.— Пикенеймерĕм.

— Эсĕ тата мĕнле? — К. Петров енне вăрт çаврăнчĕ Элекçей.

— Мĕн эсĕ, Элекçей,— сĕтĕрттеререх калаçать Кĕçтук.— Хам мар, атте те туртман ман. Çав йыт çимен япалана çăвара хыпаппи!

— Апла иксĕр те ман хыççăн утăр. Эсĕ, Владимир Васильевич, (ку — Ухлие пулчĕ) туртакансемпе вырнаç, эппин. Пирус тĕтĕмĕн шăршине чăтма пултараймастăп, кăкăра кĕçĕттерет,— терĕ те А. Воробьев пусмапа хăпарса та кайрĕ. Эпир, Кĕçтукпа иксĕмĕр, пĕрпĕрин çине кăн-кан пăхкаласа илтĕмĕр те, портфельсене йăтса, А. Воробьев хыççăн хăпарса кайрăмăр. Çапла тăваттăн лекрĕмĕр пĕр пӳлĕме, «туртманнисен» пӳлĕмне: А. Воробьев, А. Кăлкан, К. Петров тата эпĕ пултăмăр. «Тата тепри, «туртманни», А. Галкин кампа вырнаçкаларĕ-ши?»—шутласа илтĕм, кусене курсан.

Вăл Н. Дедушкинпа пĕр пӳлĕмре иккен. Эпĕ, «Николай Степанович туртатчĕ-и — туртмастчĕ-и çав»,— текелесе шутлакаласа çӳренĕ-çӳренĕ те, çул çинчи тусана кăшт-кашт тасаткаласа илнĕ хыççăн, канса илем тесе вырăн çине тӳнсен, кăтăш пулах кайнă. Куç уçнă çĕре хĕвел те анса çитнĕччĕ. Хăна çуртĕнчи буфетра чейпе (сăмаварĕ чашкăрса ларать) уни-куни кăп-кап хыпкаларăмăр та Культура çуртне тухса утрăмăр.

Тутар писателĕсем те çитсе тăчĕç. Вĕсем те Пăвана Хусантан туслăх каçĕсене ирттерме аннă. Икĕ халăх çыравçисем пĕр-пĕрне аван пĕлеççĕ, тĕл пулнă-пулманах пĕртăвансем пек ыталашса, шăкăлтатса калаçса кайрĕç. Мĕнле çырнисемпе кăмăлсем-хавалсем, мĕн çырнисемпе çырассисем, пĕлĕш-тăвансен сывлăхĕсем, Хусанĕпе Шупашкарĕ еплерех кĕрнекленни пирки юхрĕ те юхрĕ екки сăмах.

Тĕттĕмленчĕ. Халăх пухăнса çитрĕ. Туслăх каçĕ пуçланчĕ. Эпĕ кунта туслăх каçĕ мĕнле иртнине çырса-каласа тăмăп, вăл мĕнле савăк, çĕкленӳллĕ кăмăлпа иртнине эсир хăвăрах чухлама кирлĕ: икĕ тăванла халăх литературин çыравçисем пĕрле килнĕ-çке! Эпĕ кунта, вулакана пĕлме, Пăвана тутар писателĕсем кам-кам килнине кăна каласа хăварас тетĕп. Вĕсем: Тутар писателĕсен Союзĕн правленийĕн ответлă секретарĕ Р. Харисов, «Қазан утлары» журналăн тĕп редакторĕ Г. Ахунов, Г. Минский прозаик, Н. Даули, Г. Қамалеев поэтсем; М. Макаров композиторпа Тутар патшалăх филармонин солистки Д. Саляхова пулчĕç.

Çыру ăстисем хăйсен сăмахне вĕçлесен, пăвасем пĕчĕк концерт та кăтартрĕç. Уйрăмах эпир Александр Петров юрланă чăваш юррисене киленсе итлерĕмĕр. Вăл Культура çурчĕн директорĕнче ĕçлет, чăваш Республикăри художество пултарулăх коллективĕсен смотрĕнче лауреат ятне илнĕ Тянзиле Галиева та шăнкăр-шăнкăр сассипе хытă тĕлĕнтерчĕ пире.

Юрă итлесе, ташă пăхса ларса сисмен те, тухăçа кăвак çутă сĕвемлеме те ĕлкĕрнĕ. Халăхпа урама кĕперленсе тухрăмăр. Тӳпе ĕнчĕ сапать. Таçта çӳлте инçетре-инçетре икĕ пысăк çутă çăлтăр, йĕкĕрешсем пек, мĕл-мĕл туса çунать. Пĕр-пĕрне савса, юратса çисет çак йĕкĕреш çăлтăр. Вĕсен йăлтăр çути мана чăвашпа тутар литературисен тутăхми туслăхĕ евĕрех туйăнчĕ.

# Пӳркел

Ир тин кӗвелӗкленет пулин те пӑчӑ. Пӑваран ҫӑмӑл машинӑпа темиҫе ҫухрӑм тусан ҫавӑрттарса пынӑ хыҫҫӑн пӗр пысӑк ял варне тӑпах ҫитсе чарӑнтӑмӑр. «Ҫитрӗмӗр-и?» — темиҫен пӗр харӑс персе ятӑмӑр эпир машина чарӑннӑ-чарӑнманах. «Ҫитрӗмӗр,— терӗ Владимир Васильевич Ухли хавассӑн.— Анӑр! Ман тӑван яла ҫитрӗмӗр!»

Пӳркел. Вӑл Тӑхӑръял хутлӑхне кӗрекен ялсенчен пӗри. Г. Т. Тимофеев «Тӑхӑръялта» Пӳркеле юри палӑртса асӑнмасть, пур ял пирки те ҫапла кӑна каласа хӑварать: «Тӑхӑръял ҫӗрӗ» тенӗ ҫӗртен те манӑн пуринчен ытла Элшелӗ ҫинчен ҫырмалла. Элшелӗ ҫинчен мӗн-мӗн калани, ыттисем ҫинчен калани те ҫавӑ пулӗ: вӗсем пурте пӗр пекрех тӑраҫҫӗ», тет.

Пӳркелӗ хӑй тӳрем ҫӗре, пысӑках мар сӑрт ҫамкине улӑхса ҫитсен, йӑпӑрт канса илем тенӗн, вырнаҫса ларнӑ. Халӗ унта 364 кил, теҫҫӗ. Пысӑк ял. Эпир чарӑннӑ урам темӗн сарлакӑш. Хула проспекчӗ пек. Пӗр вӗҫӗнчен пӑхсан тепӗр вӗҫӗ курӑнмасть. Урамӗнче йывӑҫ сукпа пӗрех. Пӳрт умӗсене тӗл-тӗл шакӑлчапа пахча ҫавӑркаланӑ. Апла пулин те унта йывӑҫ мар, кишӗр-ҫарӑк, сухан-купӑста лартнӑ. Йӑмра-хурӑн ешӗлне темшӗн кӑмӑлламасть кунти чӑваш. Эх, кайса курӑр-ха тури чӑваш енне — Муркаш, Етӗрне таврашне, теессӗм килет ман кунти халӑха. Унти ялсене пырса кӗрсен тухас килмест. Урамӗсем — хӑтлӑ, хурӑнташ кӑмӑлӗ пек ӑшпиллӗ. Икӗ енӗпе йывӑҫ капламӗн ӗречӗ сана алӑ ҫупса кӗтсе илет, кас сулхӑнӗпе ҫупӑрлать. Кил умӗсерен поэтсем сӑввисенче тӑтӑш мухтакан лаштра йӑмра ҫулҫисене шӗпӗлтеттерсе ларать. Чӑвашсем пурӑнакан кӑнтӑрти ҫӗрсенче вара, Юхма, Елчӗк, Арапуҫ таврашӗнче, кунта та, Пӑвапа Элшел хутлӑхӗнче, пачах урӑхла ӳкерчӗк. Каларӑм ӗнтӗ, кӑмӑлламасть анатри чӑваш йывӑҫа. Уссине курманран лартмасть-ши вӑл ӑна—татса калама хӗн. Уссине курмасть тенӗрен, усӑллӑ йывӑҫ та (сӑмахран — улмуҫҫи) курӑнсах каймасть вӗсен пахчисенче.

«Чӑваш йӑмри!
Ялан килем-и
Курак йӑвиллӗ сулхӑна?

Урам кĕрнеклĕ те илемлĕ,
Хаваслă эс ку яхăна»,—

тет пĕр поэт, чăвашăн лаштра йăмраллă ял тирпейне савса. Апла, тем тесен те, йăмрапа хурăн, çăкапа акаци (пĕр йывăçне те тиркемĕпĕр) анат чăваш ялĕсене илем кĕртсе лармаллах. Унсăрăн пире поэт çапла та каласа намăслантарĕ:

«Ятран йăмра лартман чăвашăн
Тухма та намăс ял çине!» — тейĕ.

Пирĕн кунти ĕçчен халăха аплах каласа намăслантарас шутăмăр çук. Çапах та хамăр чăваш, ял-ял хутлăхне сăн кÿме, йăмра-тавращĕ лартмаллине астусах тăтăрччĕ, тетпĕр.

Пÿркелпе çырма урлă Шемекпе Пимĕрсел ялĕсем. Лапамра чăмăртанса ларнă вĕсем. Кăшт тăварах тапаçланса хăпарма хăтланса пăхнă та çавсем — чăрмавлă ĕç тенĕ-ши — çавăнтах шухăша кайса ларнă. Ялĕсем халь пĕрлешсех кайнă ĕнтĕ. Акă, Пÿркеле тухса каймалли урамăн сулахай енчи çурчĕсем — Пимĕрселĕн, сылтăм енчи çурчĕсем — Шемекĕн. «Тăхăръял» шутне те вĕсем ун чухнех пĕр ял — Пимĕрсел — пулса кĕрсе юлнă. Ку ен хăйĕн çыравçисемпе пуян. Шемекре — чăвашсен кăвар чĕреллĕ поэт-революционерĕ Тайăр Тимкки çуралнă. Пимĕрсел — Константин Петров прозаикăн çуралнă ялĕ. Владимир Ухлин тăван ялĕ, паçăрах каларăм, Пÿркел. Çак ялтанах чăвашсен илемлĕ прозине пуçарса яраканĕсенчен пĕри Иван Юркин тухнă. Николай Дедушкинпа Владимир Чебоксаровăн пурнăç çулĕсем — Элшелтен пуçланнă, Александр Кăлкан — Çĕнĕ Мертлĕре тĕнчене килнĕ, Ескуль — Анатолий Еруслановăн ялĕ, Раккассинче Валентин Урдаш поэтăн шăпчăк пек сасси вăраннă, Кашара — Владимир Садай кун курнă. Кипекассинче — Василий Краснов-Аслипе Григорий Краснов-Кĕçĕнни, Валентин Максимов (Валем Ахун) çуралнă...

Тен, татах та пур пулĕ ку енчен тухнă çыравçăсем — хам пĕлекеннисене кăна асăнтăм. Кама та пулин манса хăвартăм пулсан — айăп ан туччăр, юри мар.

Пӳркелте пире Леонид Васильевич Симонов кӗтсе илчӗ. Вăл кунта колхозри (колхозӗ «Гигант» ятлă) коммунистсене ертсе пырать. Тарават чăваш, сăмах ваклама юратсах каймасть. Апла пулин те, ӗҫшӗн ҫунакан ҫын вăл. Ку пӗрре пăхсах курăнать. Унран «ку яхăнта мӗнле пурăнатăр» тесе ыйтрăмăр та, вăл пире тăван колхозӗ ҫинчен хӗпӗртесех каласа кăтартрӗ. «Гигант» колхоз—районта малта пыракан хуҫалăхсенчен пӗри. Пӗлтӗр тătăш шăрăх ҫунтарса тăчӗ. Пурпӗр вăл ытти колхозсем умӗнче куҫран ӳкмен, япăхах мар тырпул ҫитӗнтерне, патшалăха аш-какай, сӗт, ҫу парăртнинчен чылай ирттерсе сутнă. «Пӗр сăмахпа каласан, аптрамастпăр, тата авантарах ӗҫлес тетпӗр, ҫав кăна,— савăнса юмахлать Леонид Васильевич.— Пирӗн халăхпа ту ҫавăрса лартма пулать. Ҫумăрӗ кăна ҫусах тăтăрччӗ-ха»,— тет.

Колхоз чулран пӗр хутлă пысăк хăна ҫурчӗ хăпартса лартнă: «килен-каян хăйне килти пек туйтăр» тенӗ ӗнтӗ тарават ял халăхӗ. Пур пек япаласене хăпăл-хапăл ҫавăнта кӳртсе пăрахрăмăр та Николай Степанович Дедушкина, вăл делегаци пуҫӗ пулнă май, иккӗн-виҫҫӗн сăпса пек харăс сăрăнтăмăр: «Атя, пире шыва кӗме илсе кай, пиҫсе вилетпӗр. Кăравул!»— терӗмӗр. Николай Степанович, шыва хăй те шӳпке пулă пекех юратаканскер, туххăмрах ӳкӗте кӗчӗ. Сăмаха каллӗ-маллӗ тăвиччен А. Галкин, А. Воробьев тата эпӗ йăпăр-япăр машина ăшне кӗрсе лартăмăр. Тепӗр темиҫе самантран Сӗве хӗррине вӗҫтерсе те ҫитрӗмӗр.

Сӗве. Акă мӗнле иккен эсӗ асран тухми, ачаран курма ӗмӗтленнӗ юханшыв! Тахăшӗ пирӗнтен А. Воробьева та тӗртсе илме пăхать: «Кур, Элекҫей, сан сăввунти Сӗве юхса выртать. Лайăхрах пăх»,—тет. Тӗртсе илем текенӗ Алексей Александровича «Сӗве шывне куҫупа курмасăрах Сӗве ҫинчен поэма шăрантартăн мар-и», текелесе йӗплесе илесшӗн ӗнтӗ. «Ан аппалан, Чӗмпӗр тӗлӗнче курса савăннă эпӗ ăна, ăша илнӗ»,— тавăрать вăл шăл йӗрме хăтланакана. Вара поэмăри йӗркесене те такмакласа илет:

«Пӳ ҫитнӗ хӗр евӗр Сӗве
Тӗртет ҫăмăл виткӗч хавассăн...»

Салтăнатпăр та шампăр-р! сикетпĕр шыва. Шывĕ ăсла пек ăшă, тӳпе пек тăрă. Ку тĕлте Сĕве тарăн, пӳ ярсан та пӳ çитмест. Çыранĕсем — лапам, çеремлĕ. Шывĕ — хĕррипе шай, лăпкă, юхăмĕ те палăрмасть. Леш енне темиçе те хутларăмăр эпир Николай Степановичпа иксĕмĕр. Унти курăксем хушшинче кĕрпе сапнă пек вĕтĕ пулă хĕвĕшнине куртăмăр. Қалăн: пулă пăтти. Ывăçласа тытма хăтланса пăхатăн та — пуç çухатса тараççĕ, шĕшлĕсем. А. Галкинпа А. Воробьева та тепĕр енне каçарса пулă пăтти кăтартас тесе Николай Степановичпа темĕн чухлĕ хĕремеслентĕмĕр — çук, усси пулмарĕ, çыранран шит те хăпмарĕç. «Пире кунта та пырать, ырлăх», текелерĕç. «Кусем, шереметсем, темĕн, ишме лĕлмеççĕ мар-и», шухăшласа илтĕм пĕр саманта. Қайран, тепĕр кунне, пирĕн икĕ поэтăмăр та шывра кăвакалсем пекех шампăртатнине курсан, вĕсене шанас марри вуçех тухса вĕçрĕ пуçран.

Урасемпе çатăлтатса та, алăсемпе хăлаçланса та, месерле выртса та, темле те ишсе пăхрăмăр Сĕвере. Хĕвел каç енне сулăнсан тин, çырлахнă кăмăлласкерсем, çырана тухса выртрăмăр. Николай Степанович Дедушкин калать: «Кунтан Элшелĕ те виç-тăватă çухрăмра кăна вĕт те, атьăр-ха атьсем, çын куриччен (пĕлетпĕр: пирĕн унта черетпе ыран кăна пулмалла-ха) ял хĕррипе те пулин çаврăнса килер, тăватă çул пулман тăван кĕтесре, тунсăхларăм»,— тет. «Атьăр пулсан, атьăр эппин,— терĕмĕр пурте пĕр харăс, ун кăмăлĕпе килĕшсе.— Çаврăнса килер. Вăхăт пур-ха».

Ял хĕрне çитрĕмĕр. Ял хĕрне çитнĕскер, Николай Степанович чăтаймарĕ: «Хамăр каспах çаврăнса тухар», терĕ. Тухрăмăр вара Элшелĕн хăрах кассипех çаврăнса. Николай Степанович Элшелĕн ытарайми çĕрĕ-шывĕ çинчен калать. Эпир итлетпĕр. Александр Галкинпа Алексей Воробьев та ку тăрăха пирвайхи хут килнĕ. Пуçласа урăх çĕре ура ярса пуснă çыншăн пурте кăсăк, пурте савăк, кунта çуралса ӳснĕ çын калавне итлесси вара — темиçе çĕр сумран та паха.

Пӳркеле таврăнтăмăр. Хăна çурчĕ умĕнче В. Ухлипе А. Қалкан, нар пек хĕп-хĕрлĕ питлĕскерсем. карта çумне сĕвĕннĕ те тем çинчен хĕрсех калаçса тăраççĕ. «Ну, мĕнле, ăшши тутлă пулчĕ-и? Эпир вара мунча чулне шартлаттартăмăр кăна!» — терĕç иккĕшĕ те,

йӑл-йӑл кулса, лире курсан. «Питӗ вӑйлӑ, питӗ шеп!» — терӗмӗр эпир те, шыва кӗрсе янк уҫӑлса кайнӑскерсем. Владимир Васильевичпа Александр Дмитриевич эпир ҫук чухне аллисене усса, кӗрӗк арки йӑвалаcа лармаи иккен. Малтан икӗ ҫыравҫӑ хире, механизаторсем патне, люцерна ҫулнӑ ҫӗре кайса килнӗ, вӗсен маттур ӗҫне курса савӑннӑ, унтан Владимир Васильевич тӑванне хирӗҫ пулнӑ. Лешӗ вара мунча хутнӑ мӗн те (ара ыран ҫимӗк-ҫке!) ятла-ятлах, хистехистех вӗсене хӑй патне илсе кайнӑ, мунча кӗртсе кӑларнӑ, хурӑн милӗкпе ҫурӑмӗсене ӗнтеленӗ. Ҫавӑнпа хӗр пек хӗп-хӗрлӗ питленсе кайнӑ иккен пирӗн ҫыравҫӑсем...

Апат турӑмӑр. Вара, литература каҫне кайиччен тесе, канма выртрӑмӑр. Н. С. Дедушкинпа Л. В. Симонов колхоз председателӗ Нурислам Зиганшович Кадыров патне килне тухса утрӗҫ. Нурислам Зиганшович ку яхӑнта, тем амакӗ, чирлекелет-мӗн.

Хӗвел те анчӗ. Кунӗпе ҫунтарнӑ шӑрӑх пусӑрӑнчӗ. Ял халӑхӗ пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн клуб умне туртӑна пуҫларӗ. Унта Шупашкартан килнӗ машина чӑваш кӗнекипе сутӑ тӑвать. Вӗт-шакӑр, каччӑ-хӗрупраҫӗ ҫавӑн тавра кӗпӗрленнӗ. Пирӗн писательсем сӗтел умне тӑнӑ та кам туянакана хӑйсен кӗнекисене алӑ пусса ҫыраҫыра параҫҫӗ. Пурте кунта килнӗ писательсен кӗнекисене хӑйсенчен туянса юласшӑн.

Эпӗ паҫӑр Пӳркелсен килӗ-ҫурчӗ, карти-хуралчӗ пирки каласа хӑварайманрӑм. Пӳрт-ҫурт тесен, уншӑн каҫсах каять кунти чӑваш. Пӗр пӳрт кӑна кӑнӑҫтармасть ӑна, тепӗрне тӗртсе тӑвать. Чул ҫурт нумай, урамӑн икӗ енӗпе анкарти пек ҫуртсем куҫа савӑнтарса лараҫҫӗ. Карти-хури — чӑх-чӗп вӗҫсе каҫайми. Ял тенинче пурте пӗр пек пурӑнайманни те пулӗ. Мана вӑл мар, ялӑн паянхи кӗрнеклӗ сӑн-сӑпачӗ савӑнтарать. Ҫапла, тулӑх пурӑнать ку чухнехи хресчен. Укҫи-тенки ҫителӗклӗ унӑн, ҫавӑнпа ҫурт-йӗрне те кермен пек ҫавӑрать, тумланасса та яка тумланса ҫӳрет.

Леонид Васильевич Симоновпа калаҫса кайрӑмӑр. Вӑл каласа панинчен мана чи пирвай акӑ мӗн тӗлӗнтерчӗ. Колхоз хӑй вӑйӗпе тем пысӑкӑш пульница туса лартнӑ иккен. Пӗр харӑс унта ҫитмӗл пилӗк ҫын вырӑнпа выртсах сипленме пултарать. Чирлӗ ҫынна чи кирлӗ япала ӗнтӗ вӑл пульница, унӑн инҫене кайса

чăрманса çÿресси çук, пурте çывăхра, ал айĕнче. «Пăвана е Хусана ма кайса выртмастăн?» — тесе каларăм тет те колхоз председательне Н. Дедушкин, вăл ăна çапла тавăрса каларĕ, тет: «Манăн кунта Хусантинчен те тухтăрсем кая мар», тесе евитлерĕ, тет. Пульницара Бахтиярпа Файруза Хайруллинсем, арăмĕпе упăшки, чылайранпа ĕçлеççĕ иккен. Вĕсем иккĕшĕ те Хусанти медицина институтне пĕтерсе тухнă тухтăрсем. Ирĕксĕрех пĕççе шарт çапăн: ара Хусанĕ сывалас текенсемшĕн Пÿркелĕнчех иккен те! Аçтан тав сăмахĕ каламасăр чăтса тăрăн-ха совет пурнăçне, партипе правительствăна. Революцичченхи тĕттĕм, чир-чĕрлĕ çулсене аса илсен, паянхи ял сăн-сăпачĕ питĕ хĕпĕртеттерет. Ĕлĕк Пăва хулинче те пĕтĕмпе те пĕр тухтăрпа пĕр аптекарь анчах пулнă. Халĕ, ав, Пÿркелĕнче кăна аслă пĕлÿ илнĕ, имне-симне тĕппипе чухлакан икĕ тухтăр ĕçлет. Шеп пурнăç!

Клубĕ тата мĕнешкел Пÿркелсен! Ялĕпе пĕр харăс Çĕнĕ çул ĕçки ĕçме пулать. Клуб мар — граф керменĕ.

Леонид Васильевич мана тата тепĕр япала каласа шалт тĕлĕнтерсе пăрахрĕ. Колхоз председателĕ Нурислам Зиганшевич колхозниксен пухăвĕсене чăвашла ирттерет иккен. «Мĕнле, апла», терĕм те — «Çаплах», тет Леонид Васильевич, «пухусем пĕрехмай чăвашла иртеççĕ. Чăваш нумай пурăнать кунта», тет.

«Вырăсĕ, тутарĕ вара мĕнле, ятлаçмаççĕ-и?»

«Кам ятлаçтăр. Халĕ тутарĕ вырăсла, вырăсĕ чăвашла шакăртаттарса пĕлет»,— терĕ вăл ним те кулмасăр.

«Тен, председателĕ хăй чăваш пулĕ, хушамачĕ, ячĕшывĕ те тутарăнни пек те-ха, темĕн?..» — иккĕлентĕм çав-çавах эпĕ.

«Чат тутар. Пĕр çемье пек пурăнатпăр. Вырăсĕпе те, тутарăпе те хурăнташлантăмăр. Пĕр-пĕрне хĕр парса илетпĕр... Эсир ма каплах тĕпчесех ыйтатăр ара?»

«Ара, тепĕр чухне чăвашла ытла аван пĕлекенскерех тăван чĕлхине сума сумасăр лĕпĕртетсе çÿрет те...»

«А-а, ăна кĕтме пулать хальхи хăшпĕр çамрăксенчен. Вырăс калашле «Çемье тăмсайсăр пулмасть...»

Çапла каларĕ те партком секретарĕ манăн иккĕленÿллĕ сăмахăм та тăнч пĕтсе ларчĕ. Хĕпĕртерĕм, хытă савăнтăм эпĕ туслă пурăнакан пĕр тĕвĕри йышшăн.

Тĕрĕссипе каласан, ку таврара чат çара пĕр халăх

çыннисенчен тăракан пĕр колхоз та çук. Вĕсенче тутарĕ, вырăсĕ, ирçи, чăвашĕ ĕçлет. Çук, пĕр-пĕрин çине урлă пăхса пурăнмаççĕ вĕсем, килĕштерсе, ĕçпе савăнса пĕрлешӳллĕ хуçалăх ӳсĕмне хăпартаççĕ. Пĕри те пĕрне тиркемест. Пирĕн чăваш пек пурте «Этем пурĕ пĕр: вырăс та, тутар та, чăваш та, мăкшă та», теççĕ. Килĕштерсе пурнаççĕ.

Пăва районĕнчи иккĕмĕш каç. Уççăн янăрать чăваш сăмахĕ Тăхăръял çĕрĕнче. Н. Дедушкин пухăннисене ку чухнехи чăваш литератури çинчен, ун çитĕнĕвĕсем çинчен хĕрсе кайса каласа парать. Владимир Ухли сăмахĕ — тăван ялĕпе хăйĕн хальхаççăнхи ĕçĕ-хĕлĕ çинчен. Александр Галкин Пӳркелсене лирикăлла сăввисемпе çунатлантарать. Шӳтле сăввисене те ăста вулать вăл. Александр Қăлкан юптарăвĕсемпе тата кулăшла сăввисемпе итлекене киленĕç кӳрет. Константин Петровăн нумаях пулмасть «Юратупа наркăмăш» романĕ пичетленсе тухнă. Çавăн çинчен вулакапа калаçать прозаик. Алексей Воробьев чăваш ачи утма вĕренни çинчен, чăвашра Қазбек пекех хăватлă халăх пурăнни çинчен çĕкленсе кайса сăвă калать, хăнана чĕнет. Пӳркелсене Шупашкара пырса курма хăнана чĕнсе хăварать: «Юлташ, çитсем! Сăра та чашкăрать, Сана кĕтсе кĕçенчĕ хуратур...» тет. Литература каçне килнисем, писательсене итлесе кăмăлĕсем тулнине палăртса, шапăртаттарса алă çупаççĕ, татах та килсе курма йыхравлаççĕ. Пӳркелти сăвă каçĕ те, Пăвари каç пекех, вăхăт чылая кайсан тин вĕçленчĕ.

Клубран хăна çуртне çитсе вырăн ăшне чăмсан та вăрахчен çывăрса каяймасăр выртрăм эпĕ. Мана кунти халăхăн таравăт кăмăлĕ, ĕçченлĕхĕ, тăван сăмаха чун пек савни хĕпĕртететтерчĕ. Çутăпа вăраннă шăна кантăка пыра-пыра çапăнса нăйăлтатса çӳрени ыйха вĕçтерсе ячĕ тата. Тахăш вăхăтра çывăрса кайнă — астумастăп, пуç тăрринче аслати çилĕллĕн кĕмсĕртеттерсе авăтнипе вăранса кайрăм. Халь-халь çĕр чăмăрне çурмаран шаплаттарса çурса пăрахас пекех шатăртаттарать аслати. Çиçĕм урлă та пирлĕ çиçет. Çути кантăка çиет. Тăтăм та алкумне тухрăм, çумăр шапăртаттарса çăвать. Тавралăх шап-шурă. Ташлать, вăйне ниçта шăнăçтараймасăр чикĕне-чикĕне кайса ташлать картлаç умĕнче пин-пин тумлам. «Çу, çумăр, хресчен чĕрине савăнăç кӳрсе, пӳлмине пурлăх кӳрсе çу, çĕ-

мĕрт пек хуп-хура, мамăк пек çемçе, кăпăк пек кăпăшка тăпрана сиплĕ имĕпе ислет!»

## Элшел

Элшелĕ — Тăхăръялăн тĕп ялĕ. Мĕнле-мĕнле ялсем кĕнĕ-ха çав Тăхăръяла? Г. Т. Тимофеев унта çаксене кĕртет: «Хальхи этемсем «тăхăр ял» тесе çав Таккаварне, Раккассине, Киштеке, Элшелне, Пимĕрселне, Пÿркелне, Хирти Кушка, Кивĕ Мертлĕпе Çĕнĕ Мертле (Çĕнĕ Мертлĕсем Кивĕ Мертлĕрен тухса ларни пĕр 60 çултан ытла мар, тет-ха, ăна ваттисем пайтахăшĕ астăваççĕ), унтан тата Чăваш Саркăмăшне (Чăваш Пăрăнтăкне) хисеплеççĕ», тет.

Эпир Тăхăръял хутлăхĕнче пуçласа Пÿркелте пултăмăр, халĕ çÿрес çулăмăр пире унăн тепĕр ялне — Элшеле илсе çитерчĕ. Ыран Тăхăръял çĕрĕпе сывпуллашатпăр, ыран пире урăх çĕрте кĕтеççĕ, çавăнпа майлă самант пуçтарăнса килнĕ чухне ытарайми Тăхăръял хутлăхне тепĕр хут куç туллин пăхса тăранам, унăн авалхи, асаттесемпе асаннесене пурнăç кÿнĕ сывлăшĕпе сывласа киленем, кам пĕлет, хăçан тепре çаврăнса килесси пур-ха ку тăрăха?

Элшелĕ. Ялĕ пирки эпĕ хам ăссăнах каласа тăрам мар-ха. Г. Т. Тимофеев ăна питĕ тĕплĕ çырса кăтартать. «Элшелĕ иртсе каякана пăхма та, унта пурăнакана астума та илемсĕрех ял темелле мар: кирек камăн кăмăлне те килмелле»,—тет вăл. Урамĕсем пирки çапла çырать: «Ялне кĕрсен, Элшелĕнче мĕнпурĕ тăватă тÿп-тÿрĕ урам та икĕ тÿп-тÿрĕ тăкăрлăк. Тăватă тÿп-тÿрĕ урамран икĕ вăрăм урамĕ яла тăрăх, хĕвелтухăç енчен хĕвеланăçĕ еннелле, тăсăлса улăхаççĕ. Икĕ кĕскерех урамĕсем тата яла урлă, çурçĕр енчен кăнтăрланалла, ярт тăсăлса выртаççĕ. Тăкăрлăкĕсем вара çав тăватă урама май хĕреслĕ пырса тухаççĕ: вăл тăкăрлăксем икĕ урам хутлăхне — икĕ урам хутлăхне, яла тăрăх, яла урлă пĕрер тăкăрлăк—пĕрер тăкăрлăк...»

Ял тенинче кашни урамăн хăйĕн историйĕ, ят-шывĕ ăçтан тухни, пуçланса кайни пур. Хитре сăнлать Г. Т. Тимофеев Элшел кассисене. «Хăй яла тăрăх икĕ вăрăм урамсенчен пĕринче, кăнтăрла енчинче, виçĕ

кас Элшелин: Арман касси, Чассавни касси, Шыв хĕрри касси, теççĕ,— вулатпăр тепĕр тĕлте.— «Арман касси» тесе ялăн чăн çӳлти, хирелле тухса каякан вĕçне, хĕвеланăç енчи касса, калаççĕ. Арман касси ялăн вĕçĕнченех пуçланать те яла урлă хĕвеланăç енчи кĕске урама тухиччченех пырать. Авалтарах, хайхи Трахвин арманĕ ял вĕçĕнче, çеремре ларнă чухне, армана çăнăх авăртма-мĕне çӳрекенсем çав Арман касси витĕр туха-туха каятчĕç. Çавăнпа вăл касса арман çывăхран, армана ялан унтан çӳренĕрен «Арман касси» тенĕ. Армана куçарса кайсан, армана çӳрекенсем пулман та, вăл касса «Арман касси» теме аван мар тенĕ. Вара ăна «çӳлти вĕç» кăна теççĕ. Пайтахăшĕ вăл кассса «Пуян кас» та теççĕ. «Пуян кас» тесе ăна акă мĕншĕн калаççĕ...»

Элшел çинчен калакан хитре сыпăксене тата илеиле кăтартăттăм та — ытлашши пуласран хăратăп. Çитĕ. Ыттине кĕнекере вулăр. Ку кĕнеке этнографи очеркĕсен пуххи пек мар, илемлĕ произведени — калав, роман, повесть пек вуланать. Ху та сиссе юлаймастăн, эсĕ темĕнле куçа курăнман илемлĕх тыткăнне лекетĕн. Вулама çеç пуçла, кĕнеки хăех сĕтĕрсе кĕрсе каять сана шала.

Элшелĕн паянхи ĕçĕ-хĕлĕ çинчен калам. Эпир паянхине курма, ăна ăша хывма килнĕ-çке-ха кунта. Тĕллевĕмĕр çавă пирĕн. Элшелĕ «Родина» колхоза кĕрет. Элшелсĕр пуçне ку колхоза тата пилĕк ял: Ескуль, Раккасси, Чăваш Киштекĕ, Таккавар, Новоселки (Çĕнĕ Пăрăнтăк). Тăн-тăн утăпа утакан вăйпитти колхоз вăл «Родина». Пĕтĕм çĕр лаптăкĕ унăн çичĕ пин гектар ытла. Ĕни, сурăхĕ темиçе пин пуç. Тыррине çуллен лайăх туса илет. Патшалăха аш, сĕт, çу, çăмарта сутассине пĕрехмай ирттерсе пурнăçлать. Тракторĕсем утмăл ытла, автомашини, комбайнĕ алла яхăн. Шоферĕсем, механизаторĕсем те нумайăшĕ пĕрремĕш класлисем. Маххă памаççĕ элшелсем, чăваш ятне ямаççĕ. «Родина» колхоз «Гигант» колхозпа ăмăртать. Тăхăръялсем çапла пĕр-пĕринпе алла-аллăн тытăнса, екки ярса ĕçлеççĕ. Пĕрлешӳллĕ хуçалăх пуçĕ Алексей Иванович Викторов колхозăн кăçалхи хевти çинчен пире чылай каласа кăтартрĕ. Каласа пĕтерсен, Сĕве курма илсе кайрĕ.

Сĕве хĕрринче пире пулă шӳрпи кĕтнĕ-мĕн. Кăвайт

çине çакса янă хуран кутĕнче иккĕн ăрăмлаççĕ: пулă шӳрпи хăйне пăхса тăрса пĕçернине юрататъ.

Уçланкă. Ухлĕм утă кăвапа таран. Çыран хĕрри — хăвалăх. Хăвалăх витĕр тухатăн та — Сĕве. Вăр-вар салтăнатпăр та шыва кĕрсе каятпăр. Ку тĕлте юхăм вăйлă иккен. Ишме пĕлекене те сĕтĕрет.

Çыран хĕрринче юлнисем те пур. Александр Кăлкан шĕлепкине çурăм хыçне тытса, шывран тип çĕре тухнă Нептун пек сумлăн та танлăн уткаласа çӳрет. Алексей Воробьев та, пăртак чӳхенкелесе пăхнă хыççăн, пулас сăвă юхăмне лексе, хăва тĕмĕ хӳттинче шухăша путнă.

Юхăмран йыт çури пек тăпăлтаткаласа тухатăн та, тăвалла ишсе хăпарса, урапа хăйăра хыпаласа тупатăн. Çавăн пек тепĕр вунă-вунпилĕк утăм тăватăн та шыв тĕпĕ вара чĕркуççи таран кăна тăрса юлать. Малалла та çапла, сайра-пĕрре варинкке пек лакăм-лĕкĕм тĕл пулкалать. Ура янк анчах вĕçерĕнсе каять вара çав лакăма. Çӳçентерсе илет.

Шыва кĕрсе тухсан, Алексей Иванович Викторовран ыйтрăм: «Тем, типет мар-и ку, Сĕвемĕр?» — терĕм. «Типет çав, — хаш сывлать пирĕн çĕнĕ тусăмăр. — Ун нушине курса чĕре ыратать».

«Шыва кĕме те вырăн шыраса çӳремелле те». (Пире тарăнрах пулĕ тесе çакăнта илсе килчĕç.)

«Ĕлĕк Сĕвере, шыварманьсем пур чухне, хĕррипе шай шыв тăратчĕ, теççĕ. Астăвакансем пур. Шыварманĕсем кирлĕ мара тухрĕç, ав. Çуллен Сĕве хухсах пырать. Çуркуннехи шыв-шур çырмана туйăн шăлса тултарать. Мĕнпе тытса чарăн-ха ăна. Сĕвинче шӳрпе пĕçермелĕх пулли те юлмарĕ, иçмасса».

«Вĕтĕ пулă та пăтă пекех-çке Сĕвинче. Ĕнер куртăмăр».

«Э-е, темшĕн ӳсеймеççĕ вĕсем. Мур пĕлет-и... Эпир ача чухне кăна-ха, акă, вăлтапах улт-çич çатмалăх партассем тытса килеттĕмĕр. Халĕ...», — Алексей Иванович, «капла пустуй калаçса çăвар тутине сая ярса тăнинчен мĕн усси» тенĕ евĕр, аллине лаш сулчĕ те пулă шӳрпи çиме лармалла иккенне систерчĕ.

«Ара, шӳрпи Сĕве пуллинченех пуль? — терĕ, — Атăл пуллинчен. Сире, хăнасене хисеп тăвас тесе, паян кăвак çутлах яртарттарса илтерттертĕм. Атăлĕ кунтан инçех мар вăл, пĕр çирĕм çухрăм кăна...»

Алексей Иванович каласа пани мана шухăша ячĕ. Эпĕ, Элшел çĕрĕ-шывне, унăн пурлăхне «Тăхăръяла» вуласа тĕлĕннипе, ĕмĕр иксĕлми пулĕ тесеттĕм. Акă мĕнле çырать-ха Г. Т. Тимофеев Элшелĕн кӳлли-çырми пирки: «Унта сана пĕр-пĕр пулăçă тĕл пулать. «Пулă тытрăнам?» — тесен: «Çук, темĕншĕн çакланмарĕç-ха, паçăр пайтах тытса кайсаттăм», — тет. Хăй кимĕ ишкетне аллине тытнă, урине пахилкке тăхăннă, умне саппун çакнă: ишкĕчĕпе туяланса çул тăрăх пырать. Тепĕри тата çеткепе пулă йăтнă; пуллисем чĕп-чĕрех, сиккелесе выртаççĕ: «хама пĕрре пĕçерсе çимелĕх тытрăм», — тет: «кăна акă сутас, илместĕн-е? — тет». «Праçникре-мĕнте татах, «мухмăр шӳрпи пĕçерме» тесе, чĕрĕ пулă тавраше илеççĕ. Тип пулăран нихçан та татăлсах тăмаççĕ. Унтан тата кунта хамăрăн кӳлĕсем пур. Кӳлĕсенче, Сĕвере, Этременте пулăçсем яланах пулă тытаççĕ. Кирек кам та, тунсăха тесе, пулă тытакансенчен пулă иле-иле çиет».

Ку — утмăл-çитмĕл çул каяллахи ӳкерчĕк. Паян Сĕве хĕрринче пурăнакан хăй хăçан юлашки хут пулă шӳрпи çинине те астусах каймасть пулĕ. Пуллине тата ку яхăнта шывне тĕрлĕ имçам ярсах муталаса пыраççĕ.

Г. Т. Тимофеев Элшелĕ таврашĕнче кӳлĕ нумайри, вĕсенче пăтă пек пулă пурри çинчен калать. Кунти пĕр çĕнĕ пĕлĕшпе калаçса кайрăмăр та вăл мана: «Вак кӳлĕсем текех çук ĕнтĕ вĕсем, мелиораци туса типĕтнĕ», — тесе хучĕ. Шак хытрăм та кайрăм. «Мĕнле — типĕтнĕ?» Çаплах — типĕтнĕ, шывне юхтарса кăларнă та... Темĕскер аккалам пекки те тăваççĕ пулмалла-ха унта».

Куншăн вара никама та мар — ял çыннисене хăйсенех ятламалла. Паян кирлĕ мар тесе пĕр кӳлле, ыран тепĕр кӳлле типĕтсен, виçмине валли типĕтмелĕх кӳлли те юлмĕ. Шыв вăл этеме çăкăр пекех кирлĕ. Ĕçне тăвиччен пуç тавра авантарах шутласа пăхасчĕ. Ахальтен мар чăвашсемех «Çиччĕ виçсе пĕрре кас», — тенĕ. Сĕвепе çыхăннă кӳлле типĕтни вăл кăкăр ачинчен ĕмкĕчне туртса илнипе пĕрех. Пĕчĕк юханшыв шăпи вăл — пысăк юханшыв шăпи. Пĕлтĕр типĕ çу килнĕ пирки чип-чипер шывлă çырмасемех типе-типе ларчĕç. Кĕçĕн Пăла пек, Энĕш пек çырмасемех хăрчĕç. Тен, çавна пулах-и, Атăлĕ те чылай чакрĕ, ав.

Пĕр çын каласа пани аса килет. Вĕсен хутлăхĕнче ял çинче ятлă çын Уртемей мучи пурăннă. Вăл, хăй тăн-тăн чухне, Чĕмкўт уйĕнчи çăлсене тасатсах тăнă, çўп-çап, юшкăн-мĕн ларма паман. Çав çăлсенчен шăнкăр-шăнкăр Çăлçут шывĕ шăнкăртатса юхса выртнă. Унăн кăкăра уçса яракан шывне ĕçекен хăйне улăп пек вăйлă, уй-хир пек аслă туйнă. Каярахпа, Уртемей мучи чирлесе вырăнпах выртсан, çăлкуçсене пĕри те çаврăнса пăхакан пулман. Уртемей мучи ялйыша ятла-ятла асăрхаттарнă: «Астăвăр, çăлкуç пырне тасатса тăмасан, Çăлçут типет», тенĕ. Вăл каланине пурпĕр никам та хăлхине чикмен. Аçтан чикĕн: шывĕ ĕмĕр пĕтмест пек шăнкăртатса выртнă вĕт-ха ун чухне. Тепĕр темиçе çул иртнĕ. Уртемей мучи çĕре кĕнĕ. Вăл çĕре кĕрсен, Çăлçут шывĕ те тăнч типсе ларнă. Çырми типсен, хире ĕçе çўрекенсем çăл пырĕсене пĕр-икĕ хутчен тасатса та пăхнă — шывĕ çав-çавах палкаман. Шыва çĕр каялла сăхса илнĕ. Пĕтнĕ вара çĕр çинчи çавнашкал пĕр пĕчĕк илем! Çынсен тимсĕрлĕхне пула пĕтнĕ!

Çапла, вăхăтĕнче пăхса, асăрхаса тăнă пулсан, паян кунччен шăнкăртататчĕ ĕнтĕ вăл, хамăра савăнăç кўрсе шăнкăртататчĕ. Пĕрехмай кунашкал хăтлансан пирĕн хыççăн килекен ăрусем пире мĕн калĕç. «Пархатарсăрсем», тейĕç.

Паçăр пуçланă сăмаха малалла сыпăнтарам-ха, Сĕве хĕрринчен эпир тўрех колхозăн культура керменне çитрĕмĕр. Халăх пуçтарăннă вăхăтпа усă курса, кунти «Чыс-мухтав музейне» кĕрсе тухрăмăр. Пысăк хисепре усраççĕ иккен элшелсем иртнĕ вăрçăра пуç хунă хăйсен ентешĕсене. Акă, Н. Дедушкин алă вĕççĕн йăтса çўресе пемелли пулемет умĕнче вăрахчен чарăнса тăрать. Ку — унăн тăванĕн Арсентий Карташовăн пулемечĕ. Çапăçу хирĕнче вăл Алексей Матросов паттăрлăхне тепĕр хут кăтартса панă, салтак тусĕсене çул уçса пама тăшман амбразурине кăкăрĕпе хупланă. Эпир те, хăюллă салтак паттăрлăхĕпе мухтанса, ун пурнăççĕ çинчен калакан стенд умĕнче чылайччен пуçа тайса тăтăмăр: «Мухтав сана, совет салтакĕ, çĕршывшăн, пурнăçшăн мухтав!» — терĕмĕр. Унтан кермен умĕнчи палăк умне чĕрĕ чечексем хутăмăр.

Чăваш çыравçисене питĕ юрататтççĕ иккен элшелсем. Вĕсене курма-итлеме ватти-вĕтти те хăпса тухнă.

Хăшĕ-пĕри алăри ачине те хăварман. Шкул ачисем вара писательсене чечек çыххисем парса, сăвă каласах кĕтсе илчĕç. Элшелсен ырă кăмăлне кура, пирĕн çынсем те хытă тăрăшрĕç, пĕринчен тепĕри хĕрсе кайса сăвă каларĕ, тăван сăмах илемне мухтарĕ. Сĕм çĕрлеччен пычĕ Элшелти тĕлпулу.

Литература каçĕ пĕтсен, хамăра уйăрса панă хваттерсене салантăмăр. Элшелсем хăйсен уçă кăмăлне активме юри çапла тунă иккен. Вĕсем колхозăн хăна çурчĕ пур çинчех, пире çынсем патне уйăрнă. Ку хваттерте эпир пиллĕкĕн пултăмăр: А. Галкинпа А. Кăлкан, В. Ухлипе К. Петров тата эпĕ. Н. Дедушкинпа А. Воробьев — урăх çĕрте. Хĕвел шит пек хăпарсан, вăранса кайрăмăр та тĕлĕне тăратпăр вĕт. Пĕр-икĕ кун çӳресе хура ларнă кĕпесене çуса хунă, якатнă. Сĕтел тулли апат-çимĕç. Шăп варринче чăх яшки пăсланса ларать. В. Ухли шӳтлет: «Кун пек апата патша та тĕлĕкĕнче активсе курман пуль»,— тет, техĕмлĕ яшкана сыпа-сыпа. Шӳтле персе ячĕ пулин те, чăнне каларĕ Владимир Васильевич. Питĕ пысăк хăна пултăмăр Ескульте. (Элшелпе Ескуль хушши — пĕр çухрăм.) Кăна пирĕншĕн кил хуçи Нина тăрăшать-мĕн. Эпир килсе выртнă чухне вăл çукчĕ, паян, ав, тул çутăлнă-çутăлманах, тем ĕç те туса хунă. Хăçан, хăш вăхăтра ĕлкĕрнĕ пулĕ вăл çавăн чухлĕ ĕç тума? Ара, чăххине пусса тĕкне татма та темĕн вăхăт тăрмашмалла та!

Алли çыпăçуллă унăн. Шăпчăк ыйхиллĕ çын вăл Нина. Автанпа тăрать те алтăр çăлтăр ӳпĕничченех ура çинче. Чăлăм куç хупса илмелĕх кăна вăхăчĕ те, мăнтарăнăн. Нина Юшкина — комплексла бригадăн бригадирĕ. Ялта ӳснĕ çын аван пĕлет: канăçсăр ĕç вăл бригадир ĕçĕ. Унăн пуриншĕн те яваплă пулмалла, ăна тумалла, кăна тумалла, пĕр çĕре çитмелле, тепĕр çĕре. Ыйтасса та унтан ыттисенчен ыйтнă пек кăна мар, хытăрах ыйтаççĕ. Пĕр сăмахпа, бригадирăн халăха ĕçлеттерме, ĕçлекен çыннăн чĕри патне сукмак такăрлама пĕлмелле. Нинăн вара çав пултарулăх — чунĕнче. Куран — пĕринпе вăл сассине хăпартмасăр, сăпай калаçать, итлеме пĕлет. «Çын хуйхине ăнланать»,— теççĕ ун пек çын çинчен ялта. Хăйĕн те унăн çамрăк пуçăнах (пĕр вăтăралла анчах пырать-ха Нина) хурапа шурра çителĕклех тутанса лăхма тивнĕ. Пурăнас-пурăнас тенĕ çĕртренех савса качча тухнă çынни—упăш-

ки темиҫе ҫул каялла ҫӗре кӗрсе выртнӑ. (Вилӗм шӑла пӑхса килмест). Хӗрарӑм чӗри, кӗтмен инкек пырса ҫапнипе татӑлса ӗсӗкленӗ пулин те, ҫын ҫинче ҫавна кӑтартман: «Ман хуйхӑсӑр та хуйӑх нумай». Шӑла ҫыртнӑ та — тӳснӗ. Нинӑн икӗ ача ҫитӗнет. Иккӗшӗ те кӳршӗ ачисенчен нимӗнпе те катӑк мар, ӑсӗпуҫӗпе те, ҫи-пуҫӗпе те, вӗсем пекех ӗҫлесе ӳсеҫҫӗ. Нини хӑй те патвар, пӑхрӑмӑр та — арҫынпа тан ҫурт ҫавӑрать. Эпир пур чухне, ҫӗнӗрен тума, сулахай енчи аслӑкне пӑсса пӑрахнӑччӗ вӑл.

Апат хушшинчен тухнӑ-тухман Нинӑсем патне темӗн чул ҫын пырса тулчӗ. Пӗри те тепри, ӑмӑртмалла тенӗ пек, А. Кӑлкана хӑнана илсе каясшӑн. Кусем — Александр Дмитриевичӑн Ескульти тӑванӗсем пулчӗҫ. Кайран пӗлтӗмӗр: Нина та Александр Дмитриевича тӑван лекет иккен. Чӑваш кӑмӑла асла хуракан ҫынна юратмасть, чӗннӗ ҫӗре пымасан — кӳренет. Александр Дмитриевичпа пӗрле эпир те хӑнара ҫӳрерӗмӗр. Нина пире амӑшӗсем патне те илсе кайса килчӗ. Пурте паллаҫҫӗ, пурте асра тытаҫҫӗ иккен ескульсем Кӑлкана. Тӑван-тӑванпа тӗл пулсан — сӑмах ҫине сӑмах ӗнтӗ: «мӗнле пурӑнатӑн-ха, ҫӳретне?», «ҫемйӳ мӗнле тӑрать?», «ху мӗн ҫыран», «ҫав мӗнле пурӑнать те, ку мӗнле пурӑнать», «ҫавна курсан ҫав-ҫав салам каларӗ те...» тата ытти те, тата ытти те. Хапхаран тухса ял вӗҫне ӑсатса яричченех ҫапла.

Ескуль — ҫамрӑк ял. Колхоз тунӑ тапхӑрта пуҫланса кайнӑ вӑл. 1928 ҫулта, пӗрлешӳллӗ хуҫалӑха чи пирвай ҫырӑнма ӗмӗт тытнӑ тӑват-пилӗк кил, таврари ялсенчен ҫакӑнта, уя, тухса чӑмӑртаннӑ. Элшел ҫывӑхне хутора тухса ларнӑ. Малтанхисен шутӗнче А. Кӑлкансен ҫемйи те пулнӑ. Кайран, вӗсене курса, ыттисем те куҫа-куҫа килнӗ. Ялӗ халь ӳссе, пысӑкланса кайнӑ ӗнтӗ. Ҫӗр килтен те иртет, тен, шутласа пӑхман, ыйтма та астуман. Аслӑ урампа Нина амӑшӗсем патне ҫитиччен ҫухрӑм ҫурӑ ытла та утрӑмӑр пуль.

Элшелӗнче пире Николай Степановичпа Алексей Александрович кӗте-кӗте хӑшкӑлнӑ иккен. Вӗсене те сывӑрса выртма паман — ир-ирех пырса тӑратса хӑнана илсе тухса кайнӑ.

Паян — тройцӑ. Элшелсем ӑна «труйски» теҫҫӗ. Паллах, хальхи халӑх ӑна турӑ йӑлине тытса уявламасть, тӑванпа тӑван тачӑ пурӑнас, хутшӑнса сӑмах

ваклас, тесе тӑвать. Урӑхла каласан, пирӗн чӑвашсем ҫу ҫитнишӗн, ҫутҫанталӑк чӗрӗлсе сӗткен янӑшӑн савӑнаҫҫӗ. Урам енне, пӳрт умне, килсерен, ҫӗмӗрт-пилеш, ҫӑка-хурӑн, йӗлме-хурама, вӗрене тавраш каса-каса лартса тухнӑ. Хӑшӗ-хӑшӗ тата ҫавсене чӳрече хуппи хушшине те хӗстере-хӗстере хурса тултарнӑ. Вӑрман пек ларать вара суя йывӑҫ ӗречӗ.

Ҫимӗк каҫ чӑваш туя ларать. Эпир пырса кӗнӗ чухне Сӗве хӗрринелле урам тулли туй халӑхӗ утатчӗ. Купӑсҫи купӑсне, михине шеллемесӗр, ҫӗклентерсе ярса, калаттаратчӗ. Тусан ҫӗклесе ташлаканӗ те темиҫенччӗ унта. Шеп юрӑ ян-янратрӗ ирхи шӑплӑха. «Элшелӗнче пӗр харӑс ҫичӗ туй сикет», ӑнлантарса пачӗҫ пире пӗлекенсем. Туй тенӗрен мана тата тепӗр япала кӑсӑклантарчӗ: мӗнле, тухаҫҫӗ-ши Элшел ҫамрӑкӗсем ку яхӑнта вӑййа? Ӗлӗк вӑййа тухас вӑхӑта чӑваш яшкӗрӗмӗ тем пек кӗтсе тӑнӑ, майӑн 9-мӗшӗ каҫ вара, ҫуллахи микула тенӗ кун, вылямалли-кулмалли тапхӑрсем ҫитнишӗн савӑнса, кӗвӗ калама тытӑннӑ. Акӑ, элшелсем вӑйӑ самантне мӗн тери хитре ҫырса кӑтартнӑ Г. Т. Тимофеев: «Ҫав тери чӗрене тивекен япала! Хӗрсем икӗ тӗмене пуҫтарӑннӑ та икӗ тӗмере кӗвӗ калаҫҫӗ. Алла-аллӑн тытӑҫса, ҫавракa карта ҫавӑрса илнӗ вӗсем. Хӑйсем кӗвӗ калаҫҫӗ: сассисене чухлаҫҫӗ те пӗр-пӗрин ҫине пӑхаҫҫӗ, картипелен ҫавӑрӑнаҫҫӗ. Ҫавӑрӑнсан-ҫавӑрӑнсан, кӗввине уйрӑм-уйрӑм каласан-каласан, икӗ вӑйӑ пӗр тӗмене пухӑнса калама пӗр тӗмерен тепӗр тӗмене каяҫҫӗ вара. Кунтан лерелле, лешсем лере кусене кӗтсе лараҫҫӗ. Пырса ҫите пуҫласан, лешсен карти ҫурмаран таталать те, кусене хӑйсем хушшине кӗртеҫҫӗ. Хӑй пӗр пысӑк карта пулса тӑрать ҫапла. Акӑ кӗвве тата ытларах тытӑнса калаҫҫӗ». Тепӗр ҫӗрте: «Кӗвӗ каланӑ чухне тата ҫавракa карталанса кӑна тӑмаҫҫӗ: темиҫе тӗслӗ хутлӑн-хутлӑн пулса та калаҫҫӗ. Ҫапла карталанса ҫаврӑннӑ ҫӗртенех ытла ҫын нумай пулсан, пӗр тӗлтен таталаҫҫӗ те ик-виҫ хутлӑн туса кӗрсе кайса ҫаврӑнаҫҫӗ. Унтан пӗр-пӗр тӗлтен ҫак ик-виҫ картана тытса алӑк пек туса тухаҫҫӗ те, татах ҫаврӑна-ҫаврӑна ӗлӗкхи пысӑк картанах туса хураҫҫӗ...»

«Ку яхӑнта тетӗр-и? — улӑхалла тинкерчӗ Алексей Иванович Викторов, ман ыйтӑва астуса, пире ӑсатма

тухнӑ чух.— Ҫук, пӗр вунӑ ҫул каялла пуҫӗпех пӑрахрӗҫ. Унтанпа элшелсем вӑйӑ картине тӑман. Кӗввисем те манӑҫа тухрӗҫ ӗнтӗ. Юрлакан ҫук»,— терӗ.

Мӗн тӑвас тейӗн, ир пулать те каҫ килет, ӗмӗр иртет. Ырри юлать, кивви ҫӗтет. Кивви пе пӗрле тепӗр чух ырри, кирли те ҫухалать. Чӗре анчах куҫран ялан-лӑхах ҫӗтнӗ ыррисен, каялла таварма ҫуккисӗн хурланса, ӗсӗклет, йӑшкать.

Сывӑ пул, эппин, Элшел ҫӗрӗ-шывӗ. Сан пурлӑхна курса савӑнтӑмӑр, хурлӑхна курса хурлантӑмӑр эпир. Ытарайми Элшелӗмӗр, хӑвӑн ырӑ чапна ӳлӗм те ан иксӗлтер-ха эсӗ, халӑх ӑс-хакӑлӗн, чӗлхин пуянлӑхне ӳлӗм те упралӑ тыт. Ку тупра пире кӑна мар, пирӗн ачасене те, ачасен ачисене те савӑнтарса, килентерсе тӑтӑр. Сывлӑхлӑ та пурлӑхлӑ пул, асран каймн Тӑхӑръял хутлӑхӗ!

## Алших

«Память Ленина» колхоз. Алших — унӑн тӗп ялӗ. Ку хуҫалӑх ҫинчен каланӑ чухне манӑн колхозӑн паянхи ҫӗкленӳллӗ утӑмӗпе вӑйпитти сасси ҫинчен ытларах сырма тивет. Сӑлтавӗ те пысӑк: «Память Ленина» районти «Ҫӗрӗҫ культурине чи тухӑҫлӑ йӗркеленӗ колхоз» ятне илнӗ пӗртен-пӗр хуҫалӑх.

Колхоз председателӗ Рауф Абдуллович Аглиуллинпа тата кунти пуҫламӑш парти организацийӗн секретарӗпе Абдулла Каюмович Кадыровпа паллашатпӑр. Сӑнран иккӗшӗ те хура сын. (Тутар сарри сахал пулать.) Иккӗшӗ те сынна тимлеме хӑнӑхнӑ, хушша-хуппа кӗмесӗр тӑнлаҫҫӗ, кайран тин, лешӗ пӗтерсен, хӑйсем сӑвар уҫаҫҫӗ. Ҫук, сӳрӗк, чӗмсӗр сын темелле мар вӗсене — пыран-каяна хисеп тӑваҫҫӗ: пыран-каян нушапа сӳрекен сын, ӑна пирвайхи тивӗҫӗмӗр, теҫҫӗ. Рауф Абдуллович ку колхоза 1960 ҫулта килет. Ун чухне «Память Ленина» районта кая юлнӑ хуҫалӑхсенчен пӗри шутланнӑ. «Куҫ хӑрать те ал тӑвать»,— тет пирӗн чӑваш. Рауф Абдуллович, килнӗ-килмен, ҫанна таварса хӗрӳ ӗҫе пикенет, вӑл ӑста ертсе пынипе колхоз тепӗрултӑ ҫултанах малтисен ретне тапса хӑпарать, районти сумлӑ хуҫалӑхсен ушкӑнне кӗрет. Ӗҫре ырми-канми хастарлӑх кӑтартнӑшӑн, колхоза кӗске вӑхӑтрах ура ҫине тӑратса пур енчен те тӗрек кӳме пултарнӑшӑн парти-

пе правительство Рауф Абдуллович Аглиуллина 1966 çулта Социализмла Ĕç Геройĕн хисеплĕ ятне парать. Ĕçне кура хисепĕ!

Рауф Абдуллович хăй пĕр аллăсене çывхарнă çын пулсан, Абдулла Каюмович вара çамрăк-ха, вăтăр урлă тин кăна ярса пуснă. Пĕр 34-сенче пулĕ вăл, шутласан. Пурнăç опычĕ те сахалтарах пек-ха унăн, пĕлни-чухлани çителĕксĕртерех темелле пек. Апла пулин те Абдулла Кадыров коммунист хăйне шанса панă ĕçе тӳрре кăларса пырать, пуçламăш парти организацине пĕлсе ертсе пырать. Унта — çамрăклăх хĕрӳлĕхĕ тапса тăрать, вăй вылять. Ялти коммунистсем ăна чăннипех хисеплеççĕ, ĕненеççĕ, вăл каланине тĕпе хываççĕ.

Рауф Абдулловичпа Абдулла Каюмович, пире кĕте-кĕте аптăраса çитнĕскерсем, килни курăнмасть-и тесе, колхоз чиккине те çитсе пăхнă иккен. Эпир вара, элшелсен вашават кăмăлне ытараймасăр тытăнса юлнăскерсем, явкай апачĕ тĕлне тин Алшихе персе çитрĕмĕр.

«Салам-алик, тавсие,
Ĕçетри, çиетри,
Пире хапăл тăватри,
Хапăл тусан виç утăм малалла,
Хапăл тумасан виç утăм каялла,
Хапăл-и, ватти-вĕттисем?» —

такмакласа çунтарса патăмăр та, алшихсен ӳрĕк кăмăлне наччасрах çавăртăмăр. Лешсем те, пирĕн шӳте ăнланса, «Хапăл»,— терĕç, тĕпелелле иртме чĕнчĕç.

Халăхĕ те хăнисене паçăрах кĕтет-мĕн. Унта васкарăмăр. «Вĕлле уçлăхĕ» текен вăрман уçланки. Уçланкăра уяв тумлă çын кăткă пек хĕвĕшет. Пĕр тĕлте вăйпитти арçынсем вăй виçмелле тупăшаççĕ, пĕри пĕрне, тепĕри тепĕрне çĕре çавăра-çавăра çапаççĕ. Вĕсем таврa ватти-вĕтти кĕпĕрленнĕ те кам аяла пулнипе кам çиеле пулнине алă çупсах пăхса тăраççĕ. Уçланкă хĕррине хĕрпе каччă ушкăнĕсем, яш вăхăт хитрелĕхĕпе савăкланса, уни-куни сăмах шĕкĕлчекелесе çӳреççĕ. Вĕт-шакăр хĕвелчамăш-мăйăр пĕтерет.

Паян — акатуй. Таçтан грузовик та тупăнчĕ. Кузовне тăвата енне уçса ятăмăр та çӳле сăвă калама

хӑпарса тӑтӑмӑр. Вӑрман уҫланкинче сасӑ ян-ян каять. Акатуя килнисем, писательсен сӑмахне хапӑлласа, шапӑр-шапӑр алӑ ҫупса тӑнлаҫҫӗ. Сехет ытла янраттартӑмӑр пулӗ уҫланка хамӑр сӑвӑсемпе. Каласа пӗтерсен те ярасшӑн мар пире халӑх: «юрӑ юрласа парӑр, чӑваш юрри, вара ҫитет», теҫҫӗ. Ирӗксӗрех пӗлнӗ-пӗлмен сассӑмӑрсемпех юрлама хӑтланса пӑхмалла пулчӗ пирӗн. В. Ухли халӑх хушшине анса тӑчӗ, дирижер пек, аллисемпе сулкалашса, юрлакан халӑха пулӑшса пычӗ. Юррине А. Галкин пуҫласа пачӗ. Кайрӗ вара чӑваш юрри вӑрман тӑрӑх ян та ян. Халӑхне тата ҫав кӑна кирлӗ пулнӑ иккен, пуҫласа паракан кирлӗ пулнӑ. Кайран хӑйсемех пит ӑста шӑрантарса пачӗҫ юрра. «Ан авӑн, шӗшкӗ» те, «Вӗҫ-вӗҫ куккукӗ» те, «Вуник кӑшӑлли» те кӗрлерӗ кӑна вӑрманта. Писателӗ те, хресченӗ те тӑван сӑмаха чун екки кӳчӗҫ.

Мӗн каҫченех савӑнчӗ «Вӗлле уҫлӑхӗнче» акатуй каччи-хӗрӗ. Каҫхине ҫумӑр йӑслама пуҫларӗ. Лӑс-лӑс-лӑс ҫӑвать упа сурчӑкӗ пек вӗт ҫумӑр. Ҫӗрле вӑл тӳпе анине йӑлт карса илчӗ. Ирпе те час чарӑнмарӗ, йӑсӑлтатрӗ те йӑсӑлтатрӗ. Сехет вуннӑсем иртсен тин лӑпланчӗ. Хӗвел пӑхса ячӗ, тавралӑх янк уҫӑлчӗ. Рауф Абдуллович пире тав туса пӗтерейместь: «Ӗнтӗ паянхипе виҫҫӗмӗш хут шӳтерет, эсир илсе килтӗр-вӗт ҫак сиплӗ ҫумӑра, эсир, тет, тем пекех сӑпаҫҫипӗ ӗнтӗ сире»,—тет. Ҫумӑрӗ, чӑн та, пирӗн хыҫҫӑнах пырать-ха. Пӳркелне ҫитрӗмӗр — Пӳркелӗнче чашлаттарса пачӗ. Элшелне ҫитрӗмӗр — Элшелӗнче чӳшкӗнтерчӗ. Халь, акӑ, Алшихре тӑпрана лачкам тӑвиччӗнех ҫурӗ. Колхоз председателӗпе пӗрле хамӑр та ҫумӑр ҫунишӗн хытӑ савӑнтӑмӑр. Савӑнмасӑр, тырӑ ҫумӑрӗ-ҫке ку, пӗрче пирчеме паракан асамлӑ вӑй!

Хир пӑхма кайрӑмӑр. Пылчӑк машина урапи ҫумне лӑчӑр-лӑчӑр ҫыпҫӑнать, йӗперех ҫӗре лексен, урапа йӑкӑртатса илет те сулӑнкӑ парать. Ҫулӑн пӗр енӗ — йывӑҫ ӗречӗ. Ана унччен рехех лартнӑ пулмалла, ҫӳллӗ хурӑнсем тӑррисене пӗлӗтелле кӑнтарнӑ, ҫил сулӑмӗпе вӑшӑл-вӑшӑл чӑшӑлтатса илеҫҫӗ. Тепӗр енӗ — ҫуртри пусси — тулӑ, сӗлӗ, урпа ани. Тунисем ун чухнех ҫӑмӑл машина пытанмалӑх ӳснӗччӗ те: «Тӗшше лариччен пӗкӗ ҫӳллӗш те хӑпарӗҫ-ха вӗсем»,— терӗмӗр хӗпӗртесе.

Колхоз пӗлтӗр кашни гектар пуҫне вӑтам шутпа 22

центнер тӗштырӑ пухса кӗртнӗ. Паллах, хальхи вӑхӑтра ку пысӑк тупӑшах мар. Ҫӑҫал вара колхозниксем гектар пуҫне 28 центнер илме ӗмӗтленеҫҫӗ. Ӗмӗчӗсем вӗсен татах та пысӑк: тепӗр темиҫе ҫултан гектар пуҫне тухакан тӗштырӑ хисепне 40 центнера ҫитерессшӗн. Хавхаланусӑр шухӑш мар ку. Мӗншӗн тесен, тӗлтӗл вӗсем паянах гектартан ӗмӗтленнӗ чухлӗ пухса кӗртеҫҫӗ те ӗнтӗ.

Ӗнесен ҫуллахи лагерӗ. Клеверпа люцерна уйӗ. Унта тутӑ ӗнесем, сӑвасса кӗтсе, мӑшлатса ҫӳреҫҫӗ. Витре пек ҫиллисем, халь-халь ҫӗре перӗнесле, усӑнса аннӑ. Эпир ҫитнӗ тӗле унта пӗр З. Пайгунова доярка анчахчӗ. Ыттисем, ирхи апата, яла кайнӑ иккен. З. Пайгунова дежурнӑй-мӗн те — тӑрӑшсах хӗрсен пӳлӗмне тирпей кӳрет. Лагерь хапхи умӗнче пысӑк хӑма ҫакӑнса тӑрать. Унта «Паян социализмла ӑмӑртура кам малта?» тесе ҫырса хунӑ. Пырса пӑхрӑмӑр та, паян Р. Тарасова ӗне сӑвакан малта иккен. Чыс та мухтав ӗҫчен ҫынна!

Маттур хӗрсем ӗҫлеҫҫӗ фермӑра. Пӗринчен пӗрне ырласа кӑна тӑмалла. Н. Туркина, М. Караваева, В. Петрова, А. Ильмусева, М. Ильина, В. Степанова, О. Емельянова, В. Албутова ӗне сӑвакансем ял ҫинче ятлӑ ҫынсем. Вӗсем йышра ӗҫӗпе ятлӑ. Хӗрсенчен пуринчен те хастарри вара А. Ильмусева. Вӑл кашни ӗнерен кунне 16 килограммран кая мар (пӗр пӑт!) сӗт суса илет. Пултарать Санюк, маттур!

Колхоз выльӑх апатӗнчен те аптрамасть. Ӗнесене ҫулла ҫитерме кунта 70 гектар ҫинче культурӑллӑ улӑх йӗркеленӗ. Шыв шӑварса курӑк ӳстернин усине хӑвӑртах туйса илнӗ ку хуҫалӑхра. «Тепрер ҫултан культурӑллӑ улӑхсен хисепне 300 гектара ҫитеретпӗрех,— ӗмӗтлӗн калаҫать Рауф Абдуллович.— Ытти ҫинчен калас пулсан...»

Р. Аглиуллин пире лагерь картишӗнчи кӑҫал илсе килнӗ ҫӗнӗ установкӑсене кӑтартса ҫӳрет. «Ытти ҫинчен калас пулсан,— малалла тӑсать вӑл сӑмахне,— ӗмӗтленмелли, талпӑнмалли нумай пирӗн. Культурӑллӑ улӑхсем пирки каларӑм-ха. Ҫав улӑхсене шӑварса тӑма часах пысӑк пӗве пулать. Пӗвине пӗвелеме пуҫланӑ та ӗнтӗ. Пур ялалана та эпир хамӑр вӑйпа тӑватпӑр. Патшалӑх кӗсйине кивҫене кайман. Хамӑр вӑйпах культура керменӗ, икӗ хутлӑ шкул ҫурчӗ туса

лартрăмăр. Ăна хăварах куртăр-ха. Шкулне вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле хута ялатпăр-яратпăрах. Ун пирки урăхла сăмах та пулма пултараймасть. Халĕ выльăх-чĕрлĕх комплексĕ тăватпăр. Выльăх-чĕрлĕх тенĕрен, мухтаннă пек пулать те-ха, патшалăха аш сутас парăма эпир кăçалхи çур çулхи плана пилĕк уйăхрах татрăмăр. Ытти обязательствăсене те иртерсе пурнăçланă. Мĕн калам тата? Ĕçе сынсем тăваççĕ вĕт. Манăн уйрăммăнах колхозри чи хастар çынсене: Ольга Ермолаева пăру пăхакана, трактор бригадин бригадирĕсене Алексей Шакмаковпа Сафи Ильясова, ĕне сăвакансене асăнтăм ĕнтĕ, тата нумай-нумай çынна ырăпа асăнас килет. Вĕсен пултаруллă ĕçĕпе пирĕн хуçалăх сумлă. Тĕрĕссипе, пурин çинчен те пĕрре пикенсе ăçтан каласа пĕтерĕн. Эсир, писательсем, час-час килсе тăрăр пирĕн пата. Ун чухне вара хăвăр куçăрпа ытларах курма май пулĕ. Каласа пани вĕççĕн вăл... Халĕ машинăпа трактор паркне çитсе курар-ха».

Каллех хир-хир урлă иртрĕмĕр, тулăх тырă пуссине куртăмăр.

«Память Ленина» колхозăн машинăпа трактор паркне пĕр-пĕр шавлă завода пырса кĕнĕ пек пырса кĕретĕн. Мотор кĕрлет, тимĕр чанклатать, сварка çути ялтăрать... Çапла, ĕç мăй таранах кунта шоферсемпе механизаторсен. Колхозăн 51 трактор, 22 комбайн, 34 автомашина. Тимĕртен тунă япала та ялан пĕр пек чупмасть, ĕшенсе çитсен — чăхăмлать (этем те каскас апчухлатать те), сиплес пулать вара ăна. Халь уйрăмах хĕрӳ вăхăт. Ĕççиччен пĕтĕм хурçă çара юсавлă, паян тесен паян уя тухса кайма хатĕр тăратмалла, васкас пулать. «Память Ленина» колхозăн машинăпа трактор станцийĕн чи паха енĕ çакă вăл: пур кăлтăксене те вĕсем кунтах юсаççĕ, трактор-комбайна районти ялхуçалăх техники уйрăмне, е урăх çĕре сĕтĕрсе çӳресе чăрманмаççĕ, хăйсемех сехет пек справнăй ĕçлекен тăваççĕ, маттур, пит маттур...

Механизаторсен килĕсене кайса апат çисе вăхăт çухатса çӳрес нуши те çук. Колхоз кунтах столовăй уçса панă. Часах мунчи те пулать. Ĕç хыççăн ларнă кирĕкне çуса тасат та уçă кăмăлпа киле ут.

Уйрăлма та вăхăт ĕнтĕ. Таçта та пултăмăр, тем те куртăмăр. Хăнăхса çитнĕ çĕнĕ тусăмăрсене пăрахса та каяс килмест. Анчах та мĕн тăвăн: пире паян Мă-

кăр çыннисем кĕтеççĕ. Çул — Мăкăра. Уçă кăмăлăршăн, тӳпеми сăйăршăн тайма пуç сире, алшихсем, ĕмĕр-ĕмĕр тав сире.

## Мăкăр

Мăкăр—«Рассвет» колхозăн тĕп ялĕ. Унта, Мăкăрсăр пуçне, тата тăват ял кĕрет: Çĕнĕ сала (Протопопово), Курпаш, Хыркасси (Ямбулатово) тата Утрат. Уйрăмах пире Утрат тĕлĕнтерчĕ. Пирĕн енче унашкал хăлтă ялсем курăнсах каймаççĕ те, çавăнпа куçа чарсах пăхрăмăр ăна. Текех ялне те ял темелле мар ĕнтĕ. Пурĕ те тăват-пилĕк кил кăна тăрса юлнă унта. Вĕсем те пулин халь-халь, вăйлă çил вĕрсен, тĕшĕрĕлсе анас пек лараççĕ. Ыттисем пысăкрах ялсене куçа-куçа ларнă. Мĕншĕн? Пĕчĕк ялăн нуши пысăк. Çулран инçе, тăвар илес тесен те кӳршĕ яла виç-тăват çухрăма танккамалла. Каппа кĕрмешиччен ушкăнпа пурăнас, тенĕ ĕнтĕ хăшĕ-хăшĕ. Çамрăкраххисем шутласах тăман, çуртне-йĕрне пăснă та куçарса кайнă. Карчăккĕрчĕк тытăнса тăрать-ха, васкамасть: «сăхманĕ çĕтĕк пулсан та хамăн», тет пуль. Ачи-пăчи анчах Утрат старикĕсемпе кинемейĕсене канăç памасть, ӳкĕтлет: «Çитĕ сире кăмпаланса пурăнма, атьăр, йыша куçса ларăр», тет.

Иртнĕ темиçе кун ялсем тăрăх çавра çил пек çавăрттарса çӳремĕмĕр те, Мăкăра çитсен, литература каçĕ пуçланиччен тесе, канса илме канаш турăмăр. Хăна çуртне вырнаçрăмăр. Эпĕ тутар каччипе пĕрле лекрĕм. Вăл «Рассвета» пĕве пĕвелеме Хусантан килнĕ иккен — çĕрĕç инженерĕ. Кăна пĕлни те мана хытă савăнтарчĕ: апла мăкăрсем те алла усса лармаççĕ-ха, пĕвесем пĕвелеççĕ, паянхи çинчен мар, ыранхи çинчен ытларах шухăшлаççĕ, терĕм.

Колхозĕ ку — аванниçен шутĕнче. Çуллен утăм хыççăн утăм тăвать, малалла талпăнать, кĕрнекленет. Çумăрлă çанталăка пула «Рассвет» уйĕ-хирĕсемпе киленсе çӳреме май килмерĕ пирĕн. Тӳррипе, колхоз сăн-сăпатне хире тухса курмасăрах туйса илме пулать-ха ăна. Мăкăрăн аслă урамĕпе утса ирт те — çителĕклĕ. Акă, колхоз кирпĕчрен анкарти пек кермен хăпартса лартнă. Виççĕр çын пĕр харăс кĕме пултарать иккен унта. Керменне тунă çĕре 200 пин укçа

кайнă. Юнашарах хăна çурчĕ янăраса ларать. Улпут çурчĕ аякра тăтăр! Ăна та кирпĕчренех тунă. Колхозниксен çурчĕсене пăхăр-ха тата. Пĕринчен тепри курмалла çĕнĕрен çĕнĕ шăкăрттин лартса тухнă. Апла, укçаллă-ха колхозĕ. Колхозĕ пуян пулсан, колхозникĕ те пуян. Пурте пĕлетпĕр: колхоз ӳсĕмĕн тӳпи вăл чи пирвай колхоз пуçĕнче кам тăнинчен килет. Петр Павлович Носов вара чăннипех те хуçалăх ĕçне ăста пĕлекен председатель, хуçалăх расчечĕ мĕн иккенне лайăх ăнкаракан çын, ăшхыппи этем.

Эпир çитсе вырнаçрăмăр кăна, пирĕн тавра Пётр Павлович Носов кускаласа çӳрет. Пĕрре кухьнăна апат пĕçерекенсем патне кайса васкатса килет, тепре, пирĕн пата кĕрсе, эпир мĕнле вырнаçнине пăхкалать. Хăй куçĕпе курса тирпей кӳресшĕн вăл: пурте вырăнлă, кирлĕ пек пултăр, хăнасем ан ӳпкелешчĕр, тет ĕнтĕ. Эпир ӳкĕтлесе те пăхатпăр: пирĕншĕн аплах чăрманса ан çӳрĕр-ха, пĕчĕк ачасем мар вĕт, пырĕ, тетпĕр.

Кăнтăрласем иртсен, тӳпене сăрă пĕлĕтсем сырса илчĕç. Пухăнса-пухăнса пычĕç те вĕсем кун çутине карсах хучĕç, çумăрне тăкса ячĕç. Кăмăлĕ туличченех шавкăнтарчĕ вара тырă çумăрĕ. Эпир пӳртре, хӳтĕре ларатпăр тумламсем çаталтатнине пăхса, пирĕн республика çĕрĕ çине те çаплах тăкать-ши, тăксан тем пекехчĕ, тесе йăлăнатпăр. Кaç та пулчĕ. Çумăр чарăнасси пăхса та курăнмарĕ: вăрăма тухнă çуран çын çулпа ĕшенми танккана пек чӳшкĕнтерчĕ те чӳшкĕнтерчĕ. Литература каçĕ пуçланас вăхăт та çитрĕ. Çумăр витĕрех тухса утрăмăр клуба, хытах йĕпенмерĕмĕр.

Клубра пĕр çын чунĕ те çукчĕ-ха. «Ку çанталăкра сăвă тесе кам этемми хыпăнса çӳретĕр. Начар хуçа та паян йыттине кĕлет айĕнчен кăлармасть»,— çапла калаçкаласа хĕрлĕ кĕтесе кĕтĕмĕр. «Пирĕн ниçта васкамалли те çук, пăртак кĕтсе пăхар ара, тен, пухăнĕç. Унччен хаçат-журнал уçкаласа хупар. Луччĕ телевизора хута ярар-ха, курманни хăçантанпа», терĕмĕр те телевизор умне siксе лартăмăр. Телевизорпа балет ташăçисен Пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш конкурсне хутшăнса мала тухнисен концертне параççĕ иккен. Шăп та лăп Надя Павловăпа унăн партнерĕ Вячеслав Гордеев ташланă тĕле лекрĕмĕр. Тем тери савăнтăмăр эпир

хамăр ентешĕмĕрĕн Надя Павлован ăста ташшишĕн. Пурте пĕлетпĕр ĕнтĕ: Надя — Шупашкар хĕрĕ, халĕ Пермьри хореографи училищинче вĕренет. Вăл пĕлтĕр балет артисчĕсемпе çамрăк балетмейстерсен Пĕтĕм Союзри конскурсĕнче те куракансене хăй пултарулăхĕпе хытă тĕлĕнтернĕччĕ. Надя çав конкурсра лауреат ятне çĕнсе илнĕччĕ. Ку хутĕнче тата пысăкрах тĕрĕслӳ кĕтрĕ ăна. Мĕншĕн тесен ку хутĕнче унăн 23 çĕршывран килнĕ 75 ташăçăпа кĕрешме тиврĕ. Надя Павлова ташланине куракансем темиçе хут та тăвăллăн алă çупа-çупа саламларĕç.

Конкурс пынă вăхăтра пирĕн Надя пултарулăхĕ çинчен хаçатсем статьясем-рецензисем чылай çырчĕç. Пурте вĕсем килĕшсе таталнă пек, Надя ташшине «чаплă, селĕм» тесе хак параççĕ. Акă Надя пирки çырнă пĕр статьяри сыпăка анчах илсе кăтартам. Статья «Пысăк балет уявĕ» ятпа «Литературная Россия» хаçатăн кăçалхи çирĕм пиллĕкмĕш номерĕнче пичетленсе тухнă.

«Надя ташăра, ташă тытăмĕнче çав тери сисĕмлĕ, çав тери чăн. Унăн кĕлеткипе пĕрле алли те, ури те, пичĕ те, куçĕ те пĕр кĕвĕре çунатланать. Ăна ташлать тесе калама та хĕн, ташламасть вăл—ташăра вĕçет. Павлова чăн-чăн «тĕлĕнтермĕш», «çутçанталăк тĕлĕнтермĕшĕ»,— тенĕ унта. Жюри членĕсем вара пĕри те пĕр сăмах тиркешмесĕр, Надьăн çав тери ташлас пысăк искусствине пуç тайса, асăннă конкурсра СССР Пысăк театрĕн тĕп парнипе («Гран при») ылтăн медаль тата лауреат ятне пама йышăннă.

Пăх та кур, вунçиччĕри чăваш хĕрĕ тĕнчене тĕлĕнтерчĕ. Пĕр аллă çул каялла кăна çăпаталлă чăваш хресчене хăйĕн ачи ташласа тĕнче умĕнче çапла чап курасса тĕлĕкĕнче те тĕлленмен. Вăл «балет» сăмахпа мар, «йӳçĕ тар» сăмахпа тăванлă пулнă. Паянхи савăк саманамăршăн вара ирĕксĕрех чун каçсах каять, чĕре хĕп-хĕпĕртик сиксе ташлать. Пурăн та ĕçле, пултарулăхна кăтарт!

Ларсан-ларсан, «туртасене каялла çавăрма та май мар-и», текелеме тытăнтăмăр. «Э, чимĕр-ха,— тет А. Галкин,—пĕр виç çын пухăннă пулсан, эп сăвă калама хатĕр»,— тет. Çав вăхăтра аялтан (хĕрлĕ кĕтесĕ— çӳлте) Петр Павлович хăпарчĕ те: «Туссем, пуçлар пуль, кун чухлĕ кĕтнипе те çитĕ, килес пекки килсе

пӗтнӗ ёнтӗ»,— терӗ. Эпир Петр Павлович хыççăн зала антăмăр. Хамăра хамăр ĕненместпĕр, пĕççе шарт çапса тăратпăр вĕт: халăхĕ тăнккасах тултарнă пек пухăнса ларнă, ура пусма вырăн çук. Çумăртан та хăраман, иçмасса, мăкăрсем — ватти-вĕтти хăпса тухнă. Кун пеккине курсан, сăвă калас кăмăлăмăр та хăпартланса кайрĕ пирĕн. А. Галкинĕ те, А. Воробьевĕ те, А. Кăлканĕ те ура тапса сăвă калаççĕ. Прозаиксем те поэтсенчен юлмаççĕ. Н. Дедушкинĕ те, В. Ухлийĕ те, К. Петровĕ те чăваш чĕлхин ĕнчи-ахахне шапăр-шапăр тăкаççĕ итлекенсен пуçĕ çине. Мăкăрсем, чăваш çыравçисен сăмахне тăнласа çырлахнăскерсем, шартшарт алă çупаççĕ. Реххет! Писательсем сцена çинчен анма ĕлкĕрчĕç кăна, Пăваран районти культура çурчĕн агитбригади персе çитрĕ. Янăрарĕ вара Мăкăр клубĕнче юрă-кĕвĕ тепĕр ăстрăм...

Ир. Çумăр чарăннă. Шыв ĕмсе тăраннă курăк чăшăл çĕкленнĕ. Пĕлĕт аркине сирсе хĕвел хăпарать. Хырла хĕрринчи вăрманта шăпчăк каçăхса кайса юрлать, куккук авăтать. Тавралăх — симпыл, хыр шăршиллĕ. Чун-чĕрене, кăмăла пархатар кӳрсе, çĕнĕ кун тăрăлать.

## Рункă

Паян эпир Пăва çĕрĕ çинче юлашки кун. Ыран, Тутар республикинчи туслăх каçĕсене вĕçлеме, Хусана тухса каятпăр.

Эрнст Тельман ячĕпе хисепленекен колхоз. Унта тăватă ял кĕрет: Рункă, Кипеккасси, Ягодная тата Утинка. Ягоднаяпа Утинка —вырăс ялĕсем.

Рункăна çитнĕ-çитменех, колхоз председателĕ Иван Митрофанович Митрофанов, хĕрĕхелле çывхарса пыракан тапчам та вăр-вар арçын, пире тӳрех хуçалăхпа паллаштарма лартса тухса кайрĕ. Эпир чи малтан сахăр кăшманĕ уйне çитсе куртăмăр. Уйĕ — таçтан та таçтан, куç ытамне кĕрейми сарăлса выртать. Кăшманĕсем патша майрисем пек саркаланса лараççĕ. Шит тăршшĕ ӳснĕ лапсăркка çулçисем çилпе чăшăл та чăшăл тăваççĕ. Кăшманне эртел Пăвари сахăр завочĕ валли ӳстерет иккен. Унтан—теплицăра пултăмăр. Теплицин пĕр вĕçĕнчен пăхсан тепĕр вĕçĕ курăнмасть. Маччана çити çăтă явăнса хăпарнă хăяр аври ĕречĕсен

хушшипе пăхкаласа çӳрерĕмĕр те, хăярсене курсан, тĕлĕннипе, çăварсене карсах пăрахрăмăр: сысна çури пек мăнтăр хăярсем çырла пек рет-рет çакăнса тăраç-çĕ-çке! Эхтуруй! Аври мĕнле кăна чăтса тăрать, тульккĕш. Хута янă теплицăпа юнашарах тума пикенни тепĕр виççĕ-тăваттă. «Ӳлĕм хăяр кăна мар, помидор та лартса çитĕнтересшĕн-ха. Унран тупăшĕ пысăк. Пурин сĕтелли çинче те хĕлĕн-çăвĕн пахча-çимĕç ан татăлтăр»,— тет, ĕçлес, эteme ырлăх кӳрес савăнăçпа çунатланса Иван Митрофанович. Теплицăран тӳрех ĕнесен çуллахи лагерьне пăрăнтăмăр, унта ĕне сăвакансемпе курса калаçрăмăр. Дояркăсем писательсене ыйтусемпе тăкăлтарсах пĕтерчĕç: «Хура çăкăрăн» виççĕмĕш кĕнеки пулать-и?», «Ĕмĕр сакки сарлакан» пиллĕкмĕш кĕнеки хăçан тухать, çырса пĕтерне тесе калаçĕç вĕтха», «Танатан» ма иккĕмĕш кĕнеки çук?», «Пирĕн В. И. Краснов-Асли мĕн çырать?», тата ытти те, тата ытти те. Эпир вĕсен ыйтăвĕсене тивĕçлĕ яваплама тăрăшрăмăр, чăваш çыравçисем кам-кам мĕн ĕçленинесырнине тĕплĕн кала-кала патăмăр.

Ĕнесен çуллахи лагерĕ хыçĕнчех, виç-тăват пичатнăйра, шыв шăнкăртатса выртать. Иван Митрофанович каллех ĕмĕтленет: «Килес çул çак çырмана пĕвелес тетпĕр-ха. Вара культурăллă улăхсен калăпăшĕ те пирĕн чылай пысăкланать. Ку кăна-и? Пулă та ĕрчетсе пăхасшăн. Атту, шыв хĕрринче пурăнса та пулă шӳрпи çиейместпĕр те, япала пулать-и ку!» — тет.

Колхоз кирпĕч завочĕ туса лартнă. Паян ăна хута ямалла. Çавăнта васкарăмăр. Пĕрремĕш кирпĕч мĕнле çапăнса тухнине курма ĕлкĕреймерĕмĕр эпир, теплицăпа ĕне сăвакансем патĕнче тытăнса тăни хупларĕ. Кирпĕч ăстаçисем эпир килессе кĕтнĕ-кĕтнĕ те, кĕтсе илеймесĕрех, чăтăмне çухатнăскерсем, агрегатне чĕртсе янă, тĕслĕхшĕн çитмĕл кирпĕч çапса кăларнă. Çăмарта ăшĕнчен тин тухнă чĕпсене асăрханса тыткаланă пекех асăрханса тыткаласа пăхрăмăр эпир çав кирпĕчсене. Кирпĕч! Колхоз сăн-сăпачĕн паянхи кунĕ, эрешĕ, яри çул сана! Тавсси! Пуçламăшĕ пур, ӳлĕмрен завод кунне 10-шар пин кирпĕч çапса кăларма пултарать.

Кăнтăрла иртсен, хĕвел пĕçертме пуçларĕ. Пăчăланчĕ. Эпир шыва кăвакал пекех ытаракан ик-виçĕ çын, каллех Николай Степанович Дедушкина лап сă-

рăнтăмăр: «Сĕвере ырлăх куртăмăр, Хырлара та шыва кĕрсе курасчĕ»,— терĕмĕр. Хăшĕ-хăшĕ кутăнлашкаласа та пăхрĕç те — çĕнтерейменрĕç, хамăрах çиеле юлтăмăр, вĕсем те, турткалаша-турткалашах, Хырла хĕрне утрĕç.

Хырла. Пур чăваш юханшывĕ пекех вăл та, пĕкĕ туса, «курпунне кăларса», авăна-авăна юхать. Çĕркаç çумăр шапарса çунипе Хырлана сырмасенчен çулçă, хăрăк-турат, курăк, çӳп-çап лĕкки ана-ана тулнă. Тасарах вырăн шыраса йăлт хăшкăлтăмăр. Шырасан-шырасан, майлă кĕтес тупрăмăр-тупрăмărах: Хырла авăра лексе пăрăнчăк тунă çĕре чарăнтăмăр. Шывĕ нӳхрепрен ăсса кăларнă пекех сип-сивĕ, шăла шаккаттарать, сивĕпе ӳт çине хур шатри пĕлĕт пек тапса тухрĕ, лапкипе. Авăралла ишсе кайса пӳ ярса пăхкаларăм та, тĕпне çитеймесĕрех, каялла тапа-тапа тухрăм: ку сивĕ шывра шăнăр та хутлатса пăрахĕ тесе — иртĕхмерĕм. Пурпĕрех пĕр сехет пек чĕмпĕлтетрĕмĕр-чĕмпĕлтетрĕмĕрех шывра, супăньпех çăвăнса тухрăмăр. Тухсан, ача чухнехилле хăрах ура çинче сиксе, паччасрах ăшăнтăмăр.

Пирĕн паян ку колхозра икĕ çĕрте пулмалла. Пирвайхи тĕлпулу — Кипеккасси çыннисемпе. Вăрман уçланкине сухаллă мучисемпе туяллă кинемейсем тарапах пуçтарăннă. Кипеккасси кунтан пĕр çухрăм пек кăна. Килнĕ-пĕри çерем çине ăçта килчĕ унта ларса тухнă. Вĕсем писательсем мĕн сăмах каласса чăтайми кĕтеççĕ.

Тĕлпулăва колхоз председателĕ И. Митрофанов ăшă сăмах каласа уçать. Вăл чăваш çыравçисен кĕнекисене ял этемĕ шутсăр юратса вуланине, çав кĕнекесем ĕçре пысăк тĕрев пулнине евитлет. Унтан пирĕн писательсем хăйсен хĕрӳ сăмахне туртса çапаççĕ. Сывлами тенĕ пек итлет чăваш çынни амăш сĕчĕпе чунне илнĕ тăван чĕлхе имне. Авалхи ват юмансем те хăйсем пекех ватă халăх чĕлхин шăнкăр-шăнкăр илемне шухăша кайса тăнлаççĕ. Çул хĕрринчи тулă пусси те шăплăха путнă. Çĕр сĕткенĕпе пиеленнĕ поэтсен сăввисене тăнласа, хир те хăйĕн эревет кăмăлне кăтартать, тейĕн.

Кипеккассисемпе уйрăлсан, йăпăртлăха канса илме, хăна çуртне таврăнтăмăр. Кӳршĕрен Петр Алексеевич Изекеев каçрĕ. Вăл Рункăри шкулта истори

вĕрентсе пурăнать-мĕн. П. Изекеевпа В. Ухли — тахçанхи пĕлĕшсем иккен, тĕлпулушăн иккĕшĕ каçсах кайрĕç. Хайхи ĕлĕкхисене, яш чухнехи вăхăтсене, аса иле-иле пуплеме пуçларĕç. Хăй вăхăтĕнче В. Ухли мăшăрĕ Рункăра вĕрентсе пурăннă-мĕн те, «пĕтерет» халь П. Изекеев Владимир Васильевича: «ма çав вăхăтра хĕре качча çаклатса кайрăн, «путсĕр», темиçен харăс вăрттăн савса пурăнаттăмăр та, шăхăртса хăвартăн пире», тет. Владимир Васильччи те, П. Изекеев шӳтне ăнланса, чăн сăмах пек «хăвăр тиркерĕр те, мана ухмаха, пырĕ», текелесе ларать. Туссем тĕлпулсан яланах çапла вăл: шӳт çине шӳт, йăслав-перкелешӳ. Пĕри те пĕрне кӳренмест.

Каç чатăрне карчĕ. Николай Степанович Дедушкин калать: «Ну, ачасем, тет, Пăва районĕнче кĕçĕр юлашки хут тухса калаçатпăр, маххă парар марччĕ», тет. Эпир вара, килĕшсе, «парас марччĕ», тетпĕр.

Рункăсем, клубран кăшт анатарах, парк кĕтессине, хăмаран эстрада туса лартнă. Çавăнта, уçă çерте, иртрĕ иккĕмĕш тĕлпулу. Пирĕн прозаиксемпе сăвăçсем пĕринчен тепри кервентерех, хӳхĕмрех калаçрĕç, чăваш литературин кăмăлне кашнин чĕри патне туллин илсе çитерме тăрăшрĕç. Ку хутĕнче те Пăвари Культура çурчĕн художество пултарулăх коллективĕ пирĕнпе пулчĕ. Каç пăвасен пысăк концерчĕпе вĕçленчĕ.

Ыран — çула. Çавăнпа, ир тăмалла тесе, хваттере çитнĕ-çитменех çывăрма выртрăмăр. Тепĕр кунне хĕвелпе пĕрлех сиксе тăтăмăр. Тĕпĕртететпĕр кăна: пĕри шăлавар якатать, тепри галстукне майлать, виççĕмĕшĕ çăвăнать, тăваттăмăшĕ пушмак çутатать. Александр Галкин, ав, чĕнтĕрлĕ кĕпине, шывпа йĕпете-йĕпете пăрнă та, халь, йĕпелле тăхăнса яма юравлă маррине кура, «тем тумалла ĕнтĕ» текелесе çӳрет. В. Ухлин, кăмăлĕ аван та, ир-ирех шӳтлес шухăш: «Эс, Элексантăр (Ку — Галкина ĕнтĕ), тет, мĕн шухăшласа тăран, тăхăнса яр, поэт пуль эс, вĕри çын, типĕнет», тет. А. Кăлкан, сухалне электробритвăпа чĕпĕтечĕпĕте хырнă май, тем юрă ĕнĕрет.

Пĕр çур сехет лек муталасан, майлашăнса та çитрĕмĕр. Апатне кăп-кап хыпкаларăмăр та, хамăра пăхакансене тав туса хăварса, Пăвана тухса кайрăмăр.

## Хусан. Çул курки

Пăвара тутар писателĕсемпе тĕл пултăмăр. Пурте сывă, пурте хавас сăн-питлĕ. Тутар писателĕсем ытларах тутарсем пурăнакан ялсенче пулнă-мĕн. Пĕлес килнĕрен: «Эсир мĕнле çӳрерĕр?», тесе ыйтатпăр вĕсенчен. Вĕсем те пирĕнтен: «хăвăр тата мĕнлерех çӳрерĕр?» теççĕ. «Шутсăр кăмăллă», тетпĕр эпир. Вĕсем те: «каçсах каймалла», теççĕ.

Пуйăс станцăна чашлатса-пашлатса çитсе кĕрет. Чарăнать. Сывпуллашатпăр. Вакунсене лартатпăр. Пуйăс тапранса каять. Пире ăсатма çур Пăва тухнă пуль, кăткă пек халăх алă сулать. Эпир те, уйрăлма пӳрнишĕн эрленсе, çине-çине алă сулатпăр.

Чипер юл, Пăва. Тараватăкăмăлна тӳпемиех аствирĕмĕр, тайма пуç сана уншăн. Эппин, ӳпкелесе ан юл.

«Чипер юлсам, чипер тăрсам, Пăва! Тен, ӳлĕм эс те кĕрĕн-ха сăвва»,— çĕпреленет ăшра сăвă лăстăкĕ те.

Хусан. Вокзал. Вакунсенчен аннă-анманах пире тутарти туссем сăрса илчĕç. Ыталашатпăр, алă тытатпăр, «мĕнле çитнисем», «хавалсем» çинчен ыйта-ыйта пĕлетпĕр. Вокзал умĕнчи автобус ăшне кĕрсе ларатпăр та «Хусан» гостиницăна çитетпĕр. Пур-çук япаласене пӳлĕмсене лартса хăваратпăр та, хула курма туххса каятпăр.

Пĕр эрне ял-ял тăрăх çӳресе шавлă хуларан писме те ĕлкĕрнĕ иккен эпир, кĕр-кĕрлекен хула шавĕ те темле пек туйăнса тăрать. Урамăн икĕ енĕпе урам тулли машини, этемĕ хĕвĕшет. Çӳллĕ çуртсем вăр та вăр ирте-ирте юлаççĕ. Автобус чӳречинчен кăн-кан пăхкаласа пыратпăр. Пĕр-икĕ сехет çапла çавăрăнса çӳресен, Хусанне хăнăхрăмăр. Хамăр та хула çыннисем те. Хусанĕнчен пахи те çукраххăн туйăна пуçларĕ тепĕрçемĕн.

Тутар халăхĕн паттăр ывăлĕн Мусса Джалиль поэтăн гранит палăкĕ умне чарăнтăмăр, унта чĕрĕ чечек çыххисем хутăмăр. Литература музейне кĕрсе куртăмăр. Қаçхине Габдулла Тукай ячĕпе хисепленекен клубра тутарпа чăваш литературин туслăх каçне лартăмăр. Унта пирĕн çыравçăсемпе пĕрле тутар писателĕсем: Заки Нури, Г. Минский, Н. Даули, Р. Харис

хутшăнчĕç. Çак туслăх каçĕ пирĕн икĕ тăванла халăх литературисен çыхăнăвĕсем куллен-кун çирĕпленсех, тачăлансах пынине тепĕр хут яр-уççăн кăтартса пачĕ.

Ăсату кунĕ. Çыран. Атăл, сывлăхлă çын пек, кӳ те кӳ сывлать. Уяр. Сывпуллашатпăр. Çапла ялан пĕр-пĕрин патне хăнана çӳреме сăмах таттатпăр. Шурă акăш пек шурă «Ракета», Атăл варне тухса, тăвалла, Шупашкара, çул тытать.

Сывă пул, тутар çĕршывĕ, таравват кӳршĕмĕр. Чипер тăр! Тепре куриччен!

*Пăва — Шупашкар.*
*Июнь — Июль, 1973 ç.*

## ТУПМАЛЛИ

Юр хĕвет. (Новелла) . . . . . 3
Çупкă. (Новелла) . . . . . . . 27
Эртюк. (Новелла) . . . . . . . . 40
Туй. (Повесть-хӳхлев) . . . . . 50
Пăвапа Элшел хутлăхĕ. (Тĕрленчĕк) 90

**Хведер Агивер**

**МЕТЕТ МЕТЕЛИЦА**

Новеллы и повесть

На чувашском языке

Редактор *М. П. Егоров*
Художник *И. Д. Немцев*
Художественный редактор *А. А. Афиногенов*
Технический редактор *А. Ф. Никитина*
Корректор *Л. Ф. Козин*

НТ 04375. Сдано в набор 5/XI-1975 г.
Подписано к печати 2/IV-1976 г.
Формат 84×108/32. Бумага типографская № 3.
Физ. печ. л. 4,0. Усл. печ. л. 6,72.
Учетно-изд. л. 6,63. Заказ № 4415.
Тираж 9 000 экз. Цена 20 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по делам
издательств, полиграфии и книжной
торговли Совета Министров
Чувашской АССР.
Чебоксары, Канашское шоссе, 13.

Хакĕ 20 пус.

